К83
И20
Ч-36959

И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

# КОНСТАНТИН ВАСИЛЬЕВИЧ ИВАНОВ

Тĕпчев ĕҫĕсем

Шупашкар – 2000

Ч-36959
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

Национальная библиотека ЧР
4-036959

Ш43(2) (635.1) (5) 8 Иванов

**Константин Иванов: тĕпчев ĕçĕсем.** Шупашкар :Чăваш патшалăх университечĕ, 2000. – 82 с.

Пухса хатĕрлекенĕ **В.Г.Родионов** профессор

Пичете Чăваш патшалăх университечĕн
меслетлĕх канашĕ çирĕплетнĕ

Çак статьясен пуххине чăваш литературин классикĕ К.В.Иванов çуралнăранпа 110 çул çитнине халалланă. Университет профессорĕсен çĕнĕ тĕпчевĕсенче аслă поэтăмăрăн пултарулăхне тĕрлĕ енчен пăхса хак панă. Ку вăл юлашки çулсенче иттернĕ шыравсен хăйне евĕрлĕ пĕтĕмлетĕвĕ.

Кĕнеке Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсемшĕн кăна мар, И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе интересленекен кашни çыншăн кирлĕ пулма пултарать.

ПРОВЕРЕНО
10

4-36959
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Кураков Л.П., Федоров Г.И.,
Родионов В.Г. и др.

кф
К83
Ч20

# “Ырӑ чӑваш тупӑнчӗ...”

*Чӑваш литературин классикӗ К.В.Иванов ҫуралнӑранпа 110 ҫул ҫитрӗ. Икӗ ҫул каялла чӑваш патриархӗн И.Я.Яковлевӑн 150 ҫулне пысӑк уяв вырӑнне хурса палӑртнӑччӗ. Ҫак икӗ ҫын хушшинчи хутшӑну, вӗсен ӗҫ-хӗлӗ пирки хамӑн шухӑшӑма каласшӑн эпӗ.*

*Хӑшӗ-пӗри паянхи кун та, “ватӑ арӑсланӑмӑрӑн” (Юман Мӗтри) кӗнекисем ҫине-ҫинех пичетленнӗ тапхӑрта, вӑл вӗренекенсене ытлашши ҫирӗп тытнӑ, тӗн кӗнекисем куҫарттарса чирлеттернӗ тесе калама пӑхать. И.Я.Яковлевпа К.В.Иванов хушшинчи хутшӑнусене тӗрӗс мар ӑнлантарни те тӗл пулать.*

*Документсемпе ытти фактсем вара урӑххи ҫинчен каласҫӗ. Акӑ, Е.А.Яковлевӑн хӑйӗн Алексей ывӑлӗпе кинӗ патне 1908 ҫулхи январӗн 26-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе февралӗн 9-мӗшӗнче) янӑ ҫырӑвӗнчи йӗркесем: “Пирӗн шкулта хамӑрӑн сӑвӑҫ пур иккен. Калаҫнӑ тӑрӑх, мӗн тери чаплӑскер тата! Пӗлтӗр пӗрремӗш класран кӑларса янисенчен пӗри вӑл – Константин Иванов текенскер, вӑлах художник. Урӑх ниҫта та кайса кӗме ҫукран ӑна хамӑр шкултах хӑварнӑ, ӳкерме ӑста пирки ӑна Пунктра тӳлевсӗр вӗренме вырнаҫтарнӑ. Ҫав сӑвӑҫ иккен. Пӗррехинче Ив<ан> Як<овлевич> унӑн ҫывӑрмалли пӗчӗк пӳлӗмне пырса кӗнӗ, лешӗ темӗскер вуласа ларнӑ та И<ван> Я<ковлевич> асӑрхаман. Курсан хӑраса ӳкнӗ, хучӗсене пытарнӑ, кайран ҫапах та кӑтартнӑ. Чӑвашла халап ҫырнӑ иккен, икӗ пин ытла сӑвӑ йӗркиллӗскер, тап-таса чӑваш чӗлхипе, ҫав тери лайӑх, ҫав тери хитре, рифмисем те хӳхӗм. Аҫу чӑннипех те хӗпӗртесе ӳкнӗ, пичетлесшӗн”.*

*Ҫав ҫулах И.Я.Яковлев пултаруллӑ сӑвӑҫӑн “Нарспи” поэмипе балладисене кун ҫути кӑтартать, ӑна малашне те пултарулӑхра хавхалантарса пырать.*

*Чӑваш прометейӗн сӑнарне К.В.Иванов хӑйӗн “Хальхи самана” сӑввинче лайӑх калӑпланӑ, ӑна вӑл Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн 40 ҫулӗ тӗлне ҫырнӑ. И.Я.Яковлевӑн улӑпла ӗҫне тӗрӗс хакласа, вӑл ҫапла каланӑ:*

*Ырӑ чӑваш тупӑнчӗ,*
*Ырӑ ӗҫе тытӑнчӗ.*
*Чӑн чӑвашла сӑмахпа*
*Хӑй тӑванне чӑваша*
*Пырса ҫапрӗ чӗрине...*

*Ҫӗнӗ ӗмӗр мар-и ҫав$*
*Ҫӗнӗ пурнӑҫ кайрӗ ҫав!*
*Пур ҫӗрте те ялсенче*
*Хура халӑх хушшинче*
*Хут вӗренме тытӑнчӗҫ,*
*Шкулсем нумай уҫӑлчӗҫ.*

*Ҫак ӗҫе поэт танлаштарать ҫӗнӗ ӗмӗрпе:*

*И.Я.Яковлев чӑваш ачисемшӗн вун-вун шкул уҫнӑ, вӗсен валли букварьсемпе кӗнекесем кӑларнӑ. Ҫак пархатарлӑ ӗҫе те палӑртмасӑр иртмен литература классикӗ.*

*Поэта халăх пурнăçĕ те пăшăрхантарать. Ахальтен мар вăл çапла ыйтать:*

*Эй, самана, самана!*
*Мĕн кăтартăн малалла?*
*Хальхи кунсем капла-ха,*
*Килес кунсем мĕнле-ши?*

*Малалла пăхса калană, паянхи пурнăç пирки шухăшлаттаракан йĕркесем мар-и çаксем? Акă камсем çине тĕллесе кăтартать сăвăç:*

*Анчах чăваш хушшинче*
*Чунĕ хытнă çынсем те*
*Тапалана пуçларĕç,*
*Тăрса çапла каларĕç:*
*"Чаплă вырăн тупасчĕ,*
*Часрах улпут пуласчĕ"*

*Поэт çутă тӳмешĕн çунакансене питлет, вĕсем чăвашла калаçманнинчен тата тăванĕсене маннинчен тăрăхласа кулать.. К.В.Иванов ун йышшисене чĕрĕ вилепе танлаштарать. Вĕсем халăх хуйхипе çунмаççĕ, халăх ĕçне те тумаççĕ. Кунта мĕн пур чăваша малалла, çутлăх, вĕрентӳ еннелле туртакан И.Я.Яковлевран тĕслĕх илмелле, ун хыççăн каймалла, тесе чĕнет сăвăç.*

*Хальхи вăхăтра та хăшĕ-пĕрисем Чăвашлăх çинчен, чăваш халăхĕн пурнăçĕ çинчен суйлав умĕн е пĕр-пĕр должноçе ларас умĕн кăна калаçма та ӳркенеççĕ. Суйлав иртсенех е пуçлăх пуканне йышăнсанах ун пеккисем чăваш халăхне те, хăйсем чăваш пулнине те манаççĕ кăна мар - чăваша хирĕçле ĕç тума пуçăнаççĕ.*

*К.В.Иванов çамрăклах çĕре кĕнĕ. Çапах та вăл çыравçă кăна мар, вĕрентекен пек те паллă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вăл ачасене ӳкерме, сăрлама тата хитре çырма хăнăхтарнă, урăхла каласан, илеме курма вĕрентнĕ. И.Я.Яковлевăн ĕмĕчĕсене пурнăçласа вăл чăваш ачисене тĕнчене кăларма хатĕрленĕ. Илемлĕ пултарулăхра та, вĕрентӳ ĕçĕнче те поэт чăваш ятне çĕкленĕ, унăн пуласлăхĕ пирки шухăшланă.*

*Çак И.Я.Яковлев пуçарнă "чăваш ĕçне" паян туса пыракансен чи малти ретĕнче – Чăваш патшалăх университечĕ. Кунта И.Я.Яковлев еткерне тĕпчекен институт тухăçлă ĕçлет. Пирĕн профессорсем К.В.Ивановăн пултарулăхне те анлăн тĕпчеççĕ. Çакна кĕнекере пичетленекен ĕçсем лайăх кăтартса параççĕ. Вĕсене Чăваш филологийĕпе культура факультетĕнчи студентсене вĕрентекенсем çырнă. Статьясенчи пĕтĕмлетӳсем тĕрлĕрен пулма пултарĕç. Шырав çулĕ нумай, тĕллевĕ вара пĕрре: И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем çинчен ăсталăхĕпе паянхи ĕçре тухăçлă усă курасси.*

Л.П.КУРАКОВ,
И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх
университечĕн ректорĕ, РФ вĕрентӳ
академийĕн член-корреспонденчĕ.

Г.И.Федоров

## “Хӑй тӗнчине пӑхӑнать”. . .

(К.Ивановӑн философилле ӑнӗ)

УМӖНХИ САМАХ. Константин Иванов. Нихҫан тӗксӗмленмият. Ӗмӗрлӗх символ, вилӗмсӗр классик. Чӑвашӑн чӑвашлӑхне никамран ытла ӑнкарса илнӗ тейӗн ун пирки, ӑна тӗпренчӗкӗн пухса сӑнара хывнӑ, тӗнче умне тивӗҫлӗн, калӑплӑн кӑларнӑ. Вӑл хывнӑ шухӑшсен вулли мӗн ҫул иртнӗҫем тата кӗрешрех, илемлӗ ӑн-хакӑлӗн тымарӗ тата тарӑнрах. Сӑвӑҫ хывнӑ хайлавсем тавралли калаҫу куллен–кун хивреленет, вӑл сӑпатланӑ ӗҫ–пуҫ, чун панӑ пурнӑҫ чараксӑр аслӑ малашлӑх тупать. Гений шӑпи ялан ҫапла – пулас ӑрусем унра хӑй сӗмленмен-туман, апла пулин те вӑлах систерсе-палӑртса хӑварнӑ кӑмӑл-сунӑм хевтине тупаҫҫӗ. Иванова та ҫав екӗ-хевте малаллах туртать, шавах ӑна ҫӳлелле ҫӗклет, ун сӑнарлӑхӗн, эстетикин тымарӗсене тата тутлӑхлӑрах сӗтеклентерет.

Икӗ ҫын Кӗҫтенттинра. Пӗри чӑваш чунлӗн Чӗмпӗр урамӗсене якатнӑ, юлташӗсемпе пӗрле пуласлӑха мал ӗмӗтлӗн савнӑ.Хуларан таврӑна-таврӑна ашшӗ-амӑшне куҫ тулли савӑнӑҫпа телей кунӗ.Ку этем Чӗмпӗр урамӗсенчех, Слак тӑрӑхӗсенчех юлнӑ, вырӑнти ватӑсен асӗнче усраннӑ.Ӑна, ҫав ҫамрӑка, унран ытла кун-ҫул кирлӗ те мар, вӑл – чӗрӗ ҫын, ытти пиншер чӑваш пекех, харкам хӑй пурнӑҫӗпе пурӑннӑ яшӑ. Тепри – хӑй сӑввиюррине сӑнарланнӑ, ӗмӗрсен вӑй-халӗпе пакапар чӗрӗм пулса ӳтленнӗ. Наци культурин пӗр вӗҫсӗр пысӑкланса, тарӑнланса пыракан символӗ вӑл, чӑваш этеплӗхӗн (гуманитарилле ӑнӗн) хӑйне евӗр хӑрти-калӑпӗ. Икӗ Иванов – пӗри тепринчен ҫӗр пӗлӗтрен уйрӑлнӑ евӗр расна. Иккӗмӗшне, символ-сӑнара, ахаль ҫынпа танлаштарма та йывӑр, вӑл – Художник, Шухӑшлавҫӑ. Унра халӑхӑн хастар шанӑҫлӑ чӗри тапать, унра кашни ҫӗнӗ ӑру хӑйне тата урӑхрах хаваллӑн ӑнланать. Ку символра наци хакӑлӗ, ун пуласлӑхӗ тӳпенелле кармашать, кӗрнекен паркаланать. П.Хусанкай каларӑш: поэт паян та “ юман пулса шавлать “, ҫӗре ҫӗршер икел ӳкерет, вуншар сӑвӑҫ ҫуратать.

Иванов тавралла сыпӑнса пыракан сӑмах-юмах, тӗпчевшухӑш тивӗҫлипех “Нарспи“ поэмӑпа ҫыхӑнать-тӗр, унран пуҫласа амаланса каять, унпа шӑнӑрланса хевтеленет. Ытти хайлавӗсем, тӗнчен тӑватӑ кӗтесӗ пек, тӑтӑшах ун йӗри-тавра ҫаврӑнаҫҫӗ,

художник ĕçĕ-хĕлĕнчи чăваш шăпине сĕрелтелеççĕ. Çавра тени кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ăнлав мар, Кĕçтенттиншăн вăл ун пултарулăхĕн тĕп категорийĕсенчен пĕри. Шырав философийĕн палли. Шăп çавă тĕртĕмленет те поэт çырнă хайлавсенче юлнă пĕрлехи сăнарта,художникăн символла палăрăмĕнче. Шăп çавăнпах Иванов-ӳнерçĕ (художник) сăнарĕ Иванов-çын шăпинчен пин хут аслăрах, çĕр хут тарăнрах. Мĕншĕн çапла пулни уçăмлă: "Нарспири", "Тимĕр тылăри"... ĕлке-калăп, сăнлăх-сăнар тахçанах пирĕн кулленхи шухăш палли пулса çирĕпленнĕ, Слак ачин шухăш хакăлĕ, илемлĕх килтти пек тĕвĕленсе ӳтленнĕ...

"ЯЛĔ ТАВРА УКĂЛЧА, ÇĔНĔ ÇАТАН УКĂЛЧА"... "Пуш уйăхĕн вĕçĕнче Хĕвел пăхрĕ ăшăтса" –, пуçлать "Нарспие" ӳнерçĕ. Пуш сăмах, тишкеререх пăхсан, асăрхаттарать С.Александров, тӳрех мифла илентермĕше ĕçе кĕртни курăнать: хĕл каçипе каннă çĕрĕн "пĕтĕленес", вăрлăх шăтарас, йывăç-курăк ӳстерес ĕмĕт тытмалли вăхăт çитнĕ.[1] Çуркунне, хĕвел шăратса пăхать, çут тĕнченеваскатать. Пур çĕрте те чĕр вăй, ăнтăлу,ӳсĕмлĕх – "Çырма юхать кĕрлесе", "Ачи-пăчи выляса Чупса çӳрет", "Путек-сурăх сиккелет", "Кайăк юрри янăрать", "Çĕр çĕмĕрсе каччисем Ташлать"... Лӳпперлĕх, вăрахлăх асра-тĕсре те çук, пурте ӳсесшĕн, çӳлелле кармашасшăн. Йӳтĕмĕ паллă – "Килчĕ ырă çуркунне", "Хĕвел пăхать ăшăтса". Апла пулсан, тĕнчен мифла пĕр' кăшăлĕ хывăнчĕ темелле – урăх тапхăр çитрĕ Силпие – ака тăвас вăхăт; урăх ӳсĕм çĕкленчĕ ял-йыш хушшинче – Нарспин те ачаллă-пăчаллă пулас шăпи алкумĕнче тăрать... Чăннипех те миф: Хĕвел тенине халĕ ĕнтĕ пайăр ят пек ăсласан та, пысăкран çырсан та пăсăк пулмĕ. Хĕвел те, "пуш уйăх вĕçĕ" (туртса палăртнисем – кунта та, малалла та статья авторĕн) те малаш çилхине ярса тытнă, хăйсем ĕнтĕ ахаль сăмах картинчен те, ахаль кăна эпитет-метафора тăпсинчен те тухнă. Эппин символ "сарă хĕрĕн" "конкретлă; чăнлавлă" тенешкел пурнăçĕпе пĕтĕçрĕ, ăна наци ăн-хакăлĕн çулĕ çине кăларчĕ. Нарспин поэмăра ӳт-пӳленес кун-çулĕ ĕмĕрсен тарăнăшĕнчи сывлăша çăтса илчĕ, халăх философийĕнчи идейăсемпе пуянланчĕ.

Ку ĕнтĕ ырă, сывă хавал çаври тейĕпĕр. Çав хăртанах тепĕр, ӳппĕн-тĕппĕн йĕр те ӳкрĕ: ашшĕ-амăшĕн хăтланкаларăшĕсем, авă, кутăнла çавра ӳкерчĕклерĕç. Тĕнче нĕрне çухатнă ватăсене "укçапала-эрэхех" "ăсран кăларчĕ" – "Тăван çирĕ тăванах", "Савнă хĕрне укçашăн" "Сутса ярса пĕтерчĕ". Çитĕнсе пĕве

кĕнĕ ачине амăшĕ "пĕтме", "типме", "хăрма" усал сунса хăварчĕ. Хăш вулакан калĕ: "Карчăк хĕрне питĕ тарăхнă, авăк çилĕпе тулхăрса вăрçать ăна, çакăнса вилме сунасси ун ĕмĕрте те пулман",– тейĕ. Анчах та ĕнтĕ ку шухăш "Нарспири" ытарлăха, символлăха фактологи картне туртса антарас ĕмĕт кăна. Ытарлăха хакла пĕлменрен ĕнтĕ эпир "сарă хĕрте" кĕрт проблеми тупрăмăр,[2] унра классlă кĕрешӳ хакалĕ куртăмăр,[3] нацилĕ уйрăмлăхсене катертсе пурăнтăмăр. Чăнласах фактологие çеç шанас пулсан, Иванов пирки çĕр çул калаçни йăлтах кăлăх нуша пулнипе килĕшес пулать – пурнăçра мĕнле пулать,çавна кăна çырса илнĕ пулать сăвăç, идейăсене ытла та ансат,пулчĕ-пулмарĕ татса панă... Çук, икĕ пил тĕртĕмленет сюжет юхăмĕнче: çут тĕнчен пин çул тарăнăшĕнчен килекен йĕрки Нарспие пурнăç малашĕ халаллать, 2. ашшĕ-амăшĕ çав йĕркерен писет, аврăш-авăра путать. Кашнин хăйле сюжет таппи, хăйле аталанăвĕ, урмăшĕпе упĕнчĕкĕ. Хире-хирĕçле икĕ ен хайланать: авалтан килекен, асатте-асаннесен ăрави тата тӳнтер тăнлă-пуçлă çынсем ĕмĕрхи йĕркене кутăнланса пăрхăçлани.

Каллех Александров çырнине асăнам: миф Силпири пурнăç тирпейне шăнăрласа пырать, тет вăл: çимĕк умĕн вилнисене асăнать ял-йыш, туйсем ирттерет – кивелекен, йăшакан, ватăлакан пурнăç йĕккине çĕнетме, çамрăклатса чĕр вăй пама. Тавралăх, çавралăх сăнарĕ те çав шухăшшăнах сăмсаланать, ялти пурнăç гармонине кăтартать.[4] Хайхи, чăваш ăнĕн онтологи çаври калăпланать, унăн мĕн авалтан тĕкел упранакан вăйĕ тан пек тапса тухать. "Ялĕ таврa укăлча, Çĕнĕ çатан укăлча" – çак йĕркесенче чăн чăвашла, наци ăнкарăшне ытамланă вăрттăн пур. Усал-тĕсĕлрен упраслăн карталанă иккен хăйсен куллен-кунне, ĕмĕрсен сывлăшне силписем. Картине, çитменнине, çĕнетсех тăраççĕ. Çатанĕ – леш ен тата ку ен чикки-кăранĕ. Икĕ енĕ те пит уçăмлăн, питĕ курăмлăн сăнарланать поэмăра, аталанать, тарăнланать. Шалта, кăшăл варринче, çутти те, тĕксĕмми те пур. Пепкине телейлĕ тăвас тесех, тен, Михетерпе карчăкĕ уншăн пуян упăшка "янтăланă". Тăван-пĕтенлĕ пулса, Тăхтаман хурăнташĕсемпе хăталлă, çăкăр-тăварлă хутшăнусем тытасси çине те шак хунă-тăр çапла туса. Ара вĕт, чăвашсемшĕн тăванлăх несĕпне хисеплесси, кĕреке кăмăлне тума пĕлесси нимрен те аслă сăвап шутланнă. Пурнăç тыткăчи хывăннă çав йăлара – ывăл-хĕре те çав йăлана хăнăхтармалла, унра упраннă вăрттăн шухăша пиллесе хăвармалла пулнă. Туйĕ вара кун пек

чух унашкал çыхăнусен тĕвви пулса хайланнă. Ку, хайхи, – каллех кун-çул çаври темелле, çамрăксен тăван-хурăнташĕ, тавраше çинчен калани; хĕрпе ывăл ашшĕ–амăшĕсем, вĕсен тăванĕсем хăталлăн–тăхлачлăн тавраланнă çамрăк мăшăр пурнăçĕнче.

Çапах та, хĕр тăванĕсем мула хапсăнаççĕ ытларах, ăна тӳнтер халлăн ăçлеттереççĕ, чăваш философин чи пысăк категорине, тăванлăх сăвапне аркатаççĕ.Ачисене те ырă пил парса хăвараймаççĕ Михетерпе карчăкĕ, ĕмĕрсем хушши пуçтарăнса пынă, килпетлĕн хăрталаннă кун–çул картине татма–аркатма кăна вăй хураççĕ.

Сăвăç пултарулăхĕшĕн кунашкал сĕмленӳ–ĕненӳ ăнсăрт çине кĕмсĕрт витни мар, "Тимĕр тылăра" та "Нарспире" те, ытти хайлавсенче те чи кĕçĕннисемпе аслисем хире–хирĕçленеççĕ. Кашни хутĕнчех аслисен тивĕçсĕрленнĕ, чыссăрланнă сăн–сăпатне курарах пырать ӳнерçĕ. Ытах, вăл енне каяс пур, аслисен пилсĕр тыткаларăшне П.Осипов, Ф.Павлов, Хв.Уяр, М.Илпек, Хв.Акивер, Д.Гордеев пултарулăхĕсенче те асăрхатпăр. Сăлтавĕсене çапла ăнлантарма пуласса ĕненетĕп – общество аталанăвĕ калăплăн, тĕпрен арканнă тапхăрта яланах ашшĕсемпе ывăлĕсен проблеми хускалать, истори çулĕ нумай енлĕн çĕнелни, урăх сывлăш-хавал тупни палăрса пырать çапла. Пĕрлех, ĕмĕрхи хавалăн иксĕлми вăй-хăвачĕ, нациллĕ ăшĕ-чикки тĕпе тухать, илемлĕ хайлавсенче тĕшше ларма тытăнать. Çаплах мар-и-ха кунта та? Пит çуман буржуасен самани çитнине ăнкарса илеймен Яриле унчченхиллех пуйма ĕмĕтленет, ĕмĕрхи тирпей-килпет картинчен тухса çĕр варринче супăшса çӳрет. Çавăнпах пӳкле пĕтет (Уяр, "Таната"). Шерккей те пуяс ĕмĕте алран ямасть, ăна нимрен мала хурса хĕрне, Селимене, çĕре кĕртет (Илпек, "Хура çăкăр"). Иккĕшĕ те прозаиксем хăйсен сăнарĕсене вăрçă хыççăнхи тапхăрта калăпланă, обществăн арканса кайнă мехелне асра тытнă.

Паллă-ха: гармонипе хаос ылмашланса черетленеççĕ. Черетленӳ варри, ун тĕнĕлĕ упрансах юлать–тĕр, вулли нихçан та хăрмасть ун, çĕрмест. Ку чĕрĕлĕх – халăх ăнĕн тĕшши, ун онтологийĕн пулăхлă вăрлăхĕ, тăванлăх сипечĕ, кĕреке сăвапĕ, мифла шухăш сĕтекĕ. Ытарлă та çавăрса калам: наци шăпин ĕмĕр сӳнми хĕвелĕ. Пĕрлĕхсĕр карчăкпа старик çав Хĕвеле сӳнтерме капашнă, кăлăх та никрес айланура хăйсен Хĕвелĕ те анасса тĕшмĕртеймен. Хĕвелĕн сăнарлă ăш-чикки вĕççĕр тарăнланса

пырать поэмăра. Пуласлăх ашшĕ пек килсе кĕрет вăл хайлава, ыр пиллĕн ăшăтать мĕн пур çанталăка, пиншер çынна, çĕршер яла. Хайлав вĕçĕнче те çав сывлăшах туятпăр унра: пĕр анать те пĕр хăпарать вăл, кунпа каç, ĕçпе кану чиккисене палăртать, Силпие, "таçти-таçти çĕрсене" çутатать каллех. Çатан карта та символла сăнар, ун леш енĕ – ют, урăх каллă тĕнче, ку енĕ – "пирĕн", хамăрăн тенĕ ăнлавсемпе çыхăннă. "Пирĕн" тенĕ пурнăç – ял-йышăн пĕр-пĕринпе çураçма хăнăхса çитнĕ хăрти, шăпа йĕрки-шывне силпилле тытса пыма алă çавăрнă çынсен пĕрлĕхĕ. Анчах çатан – пурнăçпа вилĕм чикки те. Ун тулашне тухса çӳренĕ Нарспипе Сетнер çĕре кĕчĕç. Кăмăл-сипет, халăх ăнĕн картине аркатма тăнă Михетерпе карчăкĕ те, вĕсен кĕрӳшĕ те вилĕмрен çăлăнса юлаймарĕç. Çын вилсен тĕнче пушанса юласси паллах, анчах тĕнче йĕрки-маси туншăн чарăнса лараймĕ. Çаплипех хĕвел анса хăпарать, силписем Нарспипе Сетнере ("мĕскĕнсене") аса илсе хĕрхенеççĕ. Хĕвелĕ вара яланхиллех кунпа çĕр çаврисем хыватъ, синкерлĕ Хушăлкана, вăрманпа улăха, пурнăçпа вилĕм черетленĕвне сăнать. "Çемçе чĕлхе вĕçĕнчи" сăмахпа çынсем Тăхтаманăн хаярлăхне те нумай тĕшĕлерĕç пулĕ ялта, ашшĕ-амăшĕн пилсĕрлĕхне курса тата тепĕр хут аманчĕç пулĕ чĕрисемпе. Куна кура тĕркач, тата тепĕр шухăш тĕвви тупăнать: çаври хăне тĕллĕн кăна кирлĕ те мар иккен сăвăça, вăл черетленсе, "çаврăнса", ум-хыçланса пыни хаклăрах уншăн. Ярăм-ярăмăн сыпăнса пыракан çаврасен хăрти, хайхи, произведенин хăйне евĕр ритмне йĕркелет, пурнăç тăтăшĕн сĕрелтине калăплать.

Çут çанталăк, çут тĕнче, тӳпепе çĕр, иртнипе хальхи, малашлăх, вăхăт – пурте çав тери анлă, чиксĕр-паксăр ăнлавсем. Пурте пур "Нарспире", пурте тĕлĕнмелле нумай енлĕ, нумай сийлĕ. Мĕнле мелсемпе, мĕнпе тытса, ăçтан ал хыпашлун, чун туртăмĕллĕн ăнкарса илмелле çак мĕн пур пуянлăха, нумай саслăха, тĕпсĕр тарăнлăха? Анăç теоретикĕсем, Европа сывлăшне ылтăн ывтăнтарни пек картакасем калĕччĕç – хирĕç тăрусем тупса. Кайрĕ вара хайхи: Анăç – Тухăç, Сивĕ – Ăшă, Кăнтăр – Çурçĕр, Пайăрри – Пĕрлĕхли т.ыт.те. Пĕри кивелсе ситрелсен теприне ĕçе кĕртме юрать. Çапла тăваççĕ те. Чăвашсен ăн екки, вĕсен кун-çул хакăлĕ, чун ăслайĕ çавра, тавра сăнарсенче ӳтленет пулĕ ытларах. Хире-хирĕçлĕхĕ хăйне тĕллĕн кăна çырлахтараймасть те, тен, пирĕн ентеше. Иванов та – ӳсĕм таппи çавраланса хавалланнине мала кăларать вăл. Кун сăлтавĕ

пирĕн сăмахлăх халăх никĕсĕнчен уйрăлса çырулăха тарăннăн кĕрсе кайманнинче упранать пулĕ тетĕп. Çырулăхĕ те – малтанхи тапхăрта ют, христиан тĕллевĕсемшĕн йăлана кĕртнĕ пулăм пек ĕçленĕ вăл, каярах тин чăвашсен чăн халăхла ăс килттипе çыхăна пуçланă. Илемлĕ литература вара, нацин этеплĕ (гуманитариллĕ) ăнĕ мифсенчен, юмах-халапран, юрă-сăвăран, ваттисем каланинчен, кулленхи чĕлхерен шăтса паркаланни, ялан çав хунавсене кăмăлларах пынă. Акă "Нарспи" пуçламăшĕ те – вышкайсăр аслă, пысăк панорамăллă сăн-сăпата кăларать калăпласа: "Пуш уйăхĕн вĕçĕ" (вăхăт), "Силпи чăваш ялĕ" (этем пурнăçĕ, ял йăли-йĕрки), "тусем-сăртсем", вăрман, "Çырма юхни кĕрлесе" (лаптăк, территори, талккăш)... Каярахри сюжет йĕрĕ те çапла калăплăн сыпăнса каять; анчах та вак-шак пек курăнма пултаракан ĕç-мехеле черетлет вăл – хĕрпе каччă валак умĕнче калаçса тăнине, карчăк тусан ăшшĕн килтен киле ĕретлесе хăнана чĕннине, Нарспипе Сетнер вăрмана тарнине, Сетнер амăшĕ юмăça утнине... Ăçта кунта панорамăллă событи темелле пек. Анчах панорами шăпах çав кулленхи вакçшак-черетленĕвĕнчен шăтса ӳсет те. Тĕрлĕ ĕç-пуç ретрен рет повторланса пыни ăна эпика сывлăшĕпе хĕмлентерет, пĕтĕм çут тĕнче йĕрки-масипе çыхать. Тата тепĕр ен ӳкрĕ эппин куç умне – куллен-кунхи ĕçсен ӳсĕмленĕвĕ, вĕсем çавраланни, çав çавралану эпика, панорама сывлăшĕ тупни. Ку вара – мĕн пурĕ – поэмăна философи сĕмĕ кĕртет, халăхăн авалхăхран тымарланакан ăнĕпе çыхать.

Паллах, аваллăх ăнĕн хăйле эстетки–илемлĕхĕ те пурах. Вун çичĕ çулхи яшă çырнă хайлавăн идея пĕрлĕхне, эстетика çĕнĕлĕхне вак-шак пек курăнакан ĕç-пуçра тупатпăр. Ку тĕлĕнтерет. Анчах чăвашсен сăнарлă ăнĕ çине те шак хурать – ăна славян, анăç культуринчи пулăмсемпе пулчĕ-пулмарĕ шайлаштарма çук. Л.Толстой, М.Лермонтов, Ф.Достоевский пултарулăхĕсем Европа сывлăшне курарах тăнипе те паллă. Чăн та,вĕсен те (уйрăммăнах, Лермонтовăн) тухăçла шухăшлав паллисем курăнкаласа каяççĕ-ха. Чăннипе вырăсла тенешкел çыракансем, тен, – Н.Гогольпе А.Чехов пулнă пулĕ. Ав мĕншĕн вĕсен эстетика пулăхне М.Илпек, Хв.Уяр, Ф.Павлов, И.Мучи, И.Тăхти пултарулăхĕсенче туйса илетпĕр.К пулăмăн тупсăмĕ ак çакăнта пулĕ – логикăна хирĕçле, яланхи йĕрпе килĕшмен событисен таппине килĕштереççĕ çак çыравçăсем, тĕрлĕ ĕç-пуçа логика йĕркипе мар, ассоциациллĕн çыхăнтараççĕ. Сăлтавĕ те тупăнĕ –

прозаиксем пурте халăх культурине çывăх, фольклор мехелне ăша хывас туртăмлă. Ав мĕншĕн ассоциаци йĕркипе çураçуллă шӳт хайланать ку ăстасен хайлавĕсенче, сăмах-юмаха, тĕрлĕ ĕç-пуçа вăйă йĕркине пăхăнтарни тĕпе ларать. Мучи, сăмахран, хытса ларнă тĕрлĕ сюжетсене, юмах-халап сăнарлăхне, яланхи формăпа тĕл пулакан фразеологизмсене аркатать, каламбур еккипе вылянтарать. Тăхти хăй калас тенине ялан вăлтса çеç пĕлтерет. Куçа курăнаканни, тӳрех ăнланмалла пулни вăл калас тенĕ сăмах та мар-мĕн, ăна тарăнрахра шырамалла, Ухтерккене илĕр-ха тата – вĕçсĕрех аяккалла пăрать сăмахне, ăнланмише перет, йĕкĕлтесе калаçать. Ку тĕлĕшпе вăл Чеховăн "Злоумышленник" калавĕпе питĕ çывăх. Тимлĕрех сăнани çапла ыйту лартмаллах сăлтав та парать: "Чеховран курмалăхне çырман-ши Ф.Павлов хăйĕн "Сутра" хайлавне. Ытла та прозăллаçке!"

Чăвашсен литературăллă сăмахĕ фольклортан питех уйрăлса кайман. Куна пула, ытла та халăхла хывăнать пирĕн ăстасен чĕлхи, вĕсен сюжет таппи, композици хăйне евĕрлĕхĕ. Мĕн паян кунччене темелле, чăваш прози çыруллă мар сăмах техĕмĕ çине таянса пырать.Тĕлĕнмелли çук, çырулăхне ун чух, иртнĕ ĕмĕрсенче çӳлте тăракансем, чăвашра христиан тĕнне сарас тĕллевпе йĕркеленĕ, чăвашсене халăх йăлинчен пистересшĕн пулнă. Каярахпа кăна чăвашсен нациллĕ культура йăлине кĕрет çак çырулăх, анчах чăваш литературин халăхла чĕлхе туйăмне хуплаймасть вăл. Тăхтиех, çапла, хăй шухăшне вăлтса çеç мар, çавран-çавран хывса пырать. "Помидор" калавра Ашак Иванĕ улаха кайнинчен пуçăнать сюжет. Вăл улахран таврăннипе вĕçленет. Шăкăлт! туса çаврăнса ларчĕ эппин шухăш, пысăк пĕтĕмлетӳсем патне тухрĕ. "Çанталăкра" та тĕрлĕ çаврăмсем карталанса пыни куç кĕрет, вĕсен черечĕ сăнарлă мĕнле ытарăш тупнине курмасан калав идейине вуçех ăнланаймăн. Ку кăна-и, пĕрре уйрăм çыннăн пайăр хăтланкаларăшĕсем пирки калать прозаик, тепре героя пĕтĕм тĕнче шайĕнчи проблемăсем патне илсе тухать, анчах çавра тытăмне шăнăрласах пырать. Ку вăл хальхилле каласан – кино чĕлхи. Сăмах искусствине, çыру халлĕн мар, ахаль калама, итлекенсем валли янтăланă хайлав саккунĕсемпе йĕркелет Тăхти. Çакнашкал туртăм К.Ивановăн та аван сисĕнет, вăл та хăй ункай-уйлавне фактологи шайĕнче хăрталасшăн мар.

Чăн та, кино саккунĕсемпе кăтартнă тейĕн поэма

пуҫламӑшӗнчи сӑнсене. Ытама кӗми туллилӗх – ял тулашӗ, ялти сӑнсем, ҫӳл тӳпе. Майӗпен, камера куҫса пынӑн сӑрхӑнать автор сӑмахӗ: "ватӑ йӑмра тайӑлса" ларать, шыв хӗрринче "пулӑ тытан ватӑ" йӑпанать, "Ача шӑхличӗ калать"... Кунта Тӑхтинни евӗр йӗрке мар-и-ха? Малтан панорама ӳкерӗнчӗ, кайран унпа пайӑр сӑнсем хирӗҫленчӗҫ. Анчах Иванов этемӗ хирӗҫӳ варринче мар, шавар тӑтӑшланса пыракан, кӑшӑл евӗр хывӑнакан ҫавра варринче пурӑнать. Икӗ ен пӗтӗҫӗвӗ хӑйне тӗллӗн тӑрса юлмасть, ун таппи хивре, ӑмӑртуллӑ. Тӗрлӗ событисем, коллизисем пӗр-пӗринпе юнран, чунран тымарлӑ, ҫут ҫанталӑкпа, аслӑ таллкӑш-лаптӑкпа, иртни-пулассипе пӗрлӗхлӗ. Ӳсӗм-аталану тӗшшине ӑша хывса, кӑмӑл анинче ҫав вӑрлӑха наци пурнӑҫӗн вӑрттӑнӗ пек амалантарса-таптарса пырать калу (повествовани). Авӑ мӗншӗн панорамӑлӑхӗ уйрӑм сӑнра та, пайӑр ҫынра та, хӑйне тӗллӗн ӳкерчӗкре те палӑрмасӑр юламсть.

Илӗпӗр "ҫӗнӗ кӗрӳ, Тӑхтаман" Силпие килсе кӗнӗ авӑках. Панорами ак: хӗвел вут пек хӑймаланать каҫ пулас самант синкерленет, пӗлӗт хӗррисем хӗлхемлӗн йӗрленсе ҫунаҫҫӗ. "Анат хапха патӗнче" халӑх кӗпӗрленет... Унпа ылмашнӑ пайӑр сӑнсем ак – "Туй килнине ҫавнтах систерчӗҫӗ евӗче". Пуринчен малтан "ҫӗн кӗрӳ" сиксе тухать, пӗтӗм экран туллин тенешкеллӗн ун "лаптак сӑмси" курӑнса каять, унтан ҫав халлӑ "хӗсӗк куҫ", кайран черечӗпе – "сарӑ ҫӳҫ", "сар сухал", "лаши сиксе пыру"... Ку мехел те ҫавра поэтикинех аталантарать. Панорамӑпа пайӑрлӑхӑн ӗретленӗвӗ ӗмӗрсен тарӑнӑшӗнчи эпикӑлӑхпа ума кӳрет, философиллӗ анлӑлӑх хывать. Ҫав эпика мифри пек анлӑ Хӗвел сӑнарне тивӗҫет, туйӑн "пӑсӑк туй" пулас екки ҫине шак хурать, Тӑхтаманри никреслӗхе уҫҫӑн палӑртать. Ярӑмлӑн хывӑнса пыракан идея вара пӗр маях туратланать, тата ҫӗнӗ сӗмсем, шухӑш пайрӑмӗсем тупса пырать...

Сетнерӗн ватӑ амӑшӗ ун ывӑлне усал ернӗ, ӑна такам тухатланӑ тесе шутлать, ҫав усала сирме юмӑҫ старик патне утать. Усалӗн сӑнарӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ, ун философийӗ мифла содержанире тӗвӗленнӗ. Пӗрех, чӑвашӑн ӑна ҫӗнмелли майсем тупӑннӑ иккенха. Юмӑҫ усал чӗлхине чухлакан, ун вӑрттӑнне тӗпчесе пӗлекен, унран хӑтӑлмалли ҫул-йӗре уҫса паракан ӑрӑмҫӑ шутланнӑ. Ҫавна пӗлсе тӑнипе утать те ватӑ карчӑк ӑрӑмҫӑ патне. Каллех хирӗҫ тӑру кӑна тупӑнать пек... Тухатлакан сывлӑша тупмалли протоколне пӗлет-мӗн ват арҫын: алӑка ҫаклатса хурать (Хӗвел кӗресрен-тӗр), "Ҫине кӗрӗк тӑхӑнать", "Ҫӗлӗк

тытать хул айне", "Ури айне шăрт хурать" т.ыт.те. Ритуал çăлаймасть юмăçа, урăхла чăнлăх çулĕпе уттарать хăй тăрăх юмăçа, инкекĕ чăваш йăлинче пулманнине ăнкарма пулăшать – "Тĕрлĕ усал-тĕсел мар, Киреметре хывни мар, Чир-чĕр ертен йĕрĕх мар; Çын тухатса хуни мар; Çук, кин, санăн ывăлна Турă çырни çаплалла". Сăмахĕ-канашĕ вара каллех çавра пулас çулпа пырать: "Сивĕ кунсем килĕç те Шăнса кайĕ вĕри юн", Хытă кунсем килĕç те Хытса кайĕ çемçе чун, Вĕри кунсем килĕç те, Вĕриленĕ шăннă юн, Хытнă çĕртен ирĕлсе, Çунса кайĕ çемçе чун". Тĕрлĕ йĕрсен аталанăвĕнче, вĕсен çумлăхĕнче чăваш шăпи ӳтленет, "Нарспири" сюжет сĕрелти хывăнса туратланать. Паралеллĕ тĕрлĕрен сюжет амаланса каять хайлавра, сăнарсене тĕрлĕ çавра тĕрлĕ халлăн амаланмалăх техĕм тупса парать. Сюжетăн идеологиллĕ йĕрĕсенчен пĕри вырăнне çак шухăша картма юрать пулĕ: "Укçапала эрехех Çынна ăсран кăларать". Ку идейăн таппине ватă çын тăвата çын пулма пăрахнинче сисетпĕр, вăл – çамрăксемшĕн пурнăç тĕслĕхĕ пулма пăрахнинче куратпăр. Мулăн чăваш ĕненĕвне аркатас хăрти-хапи те çав йĕрпех çыхăннă. Сюжетăн тепĕр тĕвви акă – "Çичĕ ютран килчĕ ют". Ку ĕлке тăтăш аталанса пыракан ютлăх проблемине хускатать, ăна тĕрлĕ енлĕн палăртса пырать. Юмăç сăнарĕн сюжета тивĕç екки те пĕлтерĕшлĕ т. ыт. те.

Текст тăршшĕнче вуншар çавра тĕвĕленет çапла, аталанас идея тĕппе ӳкет. "Силпи ялĕ – пуян ял Ларать вăрман ăшĕнче", – паллаштарать вулакана поэт хăй çырнинчи ĕç-пуç вырăнĕпе. Вăрманĕ – ют территори, Силпие кăшăлласа тăрать вăл. Нарспи çĕре кĕрсен ун тавралла пулин те карта çавăрса хураççĕ: "...Вилнĕ вырăнах Хучĕç ăна пытарса. Тăпри <u>тавра</u> шĕшкĕрен <u>Çатан лартрĕç çавăрса</u>"... Ункăн-ункăн кăшăлланса пыракан пурнăç юхăмĕ хăйшĕн çирĕп тĕнĕл, тикĕс те хăватлă вара ыйтать. Мĕн пур тавралăхăн, япалан, вăхăтăн çаврăнаслăхне шăнăрласа тăракан сăнарсенчен пĕри – Хĕвел. Кун çавринче пӳкленсе анса пытанать вăл, хăй çутине ейӳн салатса ирпе тӳпене хăпарать. "Çĕнĕ кĕрӳ" Силпие мĕн нушапа килсе кĕнине сисет те хăй кăмăлне каçхи кăмăл вутланăвĕпе пĕлтерет. Нарспие ылханса хăваракан ашшĕ-амăшĕн тӳрккеслĕхне курать те "Намăсланса, хĕрелсе" "анса пытанать". Юмăç старик патне пуçтах, иронилле пайăркан кĕрет, унран тăрăхласа пĕчĕк пӳлĕм тăрăх шуса çӳрет, пуçĕ çине сиксе ларать... Ку ĕнтĕ урмăш

хавалпа çумлă Хĕвел темелле. Урăх сăпатли те пур. Ырă енсене курсан, вĕсен ăш пиллĕхне ÿсĕмлетме тăрăшать, вĕри хавал тупать. Анса ларать те, çамрăксен вăййа тухма вăхăт çитнине палăртать. Нарспи те вара "Питне çăвать, шăлăнать, Вăййа тухма шÿлкеме Кăкăрĕ çине çакать". Çурхи куна савса ăшталанать те, юр васкаса ирĕлет, пĕтĕм тĕнче чĕрĕлсе каять. Каччăсем ташлаççĕ хĕпĕртÿллĕн, хĕрĕсем "акăш пекех сĕтеççĕ", кайăк сасси "Ян-ян ярать таврана" т.ыт.те.

Çапах та шат пĕр сăпатшăн, пĕр ĕнершĕн кăна хыпăнать теме çук Хĕвел пирки. Силпири пурнăç кăна тулли те ытарми темелле. Хушăлка тĕссĕр те кăйттă сăпат тупнă, кичем те ÿпĕнчĕк унти йĕрке-шыв. Хĕвел шăратса пăхни сайраран пĕрре те курăнмасть, "таçти-таçти çĕрсене" кăна çутатать-мĕн вăл. Ĕмĕрхи ăн-хакăлшăн, "çемçе чунлă" Нарспишĕн ют, ÿппĕн пурнăç упаленсе шăвать ютлăхăн çак лаптăкĕнче. Нарспи чунĕпе, Нарспи кăмăлĕпе пурăнать тейĕн халĕ ăна, Хĕвеле, – Силпие те "таçти-таçти çĕр" пек çеç хаклать. Вăхăчĕ кĕтсе тăмасть-ха, шавах васкать; Сетнерпе Нарспин телейсĕр юратăвĕ юлчĕ ав "таçта" хыçа, Михетерĕн тăрмаланчăк ĕмĕчĕ те вăл хăй малтан ĕмĕтленнĕ ирĕк тупаймарĕ. Тăхтаманăн та çемйе йĕвенне алăра тытасси пулмарĕ. Пĕтĕм тĕнче урмăшланчĕ тейĕн, çÿл тÿпи те урать-асăхать, "Аçа çапать, шартлатать", вăрман кĕр кĕрлесе тăрать... Хĕвелĕн ырă сунăмлă таппи усал вăя парăнать тейĕн, аякри çĕрсенче ăшталанса çÿрет вăл. Хайлаври ĕç-пуç тÿнтерле вĕçленет вара, мĕн пур тĕп герой вăрăм çула ăсанать, çĕр мăшкăлĕ пулать. Тин Хĕвелĕн пытаннă уççи-хуппи тупăнать хайхи: "...анчĕ, каç пулчĕ, Чăваш çынни çывăрать. ... тухрĕ, çуталчĕ, Чăваш ĕçе тытăнать". Эппин тата тепĕр кăшăл, синкерлĕ ункă çаврăнчĕ, салтăнми тĕвĕленчĕ: Нарспин "Ĕмĕр тĕттĕм тупăкра Хуйхи-суйхи татăлчĕ", "Ача чипер Сетнер те Выртать юман тупăкра", "Михетере вĕлернĕ..." Тарçин-тĕрçин кун-çулĕ те кĕлермелле кайнă, вĕсене "Эрех парса ÿсĕртнĕ". Апла пулин те, калуçă (повествователь) пире хăй сăмахне çавраласа каласа пани ахале каймарĕ, уссăр сĕврĕлмерĕ – синкер ютран писме хистерĕ пиншер çынна. Геройсен ĕçĕ-хĕлĕ, ячĕ-шывĕ, шăпа кукри-макри "юлчĕ ял çинче", пирĕн асра. "Юлчĕ" – эпир çав урмăш-аврăшран хăтăласса.

Тĕнче тăвасă кĕтеслĕ, тетпĕр. Мĕне кирлĕ пулĕ унăн тăвасă кĕтесĕ хăйне тĕллĕн? Çав тăват кĕтес варринче чĕрĕ çын сăнарĕ, халăх ăнĕн пĕр-пĕр пайрăмĕ пулмасан? "Нарспири"

илемлĕ пурнăç "сарă хĕр" тавралла пуçтарăнса амаланать, Хĕвел йĕри-тавралла çаврăнать. Кун-çул тĕнĕлне ăсталать-калăплать çакна ăнланнă Иванов. Этем вăйлă – ăс-хакăлĕпе, "Ăна никам çĕнеймест", "Çĕрсем çинче, шыв çинче Хуçа пулса вăл тăрать". Хĕвел пекех – ĕмĕрсен тарăнăшĕнчен килекен шăпа кăшăлĕн варри пулса. Хуçине хуçа та, поэт пĕрех çав анлăлăх, çав вăйхăват "хăй тĕнчине пăхăннине" ас тутарать. Пĕр пăнчă кăнамĕн çын çут тĕнчере, пĕр пĕчĕк пайрăм, анчах пĕтĕм тĕнчене пăхăнтарать. Çук, пĕтĕм тĕнчене мар, "укçапала эрехе" çĕнеймест.

"ПĔТĔМ ТĔНЧЕ ХУШШИНЧЕ ЭСĔ ПУЛТĂН ЫТЛАШШИ"... Хайлавне "Нарспи" ят панă Иванов, апла пулсан сар пикерен арăм пулнă çамрăк çын поэмăн идейăллă шăнăрĕ. Произведенире калăпланнă пурнăçăн варри. Ун тавра карталанса пырать тĕрлĕ лару-тăру, чĕрĕ пурнăç, вилĕмсен ахрамĕ. Вăрмана тарса кайсанах туять яш этем: ашшĕ ăна ахаль каçармастех, йытă пулса юнать хĕрне ун тĕлĕкĕнче: "Ăçта тартăн, усал хĕр, Пуçна çийĕп тупăнсан". Пуçна çийĕп тени Михетершĕн çăвар тути, вĕçĕмех калать вăл ку сăмаха: "Çак тарана çитрĕм те Хĕрĕм çирĕ пуçăма". Калуçă та, ун ăшĕ-чиккине туйса, çав çаврăнăшах хута ярать: Тăван çирĕ тăванах". Сетнере те çак сăмахсемпех хăмсарать Михетер – "Ы-ых, Сетнер, ас тăван: Манăн хĕре эс çирĕн!" Чăнах та, виле хыççăн виле ахрăмланать, Нарспи тавралли вилĕмсен тăвата кĕтесĕ пулса: Тăхтаман пĕтет пуçĕпе, "Ĕçĕсемшĕн хупланать", Сетнер вăрă пуртти айне лекет, Михетерпе карчăкĕ сарăмсăр пĕтеççĕ. Çавра хывăнма ĕнтĕ Нарспин вилесси кăна юлнă; çапла тĕвĕленет те салтăнми тăлă. Çук, ырă масара лекеймерĕ Нарспи, ăна, хăй çине алă хунă, çылăха кĕнĕ тесе, Кантăр вартах пытараççĕ. Ун тавралăхĕнче – асăхса вилнĕ Михетерпе карчăкĕ те, Тăхтаман та, çылăх çулĕ çине тăрса пĕтнĕ Сетнер те ырă вилĕме тивĕç пулайман. Чун биографийĕ те, хайлаври пурнăç содержанийĕ тăвата енлĕ сарă пикен: ашшĕ килĕнчи, "çичĕ ютран" хăтана киличченхи пурнăç; Тăхтаман патĕнчи хурпа терт, çав пурнăçра пурнăç çукки; упăшкине вĕлерсе Силпие таврăнни, вăл халĕ кунта ни ашшĕ-амăшне, ни савнине кирлĕ пулманни; пÿкле масарти "канăç". Икĕ çавра хывăнчĕ эппин умлăн-хыçлăн, сийлĕн-сийлĕн аталанса пычĕç вĕсем, Нарспин телейсĕр, пÿкле шăпине карталарĕç çапла. Хывакансем те, çав картана тытакансем те – паллă. Никамран малтан, паллах, – Михетер, хĕрĕн ашшĕ. Ачине пуяна çураçнипе

каппаять, ялта хӑй пӗртен-пӗр пуян пулнипе мухтанать. Кайран та, хӗрӗ Сетнер патне таврӑнсан та ҫав сӑмахах ун чӗлхи ҫинче: “Аҫу-аннӳн шур ҫӳҫне Пӗр Сетнершӗн тӑктартӑн”. Сетнерӗ Михетершӗн ялти чи юлашки, чи пӗтнӗ ҫын. “Сетнер, йытӑ, кӗҫҫе пит Пуян хӗрне ан хапсӑн”, – кӑшкӑрать вӑл юнӑхса пулма пултарас кӗрӳшӗ ҫине. Тепӗр енӗ ёнтӗ – амӑшӗ, аҫтаха чунлӑ карчӑк. Туй умӗн пӗр сӑлтавсӑртан вӑрҫса-мӑкӑртатса туллашать. Вӑрмантан тытса килнӗ хӗрне тӳрех ҫӳҫрен явать. Силпие таврӑннӑ хӗрӗпе каччине вилме, “хӑрма” “пиллесе” хӑварать. Виҫҫӗмӗш енӗ – Тӑхтаман, “ватӑ упӑшки”. Хӑй арҫын пулнине ниҫта кайса чикеймест, арӑмне йытӑ вырӑнне хурать, кунсеренех саламатпа ислетет. Ҫапла туса йӗркеллӗ ҫемйе чӑмӑртама ӗмӗт тытнӑ теме ҫук-тӑр ун ҫинчен, унашкал мехел чӑмӑртаннӑ йӑвана та аркатма ҫеҫ пултарать. Ку вара йӑва ҫавӑрас, килӗшӳ тупас тесе пӳрне те хускатмасть. Сетнерӗ, чӑнах та, урхамах пек хатар чӗреллӗ, яшӑ та сывӑ, хитре те тӗреклӗ. “Анчах ас ту Михетер Хӗрне памӗ Ҫукалла”. Ҫитменнине, “сарӑ хӗре” вӑрмана илсе тарса, ун мӑшӑрне вӗлерме хастарлсанса вӑл та шуйаттанпа туслашать, усал ҫулӗпе утать. Тӑватӑ ен, пӗри те Нарспие хӳтлӗх параймарӗ, канӑҫ кӳреймерӗ. Парадокс хывӑнчӗ хайхи. Пурӑнма ҫуралчӗ ырӑ пике ҫӗр ҫине. “Курчӗ ҫутӑ тӗнчене Пӳлӗх-турӑ пӳрнипе”, “Ӳсрӗ, пулчӗ сарӑ хӗр Атте-анне пӑхнипе”. Анчах хӗрӗн “ҫулӗ ҫитсессӗн” ашшӗ ӑна пуяна ҫураҫрӗ, Нарспин Сетнерпе тӗвӗленме пултарас пурнӑҫне урлӑ тӑчӗ. Тӑхтаманӗ хӑйӗн чунне кӑна вырӑна хучӗ, арӑмӗн те чун пуррине сӗмленмерӗ те вӑл. Хайхи, ни Силпире, ни Хушӑлкара пиллӗ вырӑн тупаймарӗ ҫамрӑк кин. Апла кӑна-и? – хӑй ҫине ал хурас шухӑш та тӗвӗленчӗ ун Хушӑлкарах (“Пӗтес мар-ши пуҫӑмпа?”), ун чухнех эппин пурнӑҫӗ вӗҫленсе ҫитнине ӑнланчӗ вӑл. Мӑшӑрне вӗлерсен тата тепӗр хут ёненчӗ вара – уншӑн пурнӑҫ та, вырӑн та ҫук ку тӗнчере. Силпие таврӑнни ёнтӗ вара йӑлишӗн, вилӗме кӗтес йӳтӗмпе тунӑ утӑм кӑна. Таврӑнни те Нарспин вилме, тӑван ҫӗрте выртма таврӑнни ҫеҫ пулчӗ. Асап-тертрен хӑшкӑлнӑ ҫыннӑн ҫӗр ҫинче пурӑнма вырӑн та, вӑй та, кӑмӑл та тупӑнманни ӑнланмалла пек. Анчах ҫамрӑк арӑмшӑн леш тӗнчере те тупӑнмарӗ канлӗ ҫӗр, ырӑ масара кӗртмерӗ ӑна ял-йыш, вӑл пӳкле вилнине, ҫылӑхлӑ пулнине асра тытса, масар тулашне пытарчӗ ӑна. Амӑшӗ калани аса килет каллех: “Шӑммӑр-шаккӑр ҫӗриччен Асапланӑр йытӑ пек!” – Ҫапла ҫӗмӗрӗлсе

тухса кайнăччĕ аçтаха карчăк. Этем пурăннă хутрах çĕрмесси паллах, эппин вилнĕ хыççăнхи шăпа çине шак хурса ылханмарĕ-и, тен, чăваш ылханĕ-йăлине аван пĕлекен пилсĕр ватă?! Эппин “вилнĕ хыççăнхи пурнăç” тӳнтерĕ тпума халал пачĕ вăл ачине.

Нарспи тавралла вĕçĕмех ăншăрт сывлăш пĕтĕрĕнсе-çаврăнса тăрать. Силпие килсе кĕнĕ усал сывлăш Михетере туртăштарать. Пĕрре хĕрне ирĕксĕрлесе качча пани çитмест ăна, татах çĕн авăра чикесшĕн вăл Нарспие: “Яту çĕрнĕ пулсан та, Çапах эсĕ манăн хĕр”, “Тепрер каччă тупăпăр Яту çĕрсех кайиччен”, “Аçун мулĕ пур вĕт-ха”... Туй вăхăтĕнче сике-сике ташлани те усала йыхăрниех темелле, ахальтен мар калуçă иронилллĕн пăхса тăрать ват хуçа сиккелени çине: “Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ, Епле ташлать..!”, “Хĕрин туйĕн савнăçĕ Çĕклет иккен ват пуçа!” Каллех Гоголе аса илме ал майлă, ун хайлавĕсенче те ватăсем çапла путишленсе сиккелеççĕ ярминккере-мĕнре. Ку та вăл – мифла шухăш палли, туй вилĕмпе пĕрлешнин уççи-уйрăмĕ. Михетер ĕç-пуçĕ, ăна тивĕçес сюжет таппи, çапла майпа, килпетсĕрлĕх карти çавăраççĕ, çав çавра, хăйĕн хăйлăхне упраса, Нарспи “орбитипе” пĕтĕрĕнет-çаврăнать. Амăшĕн хăтланкаларăшĕсем пирки каламалли те çук, вĕсен тӳнтерĕшĕ пĕрре пăхсах паллă. Нумай енчен “Тимĕр тылăри” тухатмăш карчăкпа пĕрешкел-тĕр вăл, иккĕшĕ те пурнăç малашĕ пулса çамрăксене ылханаççĕ, иккĕшĕ те вĕсене пĕтме сунаççĕ. Михетер арăмĕн ылханĕ вара тухатмăш карчăкăн ылханĕнчен те хăрушăрах. Амăш юнăхăвĕ, вăл хывнă усал сунăм Нарспие леш тĕнчере те вĕçсĕрех йĕрлесе çӳрĕ – “шăмми-шакки çĕриччен”. Чĕкеçе ылханакан карчăк чĕлхи çинче те Михетер пуплевĕнчи çаврăмсемех: “Шалт-шалт тыллăм, шал тыллăм, Çав кин пуçне çи, тыллăм”. Анчах тухатмăш карчăк та, Михетерпе арăмĕ те усала хăйсен пуçĕ çине анма та чĕнсе йыхăраççĕ. Тăхтаман пирки поэт “Ĕçĕсемшĕн хупланчĕ” тет те, ку шухăш халь çеç тĕсенĕ виçĕ героя та тивĕçет. Нарспи масар çинче йĕрсе каланă сăмахсем апла пĕрре те ăнсăртран мар – “Эй, аттеçĕм, аннеçĕм, Мĕншĕн мана çуратрăр? Тĕнче асапне курма Кун çутине кăлартрăр”. Мĕскĕн хĕрĕн чĕри “çурăлса кайрĕ”, хăй шăпин пӳкле тĕввине уççăн ăнланчĕ вăл – “Пĕтĕм тĕнче хушшинче Эсĕ пултăн ытлашши”. Ку тĕнчери кун çути те, леш тĕнчери каç тĕттĕмĕ те асаплă халĕ Нарспишĕн, ку асап чăнласах – “тĕнче асапĕ”.

Тăхтамнпа Сетнере илсе пăхас-и акă? Ытла та выльăхла



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА

тытать хайне упăшки Нарспипе, кунсерен саламат антарать пăтаран, хăртса пĕтерет тем тĕрлĕн, ялан чăмăрне кăтартса хăмсарса пурăнать. Капла тесен, çак этеме карикатура шайĕнче виçмелĕх енсем те пур. Калуçă та ирониллӗн систерсе тăрать: "Санран çамрăк ан култăр". Ку вăл Тăхтаманăн шалта пытарăннă сунăмĕ-пăшăрханăвĕ пирки систерни пулĕ-ха – ара, ватă-çке, арăмĕ – çамрăк, хайне каярах хунăн туйăнать-тĕр ăна. Çавăнпах (çамрăка култарас темесĕр) ялан чышкине чăмăрласа çӳрет. "Ватă" сăмаха пĕрре кăна асăнмасть автор, тăтăшах тĕл пулать Тăхтаман çулран иртнĕ пирки калани. Туйĕ пуçланман та-ха, шыва анан арăм ыйтать Нарспирен – "Каччу ытла ватă-им?" Акă Хушăлкари сăн, Тăхтаман чăтăмсăррăн туй килнине кĕтни. "Туя кĕтсе ват(ă) пуçăн Чунĕ вăр-вăр тăвать-çке". Мĕншĕн пăшăрхансан ватать-ха чĕрине ват каччă? Туйĕ пĕррех килессе пĕлмест-шим элле? Апла-тăк, хай ватă пулниех канăç памасть ăна. "Ват упăшка кӳлешет" тени ăнсăртарн сиксе тухман пулĕ. Çакă паллă Ивановшăн – çулĕсем иртерех панă Тăхтаманăн, унăн ашшĕ-амăшĕ пирки асăнни те тĕл пулмасть ав. Хăш вулакан Тăхтаман çулне шутласа-хисеплесе ларни, вăл çамрăк пулнине ĕнентерме кăлăхланни – эстетикăшăн, поэт хайлавĕшĕн пачах ют. Ăнланас текенĕн сăвăç каланă шухăша тĕшше хывмалла, поэма тулашĕнче ун-кун пăтранса çӳрени – анекдота тивĕç сунăм кăна. Пăхăсăр, пиччĕшĕн ачи те, Сентти те, çичĕ çула çитнĕ, ăçтан апла Тăхтамана илĕм-тилĕм çамрăк теес? Супса çӳресе этем нĕрне çухатнă героя калуçă ахальтен аса илтермест-тĕр: "Анчах ас ту, хăвăннах ӳкĕнмелле ан пултăр". Ватти çеç мар, психика тени те урмăшарах панă эппин авланас çак каччăн, упăшка пулнă ват çыннăн. Ахальтен-и вара "туй кĕлетĕнчех", мăшăрне пĕртен-пĕрре курсах темлле, юнама пикенет: "Ас ту, Нарспи, йĕвенӳ Ман алăра малашне". Тăхтамана тӳрре кăларас текенсенчен ыйтмалăх сунăм та пур – çапла хывма тытăнаççĕ-ши чăвашсем çемйе пурнăçне? Паллă: ăшă сăмах тĕлне пĕлмест Хушăлка ачи, арлă-арăмлă пурнăç еккине чухласа çитерeймест. Эппин унăн хăйĕнле, кутăнла пурнăç çаври хывăнать поэмăра, хайне хай çеç тăнлать-итлет вăл, мăшăрĕ пирки тĕлĕкре те тĕлленмест, е ас илсен те таçта пытарăннă темле вĕчĕхпе кăна-тăр. Ват упăшка çамрăк арăмпа пурнăç йĕрки-шывне тытма пĕлеес çукки тӳрех курăнать. Хăй орбитипе çаврăнса Нарспи тавралли кăшăла та кĕрсе каять Тăхтаман: савман арăмĕ çине синкер илсе антарма, арăмĕ

унщăн ытлашши чун пулнине палăртма, ăна çут тĕнчерен уйрăлас çул çине васкавлăнрах тăратма.

Е Сетнер-и тата? Вĕри яшă, пуянран хăрамасăр ун хĕрне вăрмана илсе тарма та шикленмест, кайран, тытса килсен, ăна хирĕç сăмах хушма та аптрамасть. Ырă сунăмлă каччă темелле пек, Нарспишĕн питĕ пăшăрханать, çунса çӳренипе савнă çыннине те ӳпкелет: “Аçу-аннӳ пит пуян. Хăйсен пуянлăхĕпе пăрăнаççĕ çук çынран”. Нарспие лартса тарнă каçах ăнланас-мĕн ун: кăлăх нушашăн юн шĕветет. Юмăç та каларĕ ав – “Турă çырни çаплалла” каччăн, ăнăçу пӳрмен ăна, телей çырман ун çамкине. Тарса каяс каç та лăпкă мар: “Вĕт çăлтăрсем тахçанах Пĕлĕт айне хупланчĕç. Вăрман тĕлне хуп-хурах Сĕм пĕлĕтсем капланчĕç. Çумăр çăвать, шыв юхать, Хура вăрман кĕр кĕрлет. Çил тухать те çил каять, выçă кашкăр пек улать”. Ку вăрмана усал тапратман-ха, юмăç сăмахĕнчи хавхапа пĕр халлă кăмăл ĕçлет, Сетнере пулас хăрушлăх пирки систерет, Нарспие килес синкерĕн сăн-питне кăтартма тăрăшать. Апла пулин те, шавласа ларакан йывăç та, “Чипер кайăр!” тиет те Пуçне таять çул парса”. Тепĕр енĕ те пур – кĕçех, Нарспи тĕлĕкĕнче, кунта Михетер килессе сисет-ши, тен, вăрман? Ку хутĕнчи сассем шиклĕ, “чăв та чав!”, “Вăрман çăра, пит тискер”. Мĕншĕнни паллă: “ашшĕ йытă пулнă”, “Шăлне шаккаса Сиксе çӳрет вăрманта”. “Йытă ури айĕнче Шатăртатать сĕм вăрман”. Акă вăл усалăн чăн сăлтавĕ – йытă(!) пулнă этем ури айĕнче пĕтĕм вăрман “шатăртатса”, кĕрлесе, ахăрса тăрать. Йытă тени те ăнсăртран сăмах мар, шавах Михетерпе карчăкĕн пуплевĕнче тĕл пулать вăл: “Атя, йытă, хăвăртрах” (карчăк хĕре калани), “Сетнер, йытă” (Михетер вăрçни). Синкерлĕ сывлăш çăраласси Нарспие малтанах сисĕнет: Силпи ялĕ харлатса çывăрать, са-чӳ çук. Анчах пĕр йытă “вĕркелет Çăвар карма ӳркенмест”. Мĕн пурĕ ку Сетнере усал шухăшпа явăçтарать, поэма вĕçĕнче вăл Тăхтамана вĕлерес шухăш тытать. Хăй те ăнланать урмăш утăм утнине, усала çĕнме вăй-халĕ çитменнине. Ун амăшне юмăç калани ахаль пулмарĕ эппин, тупăнмарĕ Сетнершĕн унран (усалран) хăтăлмалли çăлăнăç çулĕ: “Ах, çылăхлă чунăма Епле тытса чарам-ши?” Хăйĕн малашнехи пурнăçĕ пăрнăçа çаврăнасса туйрĕ эппин Сетнер, анчах синкер лару-тăру ăна ирĕксĕрлесе туртса кĕртет авăра. Пĕрех, пĕлет те, ĕненет те: “Çын ухмаххи пĕтерчĕ”, “Турă çырни курăнчĕ”, “Икĕ вăйлă аллăм пур”, “Унран усал тĕнче пур”. Пĕр сăмахпа,

Сетнерĕн шăпа кăшăлĕ те турă пўрнĕ кăшăл. Çутă кун курса савăнма çырман ăна та, вăл та Нарспи тавралла çаврăнать хăйĕн унки-кăшăлĕпе, Нарспи шăпине тата ытларах йывăрлатать.

Турра асăнса тилмĕрни Нарспи ăна, Турра, ўпкелесе калană евĕр илтĕнет: "Эй, турăçăм", пўлĕхçĕм, Мĕншĕн мана чун патăн? Мĕскĕн çамрăк пуçăма Пĕр телей те ямарăн?". Хĕвел усал вăйсем ахăрса кайсан аякалла пăрăннă пекех ку. Аслă пўлĕх те ашшĕ-амăшĕ хăй хĕрне телей сунасса шанчĕ пулĕ. Çук, тўрре тухмарĕ турă шанăçĕ – Михетрепе карчăкĕ Нарспирен турă панă "çут куна" çеç мар леш тĕнчере пулма пултарас канăçа та туртса илчĕç. Ниçталла мар, таçталла кăна пулса юлчĕ Нарспин кун-çулĕ – ни масарта вăл, ни ку пурнăçра. Иртнĕ кунĕ пин юнăх упрарĕ ун валли, куллен кун хăртрĕ, чунне ватрĕ. Пулас кунĕ те таçта кайса çĕтрĕ, çут тĕнчен ыра хавалĕ йышăнмарĕ çав тери хитре, "сарă чечек" пек хĕре. Хăй йĕрки-шывĕн тулашне кăларса ывăтрĕ Нарспие, чĕрине çурчĕ, пĕтĕм телей те тăпри çине сапнă шыв кăна пуласса пĕлтерчĕ. Сăмах май калас пулсан, "çатан карта" леш енне, çула тухса кайни Ивановăн кĕçĕн çулсенчи геройсене нихăçан та ырă сунмарĕ: "Тимĕр тылăри" Чĕкеç пуçне тимĕр тылă татрĕ, "Тăлăх арăмри" кĕçĕн кинпе ывăлĕ иккĕшĕ те сарăмсăр пĕтрĕç, "Шуйттан чуринчи" çулра пиччĕшĕ шăллĕне чиксе пăрахрĕ... Ак Сентти апла пулсан – вăл та кĕçĕн ăулсенчи ача. Чĕр кĕмĕл пек таса чунлă, чĕвĕлти кайăк чĕлхиллĕ пепке. Иванов тĕнчин калăпне пăхăнсан, шик витет чуна – нивушлĕ ун тĕллĕн те çапла пăтранса кайĕ-ши çут тĕнче тути-маси? Мĕнле тĕнче вăл, кĕçĕн çулхисене усал çулĕ çине тăратакан тĕнче? Яшсен чун тасалăхне пачах карта, хисепле пĕлмен шăпа хăрти? Каç тĕттĕм хĕвел çутипе тавлашăва кĕни ăнланмалла. анчах турă ирĕкĕпе тава кĕрсе аçтахаланакан ашшĕ-амăшне епле ăнланмалла, епле каçармалла? Вĕсен айăпĕпе ытлашши пулчĕ Нарспи çак тĕнчере. "Атте-анне ирĕкĕ Çирĕ сарă хĕр пуçне". Мĕн кĕçĕнрен ăна "ăшă куçпа пăхса" усрани, савни эппин ниме те пĕлтермерĕ Михетерпе мăшăрĕн? Нарспийĕн те шăп та шай вĕсем пек шухăшламалла, вĕсем пек пурăнмалла тесе тĕв турĕç вĕсем...

"ПЫСĂК ТУЙ ТА ПĂСĂК ТУЙ..." Туй. Мĕнле уяв-ши вăл? Чăваш ăнĕнче чылай чух урмăш ĕç-пуçа, арăш-пирĕш кăмăл-сипете, урлă хавала пĕлтересси те çук мар ку ăнлавăн. Туй тăваççĕ тетпĕр çĕмĕрĕлсе шăв-шав тăвакан ача-пăча пирки. Кĕрмĕшў, тĕркĕшў çине кăна шак хуратпăр-ши? Çук пулĕ. Акă

аса илер-ха “Нарспиех” – “Пысăк туй та пăсăк туй” тенĕ. Ăнсăртаран тес килмест. “Айтарти”, “Ялтари” туйсене, Федерико Гарсиа Лоркăран курмалăхне, “юнлă туй” теме юрĕ, тен. “Хура çăкăрти” пулма пултарас туй сывлăшĕнчен те вилĕм варкăшĕ çапать: Селиме, ашшĕн айăпне пула, шыва сиксе вилет. Акă хайхи, сăнарлă протоколĕ те тупăнать ку уявăн: “Нарспири” туйăн урмăшлăхĕ Михетертен килнĕ-мĕн (ватă çынран), “Айтарти” туйăн синкер ахрăмĕ нумай енчен Ахтупай (Пинерпи ашшĕ) аллинче. “Ялтари” туй еккине “калăплакансем” те паллă – Йăскар акайпа Пăрчкан. Шерккей пирки каламалли те çук, мулшăн асăхса арăмне те, хĕрне те пӳкле чикĕ патне илсе çитерчĕ. Хв. Агиверĕн “Туй” повеçĕнчи уяв вара пушшех те синкер, этем ĕренки-нĕрне çухатнă йăла – пӳкле, чыссăр вилнисен масарĕ çинче сикет вăл. Ку повеçре те аслисен айăпне кăтартнă – 99 çула çитнĕ карчăк сарăмсăр пĕтнисен масарĕ çумĕнче качака (шуйттан выльăхĕ) кĕтсе çӳрет, çамрăксен пуçĕсем çине инкек йыхăрать.

Çапла туй сăнарĕн чăваш литература контекстĕнчи пĕлтерĕшĕ. Паллăрах енĕсем, ун сюжетлă тымарĕсем çаксем: 1) ваттисен тӳнтерле сунăм-юнăмĕ, 2) çамрăксен телейсĕр çаврăннă шăпи, 3) пурнăç мехелне çĕнетмелли уяв вилĕмпе пĕр тĕвве çыхăнни, 4) кĕçĕн çулхисемпе ваттисен хирĕç тăрăвĕ, 5) пурнăçăн пӳкле çаврисем ретрен рет, йĕркерен йĕрке ярăмланса пыни т.ыт.те. Ку семантикăн персонажĕсем те, вĕсен хушшинчи драма та, çав драмăн аталану саккунĕсем те кашни хутĕнчех расна функци, расна йĕр тупаççĕ: К.Иванов Нарспие мала кăларать, ун шăпипе хуçăлса чĕрине ватать, П.Осипов Тăхтаман “ролĕнчи” Айтара калăплăрах курасшăн ăшталанать... К.Иванов палăртнă илемлĕ перспектива Осиповшăн, Илпекшĕн, А.Артемьевшăн, Ю.Скворцовшăн кирлĕ пулса тăрать. Пурте вĕсем паллă ситуацин пĕр персонажне илеççĕ, сюжета ун тавралла сыпса аталантараççĕ. Артемьев иртнĕ вăрçă хыççăнхи тапхăрта курать ку ситуацин тĕрлĕрен палăрăмĕсене, вăл тĕп геройăн вилĕмĕпе вĕçленмесен те пултарасса ĕненет (“Салампи”). Ун Салампийĕ асап-терт витĕр çирĕп чунпа тухать, хăй юратăвне тупать. Скворцовăн Укахвийĕ (“Уках хурăнĕ”) вилĕм танатинчен хăтăлаймасть, апла пулин те, мĕн вилĕм патне çитерех, чунĕпе пиçĕрех, тасарах пулса пырать. Мĕнрен килчĕ-ши эппин Нарспи усал хывнă çул çине кĕрсе кайни? Самана синкерĕ çав вăхăтра ытла та йывăррăн палăрнинче пулĕ ун вăрттăнĕ. Авă нумай пулмасть

– 1999 çулта – çапăнса тухнă “Çылăхлă хĕрарăм” повеçри (Ю.Силем) Мерченпи те çылăх сукмакĕпе утать, чунри сăвапа тĕкел упрама вăй çитерейместь. Каллех самана урмăшĕн тÿнтерĕшĕ вăя кĕрет пулĕ – паянхи вăхăт “лапралăхĕ”, вăл ÿпĕнчĕк хавалпа çеç аталанкалани никамшăн та вăрттăнлăх мар. Халĕ Ф.Павловăн туйне илсе пăхăпăр: пĕр персонаж шăпи кăна çырлахтарман драматурга, Çтаппанпа Елюк хушшинчи çыхăнусен драматургине тĕпе кăларас тĕллев тытнă вăл. Паллах, кун пек тĕллев тата урăх композици ыйтать, жанр тытăмне çĕнĕлле йĕркелеме хушать. Чăнах та, чыссăр ватăсем те кунта иккĕн тан – Йăскарпа Пăрчкан. Социаллă пурнăçăн сăн-сăпачĕ те курăмлăрах – империализм вăрçи уççăн сăнарланать, Ванюк пуçĕ çине йăтăнса анать, Елюка урмăштарать. Ванюк та Сетнер пек çухалса каймасть, хăйĕн çине тăрулăхне палăртсах тăрать. Туйри юн та, хайхи, вăрçăри юнпа пĕрлĕхленсе каять. Хв. Агивер тата урăх енсем тупнă – туйăн пĕтĕм капти-хапи килсе кĕрет повеçе, персонажсене мар, ситуацин пĕтĕмĕшле содержанине тĕпчесшĕн Агивер. Каллех жанр хăйне евĕрлĕхĕ пирки калама пулать – çавра сăнарĕ уççăн тĕртĕмленсе тухать ума, виçĕ сыпăклă ĕç-пуç виçĕ çавран сăнарланать повеçре.

Хакларах пăхар-ха эппин, мĕнле туй ÿкерĕнет “Нарспире”? Ял-йыш ĕнтĕ ку уява тахçанах чăтайми кĕтет: “шеп те пулĕ туй” тесе пурăнать, тути-çăварне çуллантарать. Пил паракан ашшĕ-амăшĕ чыслă пек-ха, ырра вĕрентеççĕ пек хĕрне – “Аван пурăн унпала, Тату пулăр яланах. Итле ăна, йăваш пул.” Сыхчă кăмăл вăратаканни тупăнать сасартăк: итлесси йăваш пуласси-ши, мăшăрĕн тĕрĕс марлăхне те курмиш туни-и? “Усал çынпа ан çыхлан”, – тесе ăс параççĕ ваттисем ачине, анчах хăйсем усала хĕвре йăва çавăрма ирĕк те панă. Каярах çак мотив А.Емельяновăн “Ят” повĕçĕнче çавăрăнса тухать, унта та амăшĕ ывăлне ята упрама вĕрентет, анчах та Ульянапа упăшкин ял çинче ячĕ кайнă та иккен. Шалти сисĕмĕ Нарспие малтанах вĕрилентере пуçлать – ашшĕ-амăшĕ хĕрĕн хутне кĕресшĕн мар, унăн “чунне пĕлмеççĕ”. Тĕлĕнмелли çук, “каччи пуян” тенипе пуçĕсем çаврăнсах кайнă вĕсен. Вĕсене пулах пĕтĕм йĕри-тавралăх та çаврăнса-пăтранса тăрать, пурте уявшăн хыпăнаççĕ, пичĕке кустараççĕ, парне валли çĕлеççĕ. Пĕртен пĕр чун – Нарспи – кăна тăлăх, унпа сăмахлас, ун шухăшне итлес текен пĕр çын çук. Хĕршĕн ĕнтĕ паллă йăлт: çĕнĕ пурнăçĕ тĕрме пулĕ, ирĕксĕрлĕх алхасакан тамăк. Çăлăнăçĕ те çук.

“Кайӑк чунӗ пулсассӑн, йӗрӗнччӗ те кулӗччӗ; Çуначӗсем пулсассӑн, Вӗçӗччӗ те кайӗччӗ”. Кайӑкпа танлаштарни ыт ахаль сӑнар мар, сӑвӑçшӑн питӗ пӗлтерӗшлӗ вӑл. Сентти кайӑк чунлӗ ав, кӑмӑлӗпе таса, сӑваплӑ. Пӳлӗх ӑна çавӑнпах “кайӑк чунӗ панӑ” Нарспие те пӳлӗхрен çав ырлӑх тивӗçнӗ, вӑййа тухса “ирхи çӑлтӑр” хӑпаричченех “савӑнтарать юррипе” ял-йыша. Эппин ӑçтан, мӗнле вӑй ахӑрса усал çул çине тӑратать çав сӑваплӑ, ырӑ чунлӑ, кайӑк чӗриллӗ хӗре? Усалпа ертнин уявӗ – туй. Ашшӗ-амӑшӗ ун çуначӗсене хуçрӗç, вӗçес çулне пӳлчӗç, юрлас юррине татрӗç, куç çулӗпе шӑварӑнас шӑпа пӳрчӗç. Яшӑ чухнехи хӗвел те, ав, пиллӗн анатчӗ, хӗре вӑййа тухма хистетчӗ. Çураçнӑ хыççӑнхи хӗвел пач расна хаваллӑ: “Хӗвел анчӗ <u>хӗрелсе Хура вӑрман</u> хыçнелле” Вӑрман хыçӗ – ют территори, çав лаптӑкран килет те Силпие “çичӗ <u>ют</u>”. Ахальтен мар çине çине калать ӳнерçӗ çав ютлӑх çинчен: ”Çичӗ <u>ютран</u> килчӗ <u>ют</u> Ашшӗ килне хӑтана, Çичӗ <u>ютри</u> пуяна Сарӑ хӗре çураçма”.

Малашнехи сюжет таппине пӑхас-тӑк, Нарспи халех çурма вилӗ темелле. Кашни сас-чӳ ун чӗрине варринчен çурать, пулас трагеди çинчен аса илтерсе тӑрать: “Чее маттур каччисем Хӗрсем хыççӑн чупаççӗ”; сысна çухӑрать, “пӗтӗм яла çӗмӗрет”; “кӗтӳ анать кӗрлесе” ... Чыссӑр уяв пухӑнать, поэт каларӑш, “Пысӑк туй та, пӑсӑк туй”. Тимӗр вулаканшӑн каллех физиологи, фактологи шайне анмалли майсем пур: Нарспин “шӑрçийӗ шӑтӑк” пулнӑ, çавӑнпа туйӗ те – “пӑсӑк” темелле пек. Анчах та ӗнтӗ, “Нарспи” – философилле поэма, туй пӑсӑклӑхӗ кунта символлӑ пӗлтереш тупать, пӗтӗм произведени тарӑнӑшне витерет. Тен, çавӑнпах ташӑ сӑнарӗ çине пусӑм тӑвать сӑвӑç:”... Пуса качЧисем Вӑран тухса сикеççӗ”, “... хӗрӗсем такмакӗпе сӗтеççӗ”, ташлать “ват хуçа”, “<u>Туй тӑваççӗ çӗмӗрсе</u>” т. ыт. те. Ма çав териех çӗмӗрлет-ши тӗнче? Мӗншӗн хӑй чыссӑрлӑхне курмасть вӑл? “...Шӑпӑрӗ чарӑнмасть”. “Ватӑ çыннӑн халӗ çук, Выртнӑ çӗртех сиккелет, Анчах тӑма вӑйӗ çук”. Чимӗр-ха, тен, ваттин ӗçсе супма васкамалла пулман, туй йӑли-йӗркине пӗлессине асра тытмалла пулнӑ? Кунта ак ӑссӑрлӑх таппи ӗçлесе каять, çамрӑкран та малтан тӳнсе каять пурнӑç йӗрки-шывне ӑланма тивӗç çын. Хӗр çумӗсем кӑна туяççӗ чунӗпе çак мӗн пур арӑшпирӗше: “Ырӑ Нарспи аппаçӑм, Ӑçта санӑн телейӳ?” Туйӑн пӑсӑлас екки ум илнинчен ним тӗлӗнмелли те çук. Нарспи хурланса ларнӑ чухах пӗр йытӑ хамлаткалатчӗ. Ыйха кайса

лӑпланнӑ тĕнче варринче иккĕш кӑначчĕ вĕсем: “çӑвар карма ӳркенмен йытӑ” тата “сарӑ хĕр”. Кунта та иртес туйӑн тӳнтерĕшĕ сӑнланчĕ пуль. Поэт та çавна калать: “Урнӑ йытӑ Михетер Хӑй саламат тытрĕ”. Арçынпа хĕр туйĕ хушшинче шӑхӑрма тытӑнать саламат, Сетнере тивĕçет малтан. Туй хыççăнхи саламат вара Нарспишĕн анать “куллен кун” пӑтаран. Курӑрха, детальсем пĕрме-пĕччене юлмаççĕ иккен кунта, çавраланса пырса ĕç-пуçăн ритмне, ӳсĕмлĕхне кӑтартаççĕ вĕсем. Упӑшки çичĕ ют пулнине нихçан та асран кӑлармасть Нарспи. Ахальтен мар сӑвӑç та ӑна çине-çинех асӑрхаттарать: ют территорирен, вӑрмантан, “çатан укӑлча” леш енчен килсе тухать Тӑхтаман. Упӑшки çеç мар, пĕтĕм тĕнче ют çамрӑк арӑмшӑн – тусĕсем те, ашшĕ-амӑшĕ те, туйри ӳсĕр-какӑр та. Ютлӑх ташши карталанса çавӑрнӑнать кĕçĕн çын тавралла, ритуал йĕрки пек пулса; туй тени йӑлана кĕртсе çирĕплетет çав ютлӑха.

Хайхискер, усал ĕç ритуалĕ пек сӑнарласа ӳтленет хайлавра туй. Ахальтен-мар, кайранхи пурнӑç контрастлӑн хывӑнса пырать: “Тулта тĕнче хĕпĕртет” – “Нарспи пӳртĕнче йĕрет”. Хĕвел вут пек хӑймаланать, тепĕр усал ритуал хывӑнасса сисет тейĕн: пӳртре вучахра наркӑмӑшлӑ яшка вĕрессе. “Çĕлен пекех чашлатса” пиçекен апат та, “Усал куçпа çавӑрса” чӑмӑрне кӑтартса ларакан Тӑхтаман та – пĕр сĕмлĕ. Усал ĕçĕ вĕçленсен пĕтĕм хаяр-хура çĕкленет. Пурте “хӑратать... Нарспие”, шиклентерет темле ӑрӑмлӑ вӑйпа. Çут тĕнче сӑнĕ те урӑх, малтанах урмӑш уяв енне кайнӑ туй, ун тавралли событисен таппи пек. Йытӑ вĕретчĕ ав малтан, ашшĕ те хĕрĕн тĕлĕкне йытӑ пулса пырса кĕнĕччĕ, хĕрпе каччăна вӑрмантан тытса килсен халӑх умĕнче хаяррӑн тустарнӑччĕ вӑл, карчӑк ним çукран туллашса çӳретчĕ... Ку – туя хатĕрленни; хатĕрленĕвĕ вара – йӑлтах урлӑ-пирлĕ, пилсĕр, килпетсĕр. Туйĕ те çавна маях иртет: пурте “вӑйран тухса сикеççĕ”, пĕр çыннӑн чĕри çурӑлса тухнине нихӑшĕ те сисмеççĕ. Туй хыççăнхи лару-тӑру арӑш-пирешленнинчен эппин мĕн тĕлĕнмелли пур? Каларĕ-çке Нарспи: “Эй, каччӑçӑм Тӑхтаман, Эпĕ пуçăм пĕтсен те Санпа пĕрле пулас çук”. Упӑшки вара арӑмĕпе çуммӑн выртма ĕлкĕричченех юнӑхма тытӑнчĕ: “Ас ту, Нарспи”... Ӑçтан çакна этем шутлӑ йĕрке тейĕн?! Пĕтĕм тĕнче – космос, çĕр, шыв, тӑван-пĕтен – пурте ют. Ютлӑх палли – “Асрĕ-кайрĕ сĕм вӑрман”, “Вӑтар та пĕр шуйттан пек... улать” вӑл. Асӑхакан тĕнче ютлӑх анинех илсе каять телейлĕ пулма пултарнӑ хĕре. Халĕ ĕнтĕ уншӑн çĕрпе пĕлĕт кӑна мар, леш

тĕнче те сивĕ, ют, канăçсăр...

“Çапла иртрĕ пурнăç, Пуçĕ пĕтрĕ çамрăклах”, “Ашшĕ-амăш ухмахран”. Пӳлĕх-турă кайăк чунлĕ тасалăх пачĕ Нарспие, Михетерпе карчăкĕ аçтаха пек усалланса туртса кăларчĕç çав тасалăха, хĕрне Тăхтамана пачĕç. Лешĕ вара хăй хĕвелĕ анасса кĕтрĕ пулĕ, чыса, чарака пĕлми хĕнерĕ арăмне. Çавна туйса каларĕ пулĕ калуçă: “Хĕне, хĕне, Тăхтаман, Чунне кăлар унăнне”. Кăларчĕ. Пĕрлех хăй те вилĕм шăтăкне ӳпĕнчĕ...

ВĔÇĔНЧИ СĂМАХ. Çак йĕркесем вилĕмсĕр поэма пирки паян калаçни-тунине, ăна пулчĕ-пулмарĕ, хутла пĕлменлĕн тиркени çине хурав пани евĕр пулчĕç пулĕ. Ӳлĕмрех тарăнраха кĕрсе калаçмалли майсем те, сăлтавсем те тупăнчĕç. Ку ĕнтĕ ыран тумалли ĕç.


Литература

1. Александров С. Поэтика Константина Иванова. Чебоксары, 1990.

2. Пушкин В.Н. Кам-ши вăл Нарспи? Ш., 1994.

3. Сироткин М.Л. Очерки дореволюционной чувашской литературы. Чебоксары, 1967.

4. Александров С. Асăннă ĕç. Унччен ку пулăм хăйне евĕрлĕхне Г.Я.Хлебниковăн Художественное мастерство К.В.Иванова в поэме “Нарспи” ĕçĕнче асăрхатпăр (классик чувашской поэзии. Чебоксары, 1966).



Родионов В.Г.


## К.В.Иванов хайлавĕсен пултарулăхлă историйĕ

Юлашки вунă çулта К.Иванов пултарулăхĕ пирки çырнă тĕпчев ĕçĕсем сахалах мар пичетленчĕç Аслă поэтăмăрăн çĕр çулĕ çитнĕ тĕле харăсах виçĕ кĕнеке тухрĕ: С.Александровăн «Поэтика Константина Иванова» (Чебоксары, 1990. - 192 с.) монографийĕ, «Творческое наследие К.В.Иванова» (Чебоксары. 1990. - 120 с.) тата «Вопросы поэтики К.Иванова» (Чебоксары, 1991. - 167 с.) сборниксем. Çаксемсĕр пуçне сăвăçăмăр пултарулăхĕ пирки Ю.М.Артемьев профессор та хăйĕн «XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури» (Шупашкар, 1992) ятлă сулмаклă ĕçĕнче 20

страницăна майлах çырса кăтартнă. Кунта унăн диссертацийĕнчи («Просветительство и развитие чувашской литературы». М., 1993) «Традиции и ценности нового времени в творчестве К.В. Иванова» сыпăка аса илни те вырăнлă пулмалла.

Тĕпрен илсен, ивановедени аталанать темелле. Çапах та пирĕн литературоведсем ăслăлăхри пур мелсемпе те туллин усă кураççĕ тесе калаймăн. Вырăс литератури ахахĕсене, вĕсен пултарулăхлă историне (творческая история), сăнаса тĕпчесси анлă сарăлнă (1). Ку енĕпе теорилле ĕçсем те пичетленчĕç. Чи малтанах кунта Д.С.Лихачев çырнисене палăртмалла (2). «До той поры пока мы знаем памятник только в его последнем варианте и лишены возможности проследить движение текста, соотнести текст с явлениями личного развития автора и историческими фактами в целом – наша интерпретация памятника всегда может быть субъективной, подчиненной автору и нашим собственным способом восприятия. Только изучив текст в его движении (самостоятельно, соотнесенном с развитием автора, редакторов, переписчиков, с движением истории литературы и истории и т.д.), мы получаем объективные данные для суждения о нем, о его замысле, художественных тенденциях, идеологии, отразившейся в нем и т.д.» (3).

Д.С.Лихачев текстологие литература историйĕн никĕсĕ тесе шутланă. Уйрăм палăк историне тĕпчени литература историне пĕтĕмĕшле пăхма майсем туса парать тенĕ паллă академик.

Хайлавăн пултарулăхлă историне пăхса тухни çыравçă мĕн калас тенине тĕрĕсрех ăнлантарса пама май парать. Чи малтан кунта унăн тĕнче курăмĕпе туйăмне, ăна ытларах мĕн пăлхантарнипе шухăшлаттарнине асра тытмалла.

Çаксемсĕр пуçне хайлав поэтики аталанса, улшăнса пынине те сăнама май килет ку мелпе. Кун пек чухне тĕпчевçĕ аллинче хайлавăн темиçе варианчĕ пулмалла. Тепĕр çул та пур: енчен те эпир хайлавăн юлашки вариантне кăна пĕлетпĕр пулсан, поэтикăна тĕпчени урлă унăн малтанхи варианчĕ пирки калаçма пултаратпăр. Кунта ытларах пысăкрах калăпăшлă хайлавсене тĕпчеме меллине палăртмалла.

Мĕн тума кирлĕ-ши хайлавăн пуçламăш варианте пĕлни? Икĕ е темиçе варианта танлаштарса тĕпчевçĕ çыравçăн малтанхи шухăш тытăвĕпе (замысел) шухăш ӳтлентерĕвне (воплощение идеи) туллин пĕлме пултарать. Эппин, вăл хайлавăн пултарулăхлă историне шухăш тĕлĕшĕнчен тĕплĕн ăнлантарма пулта-

рать. Ҫак мелпе эпӗ К.В.Иванов «Нарспийӗн» хӑш сыпӑкӗ маларах, хӑшӗ каярах ҫырӑннине йӗркесен хисепне тата састашсене тӗпчесе палӑртнӑччӗ (4).

Сӑвӑҫӑн ытти хайлавӗсене е куҫарӑвӗсене пӑхса тухни те поэтикӑри аталанӑва курма май парать. Калӑпӑр, «Нарспи» хайлава хӑш вӑхӑтра ҫырнине пӗлнӗ хыҫҫӑн тӗпчевҫӗ ҫав тапхӑрта ҫырнӑ хайлавсемпе куҫарусен хӑй евӗрлӗхне палӑртать. Ҫапла майпа вӑл ҫыравҫӑ пултарулӑхӗнчи поэтика аталанӑвӗнчи тӗп тапхӑрсене асӑрхать, вӗсене «Нарспи» поэтикинче сийлесе уйӑрса пӑхать. Ҫапла мелпе тӗпчесе эпӗ те хӑш-пӗр хӑй евӗрлӗхсем пирки ҫырнӑччӗ (5).

К.Иванов йышши ҫыравҫӑсен пултарулӑхне тӗпченӗ чухне автор сюжета ӑҫтан илнине палӑртни те питӗ пӗлтерӗшлӗ. Хӑйӗн шухӑш тытӑвне кура вӑл малтанхи сюжета тӗрлӗ ҫӗнӗлӗхсем кӗртме пултарать. Ҫавсем вара ҫыравҫӑн шухӑш тытӑвӗпе шухӑш ӳтлентерӗвӗ хӑш ҫулпа кайнине уҫҫӑн кӑтартаҫҫӗ.

Поэтӑн кун кӗнекисемпе ҫырса пымалли тетрачӗсем, ҫырӑвӗсемпе биографири паллӑ фактсем - ҫаксем пурте вӑл е ку хайлавӑн пултарулӑхлӑ историне туллин тӗпчеме пулӑшакан ҫӑлкуҫсем.

## Хайлавсене ҫырнӑ вӑхӑт

Вӑл е ку хайлава хӑш вӑхӑтра ҫырнине палӑртни сӑвӑҫӑн поэтика ӑсталӑхӗн аталану тапхӑрӗсене курма май парать. Унӑн шухӑш-кӑмӑлӗпе туртӑмӗ, чун екки ӑҫтарах туртӑннине те пӗлме пулӑшать ҫак шырав Чӗмпӗрти тата Раҫҫейри общество пулӑмӗсемпе ҫыхӑнтарса пӑхни вара К.В.Иванов пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗн контекстне курма май парать.

Чи малтанах поэт хӑй ҫырса хӑварнӑ текстсем пирки калаҫни кирлӗ.

К.В.Ивановӑн тӑван ялӗнчи литература музейӗнче 1906 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 14-мӗшӗнче ҫырма пуҫланӑ типтерӗ («Записная тетрадь») упранать. 1987 ҫулхи экспедици вӑхӑтӗнче эпир Г.Ф.Юмартпа ҫав тӗрлӗ плансем ҫырса хунӑ типтерпе тӗплӗнрех паллашнӑччӗ. Ӑна сӑвӑҫ хӑй 45-мӗш пите (страницӑна) ҫитиччен номерлесе тухнӑ, тепӗр страницине кутӑнла, «Ешӗл вӑрман айккипе» сӑвва ҫырса хунӑ, вӗҫӗнче «К.Иванов» тесе алӑ пуснӑ. Малалла ҫырнисем 49-мӗш питрен кӑна пуҫланнине шута илсен. пуҫхӗрлӗ ҫырнӑ сӑвва поэт чылай каярах хайланӑ

тесе калама май пур.

49-мĕш питре (страницăра) сăвăç 1906-1907 вĕренӳ çулĕнче çырма палăртнă ĕçсене асăннă: «1. ЭРЕХ, комедия в одном действии (в стихах) 600. 2. ЙĂВĂР ÇУЛ, трагедия в двух действиях (в стихах). 3. ЯЛТИ ĔÇСЕМ, случаи из дерев. жизни. 4. ЙĂВĂР ÇУЛ, семейные соб. 1906 г. 5. ИКĔ ĂРУ, родословные записи. 6.»

Плана поэт юпа уйăхĕн 10-мĕшĕччен çырнă. Çакна 50-мĕш питре казаксен станицине илемлĕн сăнласа çырнă хайлавăн икĕ тĕрлĕ планне тунă хыççĕн лартнă дата (10.10.1906) ĕнентерме пулăшать.

Типтерĕн 51-53-мĕш пичĕсенче «Лето 1906 года» ятлă калав пуçламăшне çырнă (1906 çулхи юпан 11-24-мĕш кунĕсен хушшинче). Унта поэт çу уйăхĕн пуçламăшĕнче хăй тăван ялне каникула таврăннине пĕлтерет. Малалли тĕпчев валли питех те кирлĕ: «2. Оказалось, что сосватали дочку нашего богатого лавочника. Пригласили на свадьбу и нас как близ. родственник.

Я с нетерпением ждал Троицу, на которой должна быть наша свадьба. За неделю до свадьбы стали приготовляться к ней: заказывать новую одежду, убирать комнаты...

На другой день рано утром меня пробудили. Я оделся и <пошел> с довольным чувством, что я тоже «пуза каччи», побежал на свадьбу. Я вошел в избу. В это время невеста уже кончала «прощание». Прощание состоит в том, что невеста целовала по порядку всех, начиная с родителей, и означает, что она оставляет свое девичество и переходит к замужнему положению».

К.В.Иванов чăваш туйĕнче пуса каччи пулни каярах ăна «Нарспири» туй сценисене тĕрĕс çырса кăтартма май панă темелле. Çав хушăрах вăл хăйĕн поэмине 1906 çултах çырма пуçланă тени тĕрĕс мар. Ку вăхăтра сăвăç материал пухса пуянланнă, ерипен шухăш çуралу патнелле çывхарнă кăна-ха.

55-мĕш питре вырăсларан чăвашла куçарнă «Вăранăр, тапранăр!» ятлă (вырăсла вăл «Крестьянская марсельеза» ятлă) сăвă пур. Ăна поэт юпа уйăхĕн 10-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче хайланă. Куçару питех те ирĕклĕ, оригиналти састашсем (рифмăсем) те курăнмаççĕ. Ку вăхăтра вăл вĕсене йĕркелеме хăнăхманни сисĕнет.

56-57-мĕш питсене автор «Дубинушка» юрă куçарăвĕн икĕ

редакцине ҫырса хунӑ. 58-мӗш питре дата кӑна лартнине («25 октября») асра тытсан, куҫарӑва вӑл ҫав кунччен кӑшт малараx ҫырса хунӑ теме пулать. Сӑввӑн пӗр ҫаврине куҫаруҫӑ оригиналти пекех хӗреслӗн састашланӑ: АБАБ.

61-64-мӗш питсем ҫине Слакпуҫ ялне вырӑсла сӑнласа кӑтартнине ҫырса хунӑ.

65-мӗш пит енне ҫапла ҫырнӑ: «1. ЭРЕХ, в 1 д<ействии>. 2. ТӐЛӐХ АЧА, в 2 д<ействиях>». Каярах сӑвӑҫ ҫапла хушса ҫырнӑ: 3 д<ействия> 12 стр<аниц> к 1 дек<абря>». Ҫаксене автор юпа уйӑхӗн вӗҫӗнче е чӳк уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче ҫырса хума пултарнӑ.

67-68-мӗш питсене кайран такам татса илнӗ.

69-мӗш питре ҫапла ҫырса хунӑ: «Умӗнхи сӑмах. 1. Мӗн пӗлес килет кашни ҫыннӑн? 2. Мӗншӗн пурте пӗлеймеҫҫӗ? 3 страница. 3. Епле эпӗ ҫак кӗнекене ҫыртӑм?».

Ҫак сӑмахсене ҫырса хунӑ тапхӑрта поэт кӗнеке хайласа пичетлес ӗмӗтпе пурӑннине пӗлни питех те пӗлтерӗшлӗ. Палӑртнӑ хайлавне прозӑлла ҫырма тӗв тунӑ-тӑр унӑн авторӗ. Вӑл историллӗ ӗҫ ҫырма шухӑш тытнӑ пулас.

70-71-мӗш питсенче Я.Кузнецовӑн тата Гоголӗн Днепр ҫинчен ҫырнисене танлаштарса пӑхни пур. Ҫакӑ К.В.Ивановӑн пултарулӑхӗпе тата ӑнлавӗпе тачӑ ҫыхӑннӑран текста пӑхса тухма хистет: «1. Ц е л ь Кузн. – дать более или менее полное и точное понятие о Днепре; цель Гог. – вызвать воображение читателя карт. Днепра. Описание Кузн. – это ландкарта; описание Гог. – это пейзаж.

2. М а т е р и а л о м для оп. Кузн. служат призн. постоянные, а для оп. Гоголя – случайные.

3. Оба автора выразили свой материал в слове, но выбор слов у обоих различный: у Кузн. простой, или прозаический, а у Гоголя – образный, или поэтический.

В ы в о д: «Днепр» Кузн. – описание п р о с т о е, а «Днепр» Гоголя – описание х у д о ж е с т в е н н о е».

Текста кутӑн ҫырса хунӑ. Ӑна «Ешӗл вӑрман айккипе» сӑвва хайланӑ вӑхӑтрах таса юлнӑ питсем ҫине ҫырнӑ теме май пур. Типтер пӗтӗм вӗренӳ ҫулӗ валли пулнине асра тытсан, ҫак текстсене автор 1907 ҫул пуҫламӑшӗнче те ҫырнӑ тесе калама пулать. 82-мӗш питре «Сушкин Пушкин 1907 год» тесе паллӑ туни типтере автор каярах ҫырнӑ тесе калама хистет.

76-мӗш питре «Пӑртта карчӑк», «Чун татӑкӗ», «Хрулкка

сухалё» ятлă хайлавсен уйрăм пайёсен ячёсене çырса панă. Типтерте çак ёçсене çырса пётернё хыççăн палăртнă теççё.

Ухсай Яккăвё çырни тăрăх, К.В.Ивановăн 1907 çулхи типтерёнче «Пăртта ăрăвён историйё» повеçён ячё пулнă. 1906-1907 вёренÿ çулёнчи типтерён 76-мёш питёнче çырнипе тÿр килет çав хайлав ячё. Çак факт та малтанхи типтерте 1907 çулта çырса хунă вырăнсем те пуррине ёнентерме пулăшать.

Ухсай Яккăвё каланине ёненсен, çав «пёчёк тетрадь» «Шуйттан чури» трагедирен пуçланнă. Ун хыççăн «Тимёр тылă», «Тăлăх арăм», «Ватă вăрман», «Хуркайăксем» тата «Икё хёр» ятлă хайлавсем çырма палăртса хунă план пулнă иккен. (6). Малла автор «Выçă аптранăскерсем» ятлă хайлав пуçламăшне, унтан «Ватă вăрман шухăшё» ятлă халап пуçламăшне çырса хунă-мён. Унтан çаксем пулнă: «Çывăр, ачам, çывăр» (А.Н.Майков), «Усал шăрăх» (Н.П.Огарев), «Кёркунне», «Выçă аптранăскерсем» (тёп пайё), «Кёркунне» ятлă сăвă сыпăкё. «Выçă аптранăскерсем» айне поэт «30 декабря 1907 года» тесе çырнă иккен (7).

Çак типтере К.В.Иванов 1907 çулхи çурла уйăхён вёçёнче (шăпах çавăн чухне вăл Чёмпёре тепёр хут таврăнать) е авăн уйăхёнче пуçлама пултарнă.

Н.В.Шупуççынни аса илнё тăрăх, 1907 çулхи кёркунне К.В.Иванов чи малтан «Тимёр тылă» хайлавне çырса пётернё, унтан «Икё хёр» хайланă. Поэт шăллё, Квинтилиан, çырнă хайлавсене çапла черетленё: «Икё хёр», «Тимёр тылă», «Тăлăх арăм», «Нарспи» (8).

Чăн та, «Икё хёр» калăпăшёпе пысăках мар хайлав, авторё ăна пёрре ларсах çырса пётерме пултарнă. Тен, сăвăç чăнах та «Тимёр тылă» балладăна çырма чи малтан пуçăннă, çапах та «Икё хёре» вăл çав хушăрах хайлама пултарнă. Кирек епле пулсассăн та çак икё хайлава пёр çыхăра пăхса тухни тёрёсрех пек. Вёсене поэт авăн-юпа кăйăхёсенче хайланă пек пулса тухать.

Ухсай Яккăвё çырнă тăрăх, «Выçă аптранăскерсем» хайлавăн тёп пайё айне К.В.Иванов «30 декабря 1907 года» тесе палăртнă. Ку вăл сăвва çырса пётернё вăхăта пёлтерет ёнтё.

«Тăлăх арăм» балладăна сăвăç «Нарспи» поэмăна çырса пётерес умён хайланă пек пулса тухать. Çакна поэт шăллё Квинтилиан çырнинчен (9) тата «Чăваш халапёсем» кёнекере пичетленнинчен тёшмёртме пулать (10).

Çапла вара хайлавсене сăвăç 1907 çулта çапла черетленӳпе çырнă тесе каламалла: 1. «Шуйттан чури» (11). 2. «Икĕ хĕр» (юпа уйăхĕ). 3. «Тимĕр тылă» (юпа -чӳк уйăхĕсем). 4. «Тăлăх арăм» (раштав-кăрлач уйăхĕсем).

«Нарспи» поэмăна хăçан çырнине пĕлме хăш-пĕр аса илӳсем пулăшма пултараççĕ. Я.А.Обухов З.П.Маркеловран çапла аса илӳ çырса илнĕ: «До Нового года в 1907 г. работал в школе в Симбирской губернии, а после Нового года, в январе переехал в Уфимскую губернию. Зимой, когда был у Ивана Яковлевича, с просьбой о переводе, он ночевал в школе и тогда ему и его другу Ефимову Димитрию Ефимовичу Константин Васильевич прочитал отрывки из незаконченной поэмы «Нарспи». Его они упросили, зная, что он пишет поэму, и Константин Васильевич с трудом согласился, ссылаясь на то, что поэма еще не закончена...» (12)

Малалла И.Я.Яковлев мăшăрĕ Алексей ывăлĕпе кинĕ патне янă çыруури çак йĕркесене илсе пăхар (çырăва чăваш ла Г.Ф.Юмарт куçарнă): «Пирĕн шкулта хамăрăн сăвăç пур иккен. Калаçнă тăрăх мĕн тери чаплăскер тата! Пĕлтĕр пĕрремĕш класран кăларса янисенчен пĕри вăл – Константин Иванов текенскер, вăлах художник. Урăх ниçта та кайса кĕме çукран ăна хамăр шкултах хăварнă, ӳкерме ăста пирки ăна Пунктра тӳлевсĕр вĕренме вырнаçтарнă. Çав сăвăç иккен. Пĕррехинче Иван Яковлевич унăн çывăрмалли пĕчĕк пӳлĕмне пырса кĕнĕ, лешĕ темскер вуласа ларнă та Иван Яковлевича асăрхаман. Курсан хăраса ӳкнĕ, хучĕсене пытарнă, кайран çапах та кăтартнă. Чăвашла халап çырнă иккен, икĕ пин ытла сăвă йĕркиллĕскер, тап-таса чăваш чĕлхипе, çав тери лайăх, çав тери хитре, рифмисем те хӳхĕм. Аçу чăннипех хĕпĕртесе ӳкнĕ, пичетлесшĕн (13).

Çырăва 1908 çулхи кăрлачăн 26-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе нарăсăн 9-мĕшĕнче) çырни паллă. «Нарспире» мĕн пурĕ 2078 йĕрке пулнине шута илсен, çырура сăмах кĕнекере пичетленнĕ тулли вариант пирки пыни иккĕленӳсĕр. Эппин хайлава унăн авторĕ 1908 çулхи нарăсăн 9-мĕшĕччен çырса пĕтернĕ. Январьте вăл малтанхи варианта юсаса çĕнетни, уйрăм сыпăксем хушни пирки Н.В.Шупуççынни те çырнăччĕ (14).

К.ВИванов хайĕн поэмине, Н.В.Шупуççынни аса илнĕ тăрăх, варринчен çырма пуçланă: «Иван ĕмпӳ ĕçкĕ туни çинчен «Калашник» юрринче пуçланă пек, вăл та малтан «Туй» ятлă

пайне çырнăччĕ; кайран, пайăн-пайăн çырса, вăл «Нарспие» хальхи сăна кӳртсе пичетлеттерчĕ» (15).

М.В.Максимова шухăшĕпе «Нарспие» çырма унăн пиччĕшĕ «Калашник хуçа çинчен хунă юрра» куçаричченех шухăшласа хунă (16).

Хăшĕ-пĕри, 1906-1907 вĕренӳ çулĕнчи типтерте çырса хунă сăвва («Ешĕл вăрман айккипе») асра тытса, сăвăç «Нарспие» 1906 çултах çырма пуçăннă тесе шухăшлать (17). Пĕрремĕшĕнчен, сăвва чылай каярах çырса хунă тенĕччĕ. Иккĕмĕшĕнчен, уйрăм йĕркесем çырса хуни авторăн поэма çырас шухăш тытăвĕпе тӳр килнине пĕлтермест: вăл уйрăм ӳкерчĕклĕ сăвă йĕркисене хайлавăн юлашки вариантне йĕркелесе çитернĕ чухне кăна кĕртсе лартма пултарнă. Виççĕмĕшĕнчен, палăртса хунă ĕçсенче «Нарспи» çинчен асăнни çук (18).

«Нарспи» поэмăна çырма сăвăç Чĕмпĕре Н.В.Шупуççынни пырсан «Тимĕр тылăпа» «Икĕ хĕре» хайланă хыççăн пуçăннă. Ку вăл чӳкпе раштав уйăхĕсемпе тӳр килет.

Çапла вара К.В.Иванов «Нарспи» поэмăн малтанхи вариантне 1907 çулхи чӳкпе раштав уйăхĕсенче, юлашки вариантне нарăс пуçламăшĕнче çырнă тесе çирĕплетме май пур.

## Састашпа çавра аталанăвĕ

1906 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче сăвăç çапларах сăвă йĕркисем çырса хунă:

ПĂРТТА патне ПĂРТлаттарса,
ВАнюшка патне ВАшлаттарса,
СИмун патне СИктерсе.

Кунта чи малта йĕрке ăшĕнчи сасă килĕшĕвĕ тăрать, вăл халăх поэзийĕнче питех те анлă сарăлнă пулнă (19). Йĕркесен вĕçĕнчи сасă килĕшĕвĕ (састаш) чăваш çыруллă поэзине Европа традицийĕсемпе, уйрăмах куçарусем урлă, кĕрсе пынă. Çак мел ун чухне К.В.Ивановшăн ютă пулнă-ха.

1906 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕпе 25-мĕш кунĕсен хушшинче сăвăç «Крестьянская марсельеза» куçарать тенĕччĕ. Оригинала хĕреслĕ састашпа (АБАБ) хайланă пулсан, куçарура вăл пачах та палăрмасть. Ку вăхăтра вунултă çулхи сăвăçăн састашлас ăсталăх палăрайман-ха. Çав кунсенчех куçарнă «Дубинушка» юррăн тексчĕ те састаш тĕлĕшĕнчен оригинала çитеймест. Çапах та кунта АБАБ тытăмĕ састаш енне туртăнни хытах сисĕнет.

«Шуйттан чури» трагедин планне, унăн тытăмне поэт 1907 çулхи авăн уйăхĕнчен кая мар йĕркеленĕ терĕмĕр. Ăна вăл Чĕмпĕре çитиччен хайлама пултарнă. Çакна планра «икĕ юлташ», Чĕмпĕрте çырнисенче пиччĕшĕпе шăллĕ тĕп сăнарсем пулнинчен пĕлме пулать. Сăвăç çырнă майăн татах та улшăнусем кĕртнĕ.

Хайлава маларах çырнине унта састаш питех те сахал тĕл пулни те çирĕплетме пулăшать: АБАБ – 4 çавра, ААББ – 4 çавра. Ку вăл мĕн пур йĕркесен 14 процентне те çитеймест.

«Икĕ хĕр» хайлавра састаша çирĕп йĕркелени палăрмасть. Çав хушăрах пĕр евĕрлĕ сăмахсене темиçе хут каланипе пулакан састашсем (АБВБ, АББВ) курăнкалаççĕ.

«Тимĕр тылă» балладăна та састашласа хайламан. Хушăран кунта АБВВ, АБВБ, ААБВ йышши састашлă çаврасем тĕл пулкалаççĕ. Вĕсен хисепĕ питех те пĕчĕк.

1907 çулхи юпа-чӳк уйăхĕсенче К.В.Иванов оригиналлă хайлавĕсене ятарласа састашласа çырас тĕллев лартман. Çак пĕтĕмлетӳ унăн çав вăхăтра çырнă тексчĕсенчен тухса тăрать.

Малтанхи хайлавсен фонĕнче «Тăлăх арăм» баллада чылай уйрăларах тăрать. Унта мĕн пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен мăшăр ар састаш хуçаланать. Ку тĕлĕшрен вăл «Хальхи самана» сăвва питĕ çывăх (ААББ састашлă çаврасемпе). Н.В.Шупуççынни çак хайлава çырни пирки нимĕн те шарламасть. Ăна унăн авторĕ 1908 çулăн малтанхи уйăхĕсенче тин вĕçлеме пултарнă. Тен, çакă К.В.Ивановăн М.Ю.Лермонтовăн сăввисен питĕ васкавлăн куçарма тивнипе çыхăннă?

1907 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче хайланă «Выçă аптранăскерсем» сăввăн састашĕсене пăхса тухар-ха. Кунта маларах çырнă 8 йĕрке АБВВ тытăмлă састашлă. Дата лартнă тĕп пайĕн çаврисем пурте АБАБ састашлă. Эппин поэт 1907 çул вĕçленнĕ тĕле тĕрĕс састашлă çаврасем (чи малтан АБАБ тытăмлисем) йĕркелеме хăнăхса çитнĕ темелле. Çак пĕтĕмлетӳ «Нарспи» поэмăн сыпăкĕсене уйрăмшар пăхса тухнă чухне питех те кирлĕ пулать. Халлĕхе ăна асра тытса юлăпăр.

М.Ю.Лермонтовăн хайлавĕсене К.В.Иванов 1907 çулхи хура кĕркуннерен пуçласа (20) 1908 çулхи кăрлаччен куçарма пултарнă (21). Н.В.Шупуççынни каланă тăрăх, К.В.Иванов чи малтан «Калашник юррине» куçарать. Ку хайлавра састаш йĕркеленĕвĕ пачах та çук.

Поэт куçарнă 7 сăвăри састашсем çапларах тытăмпа тĕл

пулаççĕ:

1. «Пирĕшти»: АБВАГВ – 1 çавра; АБВГБВ) – 2 çавра; АБВАБВ – 1 çавра.

2. «Парăс»: АБАБ – 3 çавра.

3. «Хумсемпе çынсем»: ААБВВГ – 1 çавра; ААБВВБ – 1 çавра.

4. «Чул ту»: АБАБ – 2 çавра.

5. «Тусен тăррисем»: АБАБ – 2 çавра.

6. «Пурнăç курки»: АБАБ – 1 çавра; ААБВ – 1 çавра; АБВГ – 1 çавра.

7. «Тĕрме çынни»: ААБВ – 1 çавра; АБВВ – 1 çавра; ААББ – 1 çавра; АБАБ – 1 çавра.

К.В.Ивановăн састаш йĕркелес ăсталăхне хăй çырнă хайлавĕсем тăрăх пăхса тухни çапла калама май парать: поэт çав сăвăсене 1907 çул вĕçнеллерех тата 1908 çулăн малтанхи уйăхĕсенче куçарнă.

Малалла çавра йĕркеленĕвĕн улшăнăвне хайлавсерен пăхса тухăпăр.

«Шуйттан чуринче» 20-шер йĕркеллĕ йӳнсем (4 йĕркеллĕ çаврасене пĕрлештерекен çыхă, вăл сыпăкран пĕчĕкрех пулать) мĕн пурĕ 4, 24-шар, 19-шар тата 18-шар йĕркеллисем 2-шер йӳн.

«Икĕ хĕр» хайлавра 16-шар йĕркеллĕ 2 йӳн тĕл пулать.

«Тимĕр тылăра» çапларах йӳнсем вырнаçнă (скобкăсенчи йӳнсем сыпăксене йĕркелеççĕ): (16+16) + (26+22) + (22+22) + (24+20+20) + (8+8+8+8) + (8+8+8+8+8) + (12+10+12+12).

«Тăлăх арăм» хайлаври йӳнсемпе сыпăксем: (18+16) + (40+40+36).

«Выçă аптранăскерсем» сăвăра çапларах йӳнсем вырнаçнă: (8+12+16+12+10).

Хайлавсен çавра-йӳн тытăмĕсене пăхса тухнă хыççăн çапла пĕтĕмлетӳ тума пулать.

1. Çавра йĕркеленĕвĕ виçĕ шайра пулса иртет: çавра, йӳн тата сыпăк шайĕсенче.

2. К.В.Иванов тĕпрен 4 йĕркеллĕ çаврана тĕпе хурса çырнă.

3. Ытларах тĕл пулакан йӳнсем: 20-, 18-, 19-, 24-, 16-, 22-шер йĕркеллисем.

4. 1907 çул вĕçĕччен çырнă хайлавсенчи йӳнсен калăпăшĕ пĕр хайлавра тĕрлĕрен тĕл пулать. Ку вăл поэтăн 20-шер йĕркеллĕ йӳн шăрçалас ăсталăхĕ «Нарспире» çирĕпленсе çитни

çинчен пĕлтерет.

Малалла «Нарспи» хайлаври сыпăксенче еплерех састаш тĕсĕсем тĕл пулнине пăхса тухăпăр (ытларах тĕл пулаканнисене маларах лартнă):

1. «Силпи ялĕнче»: АБАБ, АБВБ, ААББ. 2. «Сарă хĕр»: АБВБ, АБАБ. 3. «Çимĕк каçĕ»: АБВБ, АБАБ. 4. «Туй»: АБВБ, АБАБ. 5. «Юмăç патĕнче»: АБВБ, АБАБ. 6. «Тарни»: АБВБ. 7. «Икĕ туй»: АБВБ. 8. «Хушăлкара»: АБВБ. 9. «Çимĕк иртсен»: АБВБ, АБАБ. 10. «Нарспи ĕçĕ»: АБВБ, АБАБ. 11. «Силпире»: АБВБ. 12. «Вăрманта»: АБАБ, АБВБ. 13. «Атте-анне»: АБВБ. 14. «Тăвата виле»: АБВБ.

К.В.Иванов АБАБ тытăмлă састашпа 1907 çул вĕçнелле кăна тухăçлă усă курнине шута илсен, çав састаш йышлă тĕл пулакан сыпăксене вăл кăрлач-нарăс уйăхĕсенче хушса çырнă тесе çирĕппĕнех калама пулать. Кунта чи малтан «Силпи ялĕнче» тата «Вăрманта» сыпăксене асăнмалла. Вĕсене кайран хушса çырни иккĕленӳсĕр.

«Нарспири» йӳнсемпе сыпăксенчи йĕркесен хисепне пăхса тухни ӳкерчĕке татах та уçăмлатать.

Юлашки вариантри сыпăксен тытăмĕ çапларах йĕркеленнĕ: 1. «Силпи ялĕнче» – 160 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 8 йӳн). 2. «Сарă хĕр» – 160 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 8 йӳн). 3. «Çимĕк каçĕ» – 240 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 12 йӳн). 4. «Туй» – 104 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 5 йӳн тата 4 йĕркеллĕ тепĕр тулли мар йӳн). 5. «Юмăç патĕнче» – 112 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 4 йӳн тата 16-шар йĕркеллĕ 2 йӳн). 6. «Тарни» – 138 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 6 йӳн тата 18 йĕркеллĕ тепĕр йӳн). 7. «Икĕ туй» – 140 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 7 йӳн). 8. «Хушăлкара» – 152 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 6 йӳн тата 16 йĕркеллĕ 2 йӳн). 9. «Çимĕк иртсен» – 116 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 5 йӳн тата 16 йĕркеллĕ тепĕр йӳн). 10. «Нарспи ĕçĕ» – 240 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 12 йӳн). 11. «Силпире» – 60 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 3 йӳн). 12. «Вăрманта» – 116 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 5 йӳн тата 16 йĕркеллĕ пĕр йӳн). 13. «Атте-анне» – 200 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 7 йӳн тата йӳнсене пайламан 60 йĕрке). 14. «Тăвата виле» – 140 йĕрке (20-шер йĕркеллĕ 7 йӳн).

Састаш тĕсĕсен тишкерĕвĕпе килĕшӳллĕн, 160 йĕркеллĕ сыпăксене поэт кайран хушса çырнă темелле. Малтанхи сыпăксенче, автор шухăшланă тăрăх, 140 йĕркерен (20-шер йĕркеллĕ 7 йӳнтен) ытла мар пулмалла пулнă. «Çимĕк каçĕ» сыпăка

поэт кайран пысăклатса янă темелле. Тен, унта «Туй» сыпăкри уйрăм йӳнсем те кĕрсе кайнă. Çапла вара малтанхи варинтра 4 – 7-мĕш, 9-мĕш, 11-мĕш та 14-мĕш сыпăксем пулни иккĕленӳсĕр. «Силпире» сыпăкăн пĕр пайĕ, çĕнĕ сыпăк («Вăрманта») хушăннăран «Атте-анне» сыпăка куçать. Çак улшăнусене пула сыпăксенче йĕркесен хисепĕ малтан палăртнинчен (20-шер йĕркеллĕ 7 йӳнлĕ сыпăк) урăхларах пулса тухать (22).

## Сюжет архитектоники

Литературăра ытларах аталануллă сюжетлă хайлавсем тĕл пулаççĕ. Вĕсенче конфликт çуралса, хĕрсе пырать те вĕçĕнче сивĕнет. Кунта пурнăçри хирĕçӳ хайлаври персонажсенчен, унта пулса иртекен ĕç-пуçран килет. Вăхăт çакăн йышши хайлавсенче сыпăкран сыпăка вĕçленес еннелле сулăнса, туртăнса пырать.

Аталануллă сюжетра яланах икĕ пай курма пулать: конфликт тĕвĕленсе аталаннă (хĕрсе пынă) тата конфликт сивĕннĕ пайсем. Иккĕшĕн хушшинче *мехел* (кульминаци, хĕрсе çитни) тăрать. Çак икĕ пайăн калăпăшĕ пĕр пек мар: малтанхи иккĕмĕшĕнчен вăрăмрах (пысăкрах). Мĕншĕн çавăн пек пулнине «ылтăн касăк» («золотое сечение») принципĕпе ăнлантарса пама май пур (23).

Ылтăн касăк пайĕсем çапларах пропорциллĕ пулмалла: 0,618 тата 0,382. Çавăн пек архитектоникăллă хайлав вулаканӑн чунĕнче килĕшӳ, илем туйăмĕсем вăранаççĕ. «При воздействии на человека тех видов искусств, которые развиваются во времени, – тесе çырать бурят тĕпчевçи С.Ш.Чагдуров, – их восприятие постоянно находится в напряжении именно потому, что оно предвосхищает кульминацию, то есть точку золотого сечения. Знание этого принципа помогает художнику фиксировать и удерживать внимание зрителей, слушателей, читателей на постоянном напряжении художественного события» (24).

Кульминаци хыççăн ĕç-пуç хирĕçĕвĕ сӳрĕкленсе те вăйсăрланса пымалла. Ылтăн касăк хыççăн малтанхи ĕç-пуçăн пĕтĕмлетĕвĕ, результачĕ пулмалла. Поэзире вăл 0,382 процентран кĕскерех те пулать: ун пек чухне çав текст тăсăлмалли вăхăта тăхтав (пауза) йышăнать (25).

Çак ылтăн касăк принципĕ пуç миминчи нейрон атмипе (нейронные сети), унти электричество хумĕсемпе тачă çыхăннă

иккен (26).

К.В.Иванов хайлавĕсен сюжечĕсен архитектоникине ку таранччен никам та пăхса тухманччĕ-ха. Çакă вăл чи малтан мехел (кульминаци) вырăнне палăртма, малтанхи архитектоникăна кайранхи сыпăксен улшăнăвĕ еплерех витĕм кӳнине пĕлме кирлĕ. Çапла майпа эпир çыравçăн вăл е ку хайлавĕн пултарулăхлă историне лайăхрах курма пултарăпăр.

Поэтăн 1907 çулхи юпа-чӳк уйăхĕсен тĕлне сюжет йĕркелес ăсталăхĕ еплерех шайра пулнине пĕлме пире «Тимĕр тылă» баллада тексчĕ пулăшĕ.

Хайлавра мĕн пурĕ 312 йĕрке. Унти кульминаци, эпĕ тĕрĕсех ăнланатăп пулсан, çак йĕркесенче хĕрсе çитет:

– Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Уттар хăвăн çулупа!
«Сыв пул, эппин, пиччеçĕм!»
Йĕре-йĕре сарă кин
Аслăк çине улăхрĕ,
Йĕре-йĕре çавăнта
Улăм ăшне пытанчĕ.

Çак 8 йĕркенваррине (214-215 йĕркесем) илĕпĕр те пропорци шутласа пăхăпăр: ку вăл çĕр утăмлă çулăн 68-мĕш утăмĕ. Эппин, çак хайлав пайĕсен пропорцийĕ пĕрлĕхĕн 0,68 тата 0,32 процентчĕсемпе танлашать. Ку вăл К.В.Иванов туйнă, уншăн çывăх архитектоника. Унăн хайлавĕнчи ылтăн касăк вырăнĕ кăштах каярах (0,06 чухлĕ) вырнаçнă. Паллă ĕнтĕ, çакă илемпе гармони туйăмне вăратма пачах та чăрмантармасть, çав хушăрах поэтăн хăй евĕрлĕхне аванах палăртать.

Халĕ «Нарспи» архитектоникине пăхса тухар. Унти кульминацине «Нарспи ĕçĕ» сыпăкра шырамалли иккĕленӳсĕр. Сыпăкăн 7-мĕш йӳнĕнче (121-140-мĕш йĕркесем) ĕç-пуç хĕрсе çитет: кунта Тăхтаман наркăмăшлă яшка çинине ӳкерсе кăтартнă. Вăтамран 130-мĕш йĕркене («Кăтартать вăл чăмăрне») илĕпĕр те çавăнта ылтăн касăк тесе шутлăпăр. Ку вăл хайлаври 1452-мĕш йĕрке. Малтан пуçласа çак йĕркене çитиччехи вăрăмĕш пĕр пĕтĕмĕш калăпăшĕн (2078 йĕркеллĕ пĕрлĕхĕн) 0,68 процентчĕпе танлашать! Эппин, «Нарспи» кульминацийĕ «Тимĕр тылăри» ылтăн касăк вырăнĕпе пĕтĕмпех тӳр килет. Çакă вăл, тепĕр хут калатăп, К.В.Ивановăн хайлав архитектоникине йĕркеленин хăй евĕрлĕхĕ.

Кульминаци вырăнне палăртни пире çыравçăн хăй евĕрлĕх-

не пĕлме кăна мар, хайлавăн пултарулăхлă историне сăнама-асăрхама та кирлĕ. Поэт «Нарспие» темиçе тапхăр çырни, ăна вăл варринчи сыпăксенчен (Н.В.Шупуççынни «Туй» сыпăкран çырма пуçланă тесе çирĕплетет) пуçлани иккĕленӳсĕр. Çакна састашри тата çавра йĕркеленĕвĕнчи уйрăмлăхсем те ĕнентерме пулăшаççĕ. Кульминаци уйăрса тăракан икĕ пайăн малтанхи пайĕнчи «Силпи ялĕнче» тата «Сарă хĕр» сыпăксем, иккĕмĕш пайĕнчи «Вăрманта» тата «Атте-анне» сыпăксем (вĕсенчи 4 йӳн малтан «Силпире» сыпăка кĕнĕ) – малтанхи варианта 1908 çулхи кăрлач-нарăсра çĕнетсе-юсаса çитернĕ май хушса хунăскерсем. Икĕ пайне те пĕрешкелтерех хушса çырнăран ылтăн касăк вырăнĕ Тăхтамана наркăмăшлă яшка çитернĕ тĕлтех юлнă. Çав хушăрах сюжет çивĕчленсе хивреленнĕ, сăнарсен хирĕç тăрăвĕ вăйланнă. Çакăн пирки каярах тĕплĕнрех калаçăпăр-ха. Халĕ пире илемлĕ идея сюжета йĕркелеме, ăна улăштарма пултарнине сăнани кирлĕ.

## Илемлĕ идейăпа сюжет

К.В.Ивановран вăл «Нарспи» сюжетне ăçтан тупни пирки ыйтсан, сăвăç çакă ниме те пĕлтермест тесе хуравланă иккен. Тĕрĕс хурав: поэт сюжета хăйĕн пурнăç позицийĕ, концепцийĕ, тĕнче курăмĕ, ăнланăвĕ, илемлĕх ăнĕ витĕр «аласа» кăларать. Çавăнпа та хайлава мĕнле пур, çавăн пек пăхса хакламалла. К.В.Иванов шайĕнчи çыравçă юмаха сăвăланипех çырлахма пултарайман (27). Ку пĕтĕмпех тĕрĕс.

Çапах та тĕпчевçĕшĕн тепĕр тĕрĕслĕх те пур. Çыравçăн пурнăç концепцине тĕрĕс палăртма, автор позицине пĕлме çăмăлах мар. Кунта хайлава пур енчен те пăхса тухни, тĕпчевçĕн субъектлăхĕнчен хăтăлма пултарни питех те кирлĕ. «Нарспи» хайлава тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен хак панине аса илер-ха: мĕн кăна каламан-ши ун çинчен юлашки 80 çулта!

Ман шутпа, çак çитменлĕхсем (чи малтан тĕпчевçĕн субъектлăхĕ, вăл хăйĕн курăмне хайлав авторĕн тесе шухăшлани) çыракансен тĕпчев инструментарийĕ чухăн пулнăран, вĕсен ĕçĕсем наука статйинчен ытларах эссене çывăхран килеççĕ. Унтан та кунтан тăпăлтарса илнĕ йĕркесене цитатăласа çырни, хайлава пĕр пĕтĕмĕшле ытамласа курма пĕлменни – çакă поэтăмăр пултарулăхне тĕпчекенсен тарăна кайнă чирĕ (28). Пĕри тепринчен иртсе каяс ĕмĕтлĕ, çавна май çĕклемне пысăкран-пысăк

йӑтма хӑтланаççӗ. Малта К.В.Иванов мар, тӗпчевçӗ хӑй тӑрать. Вӑл юлашки çулсенче мӗнле кӗнекесем вулани, кам çырнисене мала лартни витӗр курӑнать. Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ, мода текенни литература тӗпчевçисен хушшинче те лайӑх палӑрать.

Мӗншӗн палӑртсах çыртӑм-ха çак йӗркесене? Пирӗн классикӑлла литература кӑна мар, классикӑлла литературоведени те пур теспӗн. Çав тӗпчев шкулӗ шӑпах та классикӑна тарӑннӑн тӗпченӗ майӑн çирӗпленнӗ. Эпӗ кунта вырӑс классикине нумай томсемпе пичетлесе кӑларнӑ май ирттернӗ тӗпчевсем пирки калатӑп.

Сӑмах хайлавсен пултарулӑхлӑ историне тӗпчес ыйтусем патне илсе çитерчӗ. Çыравçӑ мӗн калас тенине унӑн ал çырӑвӗсемпе, хайлав варианчӗсемпе ӗçлекен ытларах та тӗрӗсрех пӗлме пултарать. Кунта тӗпчевçӗ субъектлӑхӗ мар, ал çырури факт малта пырать, ӗнентермелли сӑлтав шутланать. Хӑйӗн çинчен хайлав авторӗ хӑех каласа пырать ун йышши тӗпчевре.

Илемлӗ идея чи малтан хайлав авторӗн курӑмӗпе, унӑн ӑнӗпе, вӑл пурнӑçри пулӑмсене хак панипе çыхӑннӑ. Çыравçӑн ӑн айӗнчине (подсознательное) мала лартса тӗпчени, В.Е.Хализев шухӑшӗпе, хайлава ӑнланма пулӑшмасть. «Творческая воля, сознательные намерения, духовная активность художника обходятся молчанием, недооцениваются, либо игнорируются по существу» – тесе çырать тӗпчевçӗ (29). Вӑл, чех филологӗ Я.Мукоржовский каланипе килӗшсе, çапла пӗтӗмлетет: «основной фактор впечатлений, вызываемого художественным произведением, – это авторская *преднамеренность* (курсив автора – *В.Р.*), что именно она соединяет воедино отдельные части произведения и придает смысл сотворенному» (30).

Автор шухӑшне, унӑн кӑмӑлне тӗрӗс палӑртма, каларӑм ӗнтӗ, хайлавӑн пултарулӑхлӑ историне туллин тӗпчени пулӑшать. Кунта тӗпчевçӗн субъектлӑхне минимума çитиччен чакарма май килет.

Илемлӗ идейӑна тарӑннӑн ӑнланма автор концепцийӗпе пурнӑç çине пӑхни пулӑшать тенӗччӗ. Юлашкине пӗлме авторӑн хавхине (пафосне), унӑн хайлаври сӑнарне палӑртни питех те кирлӗ.

Автор конрцепцийӗ еплерех пулнинчен сюжет аталанӑвӗ хӑш йӗрпе (çулпа) каясси килет. Эппин, кунта пӗрремӗшӗ иккӗмӗшне пӑхӑнтарса çурасӑнтарать. Енчен те тӗпчевçӗ автор малтан сюжет никӗсне мӗнле материала (пурнӑçра чӑн пулнине,

халăх сăмахлăхĕнче анлă саралнă сюжета тата ыт.те.) хунине пĕлет пулсассăн, уншăн авторăн пултарулăхри кăмăлĕпе шухăшне пĕлесси йывăр ĕçех мар.

## «Шуйттан чурипе» «Тимĕр тылă» çăл куçĕсем

«Шуйттан чури» трагедин планĕ тата унăн хăш-пĕр сыпăкĕсем «Тимĕр тылăпа» «Икĕ хĕре» çырма палăртичченех çуралнă тенĕччĕ маларах. Ахăртнех, планне поэт Чĕмпĕре çитиччен (1907 çулхи авăн уйăхĕччен) йĕркеленĕ. Пĕрремĕш пайне вара сăвăç авăн уйăхĕнче хайланă пек пулса тухать. Автор хăй хайлав жанрне планра «Переделка из народного рассказа» тесе палăртнă. Эппин, хайлав сюжетне вăл халăхра çӳрекен халапран илнĕ теме май пур.

Планра вăрçă хирĕнчи икĕ чăваш тăвансем мар, юлташсем кăна иккен. Шуйттана тухнă чăваш кайран тăван килне таврăнса арăмĕпе ачисене вĕлерет. Кунта чи малтан мулпа чун хирĕçĕвĕ палăрать. çынна укçашăн вĕлерекен хăйĕн чунне шуйттана сутать.

Халăх халапĕсенче çын хăйĕншĕн хаклине (тин çеç çуралнă ачине, чунне) шуйттана пани, мулпа улăштарни çинчен каланисем йышлă тĕл пулаççĕ. Çак проблемăна хускатасшăн пулнă та К.В.Иванов.

«Шуйттан чурин» пĕрремĕш пайĕнче авторăн шухăшĕ тарăнланса пыни курăнать. Кунта мулпа чун хирĕçĕвĕ мулпа тăванлăх (пĕр юнлă çынсем) хирĕçĕвне куçать. Мул ют çынна кăна мар, пĕр варта выртнă тăвана та вĕлерттерме пултарать иккен.

Авторăн çак концепцийĕ, философилле ăнлавĕ 1907 çулхи юпа уйăхĕ тĕлне çырĕпленсе çитнĕ тесе калама сăлтавсем çителĕклех.

«Икĕ хĕрпе» «Тимĕр тылă» хайлавсене автор юпа-чӳк уйăхĕсенче çырнă тенĕччĕ. Ашшĕне тӳррĕн каласа юрайман хĕрĕпе пăянăшне хăйĕн кăмăлĕпе минретекен кинĕ хушшинчи хирĕçӳ вăл «Шуйттан чуринче» хускатнă проблемăна тарăнлатса пыниех.

«Икĕ хĕрти» хирĕçӳ В.Шекспирăн «Король Лир» трагедийĕнчех пур. Чăваш литературинче çав ашшĕпе хĕрĕ хушшинчи хирĕçĕве Н.Кедров хăйĕн «Аçăна-аннĕне хисепле, хăвна та аван

пулĕ» повеçĕнче (1899) лайăх кăтартнă. Хĕрĕнкĕ ашшĕ хăйĕн виçĕ хĕрĕнчен хайне хăшĕ ытларах юратнине ыйтса пĕлесшĕн пулать. Юмах мелĕпе усă курса, автор малтанхи икĕ хĕрне ашшĕ умĕнче йăпăлтатнă пек кăтартать. Кĕçĕн хĕрĕ (Лисахви) вара, ашшĕн мулне хĕрĕнменскер, çапла калать: «Чăн калатăп, атте! Эпĕ тутлă сăмахсем каласа йăпăлтатса çӳреме ăста мар. Чĕре мĕн калама хушать, çавна анчах калама пултаратăп. Юри улталаса çынна çемçете пĕлместĕп» (31).

«Икĕ хĕрте» те ашшĕ хĕрĕнчен суя сăмах илтсе чунне çемçетесшĕн. Юлашкинчен вăл, хăй кĕтнине илтейменскер, çапла калать: «Санра пархатар сахал, // Эсĕ манăн хĕрĕм мар!». Вулавçă пусĕнче çийĕнчех «Нарспири» «Атте-анне» сыпăкри сцена курăнать. Унта та хăйсен тăван хĕрне ылханни пур-çке!

«Тимĕр тылăра» та пăянăшĕпе кĕçĕн кинĕ хушшинчи хирĕçӳ тăрать. Сюжет çăлкуçне пĕлни пире хайлава çырнă чухне кĕртнĕ улшăнусене пĕлме пулăшать. Пĕр килти çынсен хирĕçĕвĕ мĕнпе çыхăннине те лайăххрах курма май килĕ.

К.В.Иванов Чĕмпĕре 1907 çулхи çурла уйĕхĕн вĕçĕнче çитсен, унта вăл шкул библиотекинче пурăнни паллă. Çыракан çамрăк çын библиотекăри кĕнекесемпе тата ал çырусемпе паллашмасăр тăма пултарайманах ĕнтĕ. Уйрăмах вăл Г.Т.Тимофеевăн «Тăхăрьял» ал çырăвне тĕплĕн вуланă. Çакна унти юрă йĕркисем «Нарспире» тĕл пулнипе те ĕнентерме пулать (32).

«Тимĕр тылă» сюжетне поэт «Тăхăрьял» ал çырăвĕнче пулнă «Лăпăр» ятлă юмахран илнĕ. Çапла çирĕплетсех калама хайлавра тĕл пулакан ял ячĕ (Акăр) пулăшать. Чăн пурнăçра ун йышши ял çук. Сăвăç çав сăмаха Г.Т.Тимофеев кĕнекинче шыраса тупнă. Унта çапларах тупмалли юмах пур: Акар йытти ашса пырать, аякки витĕр хĕвел пăхать (çара çуна).

Халĕ «Тимĕр тылăри» çак йĕркесене аса илер:

Акăр çулĕ тап-такăр,
Уйăх çути çап-çутă.

Юмахра ама çури хăйĕн кинне çапла калать: «Уйăх çути çап-çутă, çатма çулĕ тап-такăр; пашалу пĕçер те хăнана кай».

Виçĕ текстĕнче те çулпа пыни тата çӳлтен хĕвел (уйăх) çутатни çинчен каланă. Тупмалли юмахри паллах мар Акар сăмахран (33) К.В.Иванов Акăр ятлă ял ячĕ туса хунă. Мĕншĕн шăпах çав ята илни пирки халĕ пусăмăрсене ватмăпăр. Çакă (хайлаври çын тата ял ячĕсен функцине палăртасси) хăй уйрăм тĕпчеве тивĕç ыйту пулнине кăна палăртса хăварăп

(34).

«Лăпăр» ятлă юмах çапларах пуçланать: «Карчăкпа старик пурăнаççĕ, тет. Кусенĕн пĕр ывăлĕ пур, тет. Ывăлийĕн ама çурри пулнă, тет. Ама çурри лăпăр, тет, ку ывăлне авлантарнă, тет. Ачи те пулнă, тет. Пĕрре кĕр кунне ку ама çурри, ачанăн амăшĕ, тула тухнă тет те, уйăх çути çап-çутă, тет; пӳрте кĕрсен кинне калать, тет: «Уйăх çути çап-çутă, çатма çулĕ тап-такăр; пашалу пĕçер те хăнана кай», тесе калать, тет.» (35).

К.В.Иванов çак юмах пуçламăшне чылаях улăштарать. Пĕрремĕшĕнчен, «Тимĕр тылăра» ытлашши персонажсене (старик, ывăлĕ, ачи) кĕртмен, çав хушăрах тепĕр кин сăнарне хушнă. Мĕн тума кирлĕ пулнă-ши çакă? Вуласа пăхар-ха тепĕр хут:

Аслă кинĕ мĕн ятли
Пире халĕ кирлĕ мар:
Хăй(не) кĕвĕллĕ арăмччĕ,
Тӳрриперех каласан,
Хитрех те мар мухтама,
Начар та мар хурлама.

Кĕçĕн кинĕн (Чĕкеçĕн) хитрелĕхне, вăл «ытарма çук аван» пулнине, унăн тути те «чуп тума çӳхе» пулнине кăтартма кирлĕ пулнă иккен çак хушма сăнар. Хайхи авторăн кăмăлĕ ăçталла туртăнни те палăрчĕ: вăл юмахри пек ырăпа усала кăна мар, çамрăкпа (хитрепе) ватта (сукăр «ăçтиçука») хирĕçлетсе кăтартас тĕллев тытнă.

«Тимĕр тылăри» кĕçĕн кин юмахри пек ачаллă мар, упăшки те çук унăн. Шăпах «чуп тумалли» çулсенчи çамрăк арăм вăл. Çакă килĕшмен те ĕнтĕ сукăр тухатмăша, çавăнпа вăл юратман хăйĕн «çын савăнса тăмалли» кинне.

Çак шухăш патне эпир автор юмаха еплерех улăштарнине тишкернĕ май çитетпĕр. Кунта тепĕр улăштару пирки калани те кирлĕ. Юмаха вăпăр (лăпăр) карчăк кинне вĕлерме малтанах шутласа хурать, ăна хăнана юри çĕрле кăларса ярать. Балладăра кинĕ карчăка хытах çилентерет, ăна йӳтетсе çитерет. Карчăкĕн пуçĕнче малтан кинне вĕлерес шухăш пулманнине çак йĕркесенчен пĕлме пулать:

– Ай, çĕр çăтманă пуçна!
Ырра мар-тăр ку кинĕм.

Юмахри ама çури кинĕпе мăнукне хăй çисе ярать. Карчăк

вара кинĕ йӳтетнĕрен кăтăрать. Каярах, пĕлетпĕр ĕнтĕ, тимĕр тылă та кăтăрса каять. Сăлтавне карчăк ăна кине хăвалаттарса та таврăнма чĕнсе йăлăхтарнинче курмалла.

К.В.Иванов, юмаха улăштарса, «усала тĕкĕнме (вăратма) юрамасть» текен шухăша палăртасшăн пулнă. Çакна тĕпчевçĕсем тĕрĕсех асăрханă.

Çапах та кунта автор çак шухăшран тарăнрах каласшăн пулнă теес килет. Сарă кин хăйĕн пăянăшне мĕншĕн йӳтетнине аса илер-ха: вăл тăван ялне, тăванĕсем патне çитесшĕн çунать. Вĕсене курас килнĕренех вăл тӳсĕмне çухатать – çула усал-тĕсел вăраннă вăхăтра (çĕрле) тухать. Кунта автор сарă кине айăплас тенине курмастăп эпĕ.

Кин çĕрле çула тухнă мотив юмахра та пур, ăна сăвăç çаплипех хăварнă. «Вăратнă усал кăтăрма пултарать» текен шухăш автора карчăкпа тимĕр тылă хăтланăвĕсене тӳрре кăларма кирлĕ пулнă. Кин хăтланăвне поэт тăванлăх туйăмĕ вăйлă пулнипе, вăл тунсăхласа çитнипе сăлтавлать.

Хайлавăн тĕп шухăшне ăнланса илме юмахăн вĕçне пĕлни пулăшать. Унта пĕрре вилнĕ кинĕ тепĕр хут чĕрĕлсе тăрать. Пăянăшне вара, усал вупăра, «сĕлĕ пĕрчи пек тураса тухрĕç, тет те, халĕ те пулин аван пурăнаççĕ, тет».

Балладăра кинĕ те, карчăкĕ те вилеççĕ. Мĕн пурĕ кунта сукăр та ватă карчăк хăйĕн чипертен те чипер çамрăк кинне юратманнипе çыхăннă. Юратманлăхĕ вара кинĕн хитрелĕхĕпе çамрăклăхĕнчен килнĕ. Ахальтен мар автор юмаха чи малтан кин хитрелĕхне кăтартас тĕллевпе улăштарать.

Айăплă-ши Чĕкеç хăй хитре тата çамрăк пулнишĕн? Паллах, айăплă мар. Ку вăл çут çанталăк панă, турă çырнă ырăлăх. Хитрелĕхпе савăнмалла, «çӳхе тутана чуп тумалла», тăванпа тăванăн та пĕрле хутшăнса та килĕштерсе пурăнмалла.

Çук вĕт, илеме курайман çынсем те пур çĕр çинче (вĕсене шуйттан çапла тăвать иккен). Вĕсем сукăр (поэт юмахри вупăр карчăка ятарласа сукăрлатнă факт эпĕ калани те авторăн шухăшĕ пулнине ĕнентерет), вĕсене пула илем синкерлĕх патне çитсе тухать. Анчах тавăру саманчĕ те çитетех: сукăра хăй вăратнă усалах тĕп тăвать, хăйне те пĕтерет.

Çут çанталăк йĕркине хирĕç кайни ырри патне илсе çитермест. Çак шухăша «Шуйттан чуринче» те, «Икĕ хĕрпе» «Тимĕр тылăра» та асăрхатпăр. Çав йĕрке (тĕрĕслĕх) малтанхи хайлавра тăванлăха тĕп тунăран, иккĕмĕшĕнче суя çулĕ çине тăнăран,

юлашкинче илеме курайманран арканать. Чĕкеç хăйĕн хитришĕн пĕтет, «Тăлăх арăмри» кĕçĕн кин леш тĕнчене хăйĕн юратнă мăшăрĕ вилнĕрен каять. Хитрелĕхпе юрату – çут çанталăк ырлăхĕ. Хитрелĕхе курайман сукăрсемпе юратнă çынсене пĕтерекен вăрçă-харçă тăнăçлăха аркатаççĕ, синкерлĕх патне илсе çитереççĕ.

Çапларах шухăшсем çуратать асăннă хайлавсен пултарулăхлă историйĕсене пăхса тухни.

## «Нарспи»: хайлав çăл куçĕ

Хайлава тишкернĕ май тĕпчевçĕ чылай чухне ăна çырнă вăхăт паллисене шырать, вăсене тупма тăрăшать. «Нарспие» те çав меллпех тишкереççĕ, XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи пурнăç паллисене шыраççĕ. Пысăк пĕлтерĕшлĕ хайлавăн историйĕ нихăçан та ăна çырнă вăхăтран пуçланмасть. Çакăн пирки М.М.Бахтин акă мĕн калать: «Великие произведения литературы подготовляются веками, в эпоху же их создания снимаются только зрелые плоды длительного и сложного процесса созревания» (36).

Хайлава ăна çырнă е авторĕ пурăннă вăхăтпа кăна çыхăнтарса ăнланма тăрăшни унăн тарăн варăннă илемлĕ идейине пĕлме май памасть. Çакăн пек чухне тĕпчевçĕн хайлава, М.М.Бахтин калашле, *Пысăк вăхăт* куçĕпе пăхса ăнлантарни кирлĕ.

Пысăк вăхăт паллисем культурăра тĕрлĕ енлĕн курăнаççĕ. Калăпăр, тĕрĕ историйĕ çи-пуçăн тĕрлĕ элеменчĕсенче тата сарăлнă ареалĕнче (этнотерриторире) ўкерĕннĕ. Сăмахлă культурăн стилĕсемпе мотивĕсен историйĕ фольклор жанрĕсенче упранса юлнă. Сюжетсен историне, поэтикăна та ватă е çамрăк жанрсене уйăрса пăхнă май пĕлме пулать (37).

Халăх прозинчи (юмахсенчи) персонажсем хăйсен ырăлăхĕпе е усаллăхĕпе палăраççĕ. Вĕсенче çут çанталăк тăнăçлăхĕ яланах çĕнтерет. Усал персонажсем вилеççĕ е ыррисене пăхăнаççĕ («Лăпăр» юмаха аса илер-ха).

Чăваш халăх юррисен йышĕнче сюжетлă текстсем питех йышлă мар. Çапах та унăн пеккисем пур, вĕсем чи малтан истори темипе хайланнă. Çавăн йышши текстсенчен пĕрне С.Максимов композитор 1927-1928 çулсенче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Упакасси ялĕнче çырса илнĕ. Умĕнче прозăлла халап пайĕ пур: «Ку юрра пĕр ватă карчăк юрлатчĕ, тет. Карчăксем

каланă тăрăх, ĕлĕк, Хусана илнĕ чух, патша майри мечет тăррине хăпарнă, тет те, ăмăрт кайăк пулса вĕçсе кайнă, тет». Малалла виçĕ çавраллă юрă тексчĕ каять (38).

Хусан ханĕн Сафа-Гирлейĕн Сююмпике ятлă арăмĕн упăшки вилсен хăйĕн кăкăр ачипе тăрса юлать. Халапсем тăрăх, вăл хăйне вăйпа качча илекен Шăхаль хана хирĕç тăрса, Хусан кремĕлĕнчи пĕр башня çинчен сиксе вилет. Акăш пулса вĕçсе кайнă вариант та пур. «Сююмпике пейĕчĕ» ятлă тутарла пейĕтре ăна Мускава вăйпа илсе кайни çинчен каланă. «Мана сутнă мăрсасенĕн пуçĕ çĕре хурăннă тесе юрлать вăл, пур çыннăн та юлашкинчен тăпра айĕнче пулмаллишĕн хурланать (39).

Тутар халăхĕн тепĕр пейĕтĕнче пĕр çын хăйĕн Хамида ятлă хĕрне вырăс офицерне вăйпа качча пани çинчен каланă. Хĕр шыва сиксе вилес умĕн çапла юрланă тет:

Юнлă та пурçăн явлăкăм офицер мăйĕнче çутă пулчĕ,
Хăмăшлăхри яштак пĕвĕм офицер хивĕнче хур пулчĕ...
Аварлă ылтăн пуртă хĕвел куçне юхтарĕ,
Хăмăшлăхри яштак пĕвĕм хăва тĕпĕнче çĕрĕ (40).

Пушкăрт халăхĕн «Хура Çăрха» ятлă эпикăллă юрă пур. Ăна вырнăн-вырнăн юрламасăр та каланă. 1907 çулта Самар кĕпĕрнинчи Бузулук уесĕнче М.Бурангулов çапларах фабулăллă текст çырса илнĕ. Аблай ятлă йĕкĕт Масем ятлă пуянăн Махтымхылу ятлă хĕрне юратса пăрахать. Нугуш пуян хăйĕн ывăлĕ валли çак чиперккене çураçма евчĕсем ярать, Масем пуянпа килĕшсе татăлать. Аблай хăйĕн Хура Çăрха ятлă учĕ пулăшнине пула хăйĕн савнине килне илсе каять. Çухалнă хĕрне шыраса çитнĕ ашшĕне Махтымхылу çапла хуравлать:

Сакмар шывĕ хурăнлăх,
Ӳсмест, тесе ан калăр.
Чухăн йĕкĕт Аблай та
Мул тупаймĕ ан тейĕр.
Нугуш пуян ывăлĕн
Ăрăс каймĕ ан тейĕр...
Вăйпа парсан Нугуша
Хирĕçлеймĕп ан тейĕр;
Хура та çĕр айĕнче
Вырăн тупмăп ан тейĕр...
Эп хулăмшăн сутăнмăп
Йĕкĕчĕ ар пулмасан,
Кăкăрне те сĕртĕнмĕп
Юратăвăм пулмасан.

Çакăн хыççăн Масем пуян хăйĕн хĕрне Аблай чухăна качча пама килĕшет (41).

Хăйĕн савнийĕпе пĕрле пулма май килмен, урăх çынна вăйпа качча панă телейсĕр хĕр пирки калакан халапсемпе юрăсем тĕрĕк халăхĕсен сăмахлăхĕнче пин-пин çул упранаççĕ. Вĕсене тĕпе хурса вăтам ĕмĕрсенчи поэтсем дастан-поэма хайлани те пуллă. Акă, узбексен Низами Гянджеви ятлă сăвăçи 1188 çулта «Лейлипе Меджнун» дастан çырать. Унти лейтмотив – икĕ çамрăкăн вĕри юратăвĕ. Ашшĕ-амăшĕ Лейли ятлă хĕрне чухăн Кайса (Меджнуна) качча пама килĕшмест. Романтикăлла юрату хĕр хăйĕн каччи аллинче вилнипе вĕçленет.

Çак Низами хайлавĕн фабулине тĕпе хурса каярах сăвăçсем тĕрлĕ чĕлхепе хайлавсем çырни пуллă. В.Шекспир «Ромеопа Джульеттин» фабулине унтанах илнĕ тесе калаççĕ (Е.Э.Бертельс).

Традицилле фольклористикăра лиро-эпика тексчĕсене *баллада* тата *сюжетлă юрăсем* тесе калатчĕç. 1982 çулта эпĕ вĕсене *пейĕт* ятпа палăртма сĕннĕччĕ. Пулса кайнине тата тематикине кура, çапла пейĕтсем пурри çинчен çырнăччĕ: авалхи пейĕтсем, вăрçă пейĕчĕсем тата юрату пейĕчĕсем (42).

Чăваш халăх сăмахлăхĕнче авалхи пейĕтсем сахал мар тĕл пулаççĕ. Вĕсенчен пĕрне, Хусан ханĕн майри çинчен калаканнине, илсе кăтартрăм ĕнтĕ.

Самар тăрăхĕнче 1911-1912 çулсенче çырса илнĕ пейĕт çапла пуçланать: "...Ĕлĕк пĕр чăваш хăй хĕрне тĕрĕк çыннине панă тет. Хĕрĕ каясшăн пулман. Ăна йăпатса хĕрĕн йăмăкĕ çапла такмакласа юрланă тет:

Вĕç, вĕç, аккăш, вĕç, аккăш та
Тĕрĕк хирне ўк, аккăш.
Тĕрĕк хирĕ шурă çеçке,
Эпир ăна курнă-çке.
Кай, кай, акка, кай, акка та
Тĕрĕк арăмĕ пул, акка.
Тĕрĕк майрин камсульсене
Мана та тăхăнма пар, акка...»

Малалла хĕçпе çĕçĕ тытнă вырăс çыннине сăнланă, вăл аппăшне чикме хатĕрри пирки каланă (43). Тепĕр пейĕтре тутар тыткăнĕнчи хĕрĕ патне тăван амăшĕ çитни, мăнукне сиктернĕ май вăл юрă юрлани пирки каланă.

Ашшĕ-амăшĕ хĕрне вăйпа качча пани çинчен калакан

сюжетсем темиçе ушкăна пайланаççĕ: ют патшалăха (тыткăна) илсе кайни çинчен, ют халăха е пуян çынна пани çинчен. Ют халăх çыннине вăйпа качча пани çинчен калакан тепĕр пейĕте М.Арзамасов Тĕрлемес ялĕнче çырса илнĕ. Пĕр хĕре çармăс каччине вăйпа качча панă тет. Атăл урлă илсе каçнă чухне вăл çапла юрланă пулать:

Ай, аттеçĕм, аннеçĕм,
Аттем-аннем пулмарĕ те
Мана ыр кунсем пулмарĕç.
Ахах ятăм – путмарĕ,
Мерчен ятăм – юхмарĕ.
Хурăн çырли пиçнĕ чух
Хурнташсенчен уйăрчĕç,
Çĕр çырлийĕ пиçнĕ чух
Çĕртен-шывран уйăрчĕç.
Тантă кĕпçи ÿснĕ чух
Тантăшсенчен уйăрчĕç.
Ай-хай чунçăм, çамрăк чун,
Кантăр пекех ÿсрĕмĕр,
Пуса пекех уйăрчĕç.
Ай, аттесем, аннесем,
Ай, пиччесем, инкесем,
Эсир мана курас çук,
Эп те сире курас çук.
Манăн пуçри нухратăм
Атăл тĕпне сарăлтăр.
Манăн умри кĕмĕл тенкĕ
Атăл тĕпне çутăлтăр.

Юррине юрласа пĕтернĕ-пĕтермен çав хĕр кимĕ çинчен Атăла сикнĕ тет (44).

Çак фабулăпа усă курса, Трубина Марфи «Елик» ятлă сăвăлла халап (пейĕт) хайлани паллă. Турхан Яккăвĕн «Варуççи» поэмине те çав авалтан килекен сюжета тĕпе хурса çырнă темелле.

«Нарспи» поэма сюжетĕнче те тĕпре ашшĕ-амăшĕ хăйĕн хĕрне юратман çынна вăйпа качча пани, савнă çынсене пĕрпĕринчен уйăрса яни тăрать. Н.В.Шупуççынни аса илнĕ тăрăх, К.В.Иванов поэма сюжетне Чĕмпĕрти шкул хуралçинчен илтнĕ (45). Сăвăçăн Праски ятлă йăмăкĕ урăхла аса илет: «Произведенин тĕп шухăшне эпĕ ун чух юрăсенчен илтнĕ пулĕ терĕм. Мĕншĕн тесен халăх хушшинче хĕрсене ют çĕре вată та юратман çынна качча пани çинчен нумай юрлаççĕ. Квинтилиан

пěлтернě тăрăх, «Нарспи» сюжетне Константин асаннерен илтнě» (46).

Шкул хуралçи мěнлерех сюжетлă халап каланине халě тин пěлеймěпěр, мěншěн тесен çырса хăварни упранса юлман. Поэт асламăшě мăнукне мěнле юрă юрласа пама пултарнине Г.Г.Макаров мана 1987 çулхи çěртмен 10-мěшěнче Слакпуçěнче каласа пани пěлме пулăшать. Ун чухне вăл çапла пěлтерчě: «Эпě Мария Даниловна Ковалеван племянникě. Пěррехинчен унран «Нарспи» поэма пирки ыйтрăм: «Каласа парăр-ха, мěнрен аса илнě-ши К.В.Иванов хăйěн «Нарспи» поэмине?» терěм. Вăл мана: «К.В.Иванов «Нарспи» сюжетне хăйěн асламăшě каланинчен илтнě пулě», терě. Ваçлис аппа каланă тăрăх, ěлěкхи вăхăтра хěрсене вăйпа качча панă. Çавăн йышши пěр хěрěн юратман çынна качча каясси килмен. Ăна вăйпа качча панă вăхăтра вăл вара хăйне хăй вилме шухăш тытнă. Асламăшě çакăн çинчен каланă чухне çапла та юрласа паратчě тет:

Ман пуçăмри тенкěсем
Пулă хуппи пулайччăр.
Ман тухьяри тенкěсем
Пулă вăлчи пулайччăр.

Çав телейсěр хěр кěпер урлă каçнă чухне çапла юрланă та шыва сикнě иккен. Лап! ўкнěрен, çавăнтах вилнě вара» (47).

Ку пейěт Тěрлемес тăрăхěнче çырса илнě пейěте питех те çывăх: хěр шыв урлă каçнă чухне шыва сиксе вилет. Малтанхи тата кайранхи ěç-пуç пирки прозăлла каланă, хěр монологне вара юрă пек йěркеленě. Вăл ăна туй шыв (кěпер) урлă каçнă вăхăтра юрлать. Трубина Марфин 1906 çулта çырнă «Еликěнче» туй халăхě малтан пўртре пулнине, хěрěпе ашшě калаçнине сăнланă. Кунта калуçă сăмахěсене те сăвăласа çырнă. Кайран хěрěн вилес умěнхи монологне вырнаçтарнă. Хайлав çапла вěçленет:

Çав ěçе чăвашсем манман,
Ирěксěр хěрсене çармăса паман.
Елик çинчен шăпăрçăсем юрлаççě,
Чăваш хěрěсем ыррипе асăнаççě.

«Нарспи» сюжетне аталантаракан тěп мотив – хěр хăйěн ашшě-амăшě юратман çынна вăйпа качча панине хиреç тăни – чăваш хушшинче анлă сарăлни иккěленўсěр. К.В.Иванов вěсенчен хăш вариантне илсе усă курнине халě лайăххăн пěлеймěпěр ěнтě. Çапах та çав мотив халăх сăмахлăхěнче çěршер çул

упранса, аталанса пыни питех те пĕлтерĕшлĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче халăх чунне çывăх мотива тĕпе хурса, К.В.Иванов вилĕмсĕр хайлав çырма пултарнă.

## «Нарспири» автор сăнарĕ

Хайлава хак паракансем чылай чухне калуçă сăмахĕпе К.В.Иванов сăмахне пăтраштараççĕ. Ку ĕнтĕ вăл хайлавра темиçе автор куçĕ пуррине пĕлменрен килет. М.М.Бахтин çырнă тăрăх, хайлавра автор сăнарĕ (образ автора) пур. Вăл ытти сăнарсенчен уйрăларах тăрать, çав хушăрах ăна та çыравçах калăплать. Çав сăнар унăн хăйне евĕр маски (пит çинчи писевĕ) иккен. Чăн-чăн автор шухăшне вара ўкерсе кăтартнă тĕнчерен тухса, çав тĕнче çине пăхса хаклакан пек курса пĕлме май пур (48).

Прозăллă хайлавра автор-калуçă, автор-художник тата автор-çын куçĕсем пур. Малалла эпир калуçă урлă автор сăнарне палăртма тăрăшăпăр. Хайлава сыпăксерен тата йўнсерен пăхса тухиччен пĕр ыйтăва татса пани кирлĕ. Калупала калаçу (диалог) шайлашăвĕ К.В.Ивановăн хайлавĕсенче еплерех йĕркеленнĕ-ши? Чи малтанах вĕсен функцийĕсем тĕрлĕрен пулнине палăртмалла: калу чылай чухне ĕç-пуçа тулашран кăтартма, калаçу вара персонажсен кăмăл-туйăмне палăртма кирлĕ. Калу формипе вăхăта хăвăртлатсан, калаçу мелĕпе ăна вăрахлатаççĕ, уйрăм самантсене сăнлаççĕ.

«Тимĕр тылăри» калуçă сăнарĕ уçăмлă, вăл хăйĕн ячĕпе те калаçать:

Кам та пулин шанмасран
Е вăрçасран хăраса,
Пĕр ĕç çинчен калам-ха,
Хамăр ялта пулнине.

«Нарспире» калуçă монологĕ темиçе тĕлте те тĕл пулать. «Сарă хĕр» сыпăкăн 5-мĕш йўнĕнче калуçă Михетер мухтаннине çирĕплетсе ĕнентерет, «Пирĕн ватă Михетер // Тивĕçлипе мухтанать» тесе пĕтĕмлетет. «Çимĕк иртсен» сыпăкăн 6-мĕш йўнĕнче калуçă Тăхтаманпа хутшăнăва кĕрет, ăна: «Анчах кайран хăвăнах // Ўкĕнмелле ан пултăр» тесе асăрхаттарать.

Калуçăн позицине пĕлме хайлавăн чи юлашки йўнĕнчи çак сăмахсем пулăшаççĕ:

Çапла иртрĕ пурăнăç,
Пусĕ пĕтрĕ çамрăклах,

Ашшĕ-амăш ухмахран
Пĕтрĕ хуйхă-суйхăпах...
Пӳлĕх туррăн кăмалĕ
Ăслă турĕ хăй хĕрне.
Атте-анне ирĕкĕ
Çирĕ сарă хĕр пуçне...

К.В.Иванов «Нарспири» калуçă сăнарне пĕр енлĕн хак паракан пек, илемлĕ те çамрăк Нарспине яланах хӳтĕлекен пек калăпланă. Вырнăн-вырнăн çав калуçă ял халăхĕн е туй ачисен ячĕпе те калаçать, вилекен Тăхтаманăн выльăхĕсене те хĕрхенсе илет. Çав хушăрах Нарспи «тăшманне» хак пама та манмасть: «Пĕтрĕ пĕр чун тĕнчере // Ĕçĕсемшĕн хупланчĕ» тет. Тăхтаман ĕçĕсем – çамрăк та чипер хĕре «çаклатса» кайни тата ăна хĕнесе тĕрлĕ асап кăтартни. Вĕсен çумĕнче Тăхтамана вĕлерни ним тĕшшине те тăмасть, вăл хăй айăплă.

Халĕ халăх сăмахлăхĕнчи юрату пейĕчĕсене аса илер: вĕсенче юрăçă позицийĕ яланах вăйпа качча паракан хĕрĕн кăмăлĕ енче пулнă. Юрăçăсем телейсĕр хĕр шăпишĕн кулянса, ашшĕ-амăшĕпе ютă качча тарăхса юрланă. Çак позицие эпир «Нарспи» поэмăри автор-калуçă монологĕсенче те куратпăр. Вăл хайлаври автор сăнарĕн пĕтĕмĕшле сăн-сăпатне калăплама пулăшать.

«Атте-анне ирĕкĕ // Çирĕ сарă хĕр пуçне» идея-мотив К.В.Ивановăн халăх пейĕчĕсенчен куçнăскерех. Çак шухăша Нарспипе Сетнер кăна мар, калуçă та пуссах палăртаççĕ. Калуçă ял халăхĕ ячĕпе çапла та калать: «Ашшĕ çирĕ хăй хĕрнех, // Тăван çирĕ тăванах».

Çаврапа састаш хăй евĕрлĕхĕ урлă эпир хăш сыпăка маларах, хăшне каярах хайланине пĕтĕмĕшле палăртса тухнăччĕ. Тĕслĕхрен, малтанхи вариантра «Силпире» сыпăк хыççăн хальхи пек «Вăрманта» мар, «Атте-анне» (вăл хăй уйрăм ятпа тăман, «Силпире» сыпăках кĕнĕ теме май пур) пулнă. Çакна «Атте-анне» сыпăкăн малтанхи икĕ йĕрки те пĕлме пулăшать. Унта «Сетнер пĕчĕк пӳртĕнче // Вĕсем иккĕн лараççĕ» тенĕ. Камсем-ши? Умĕнчи йĕркесем çакна ăнлантармаççĕ. Çав вăхăтрах «Силпире» сыпăкăн иккĕмĕш йӳнĕн вĕçĕнчи йĕрке «вĕсем» камсем пулнине лайăх ăнлантарать: «Нарспи, Сетнер, тиеççĕ». Çавăнти 3-мĕш йӳне автор çĕнĕ «Вăрманта» сыпăк кĕртнĕ майăн çыхăнтарма хайлани иккĕленӳсĕр.

«Вăрманта» сыпăкра тĕпре Сетнерпе Нарспи монологĕсем

тăраççĕ. «Атте-анне» сыпăкра та монологсемех (хушнă вырăнсенче). «Нарспи ĕçĕ» сыпăкра 12 йӳн (240 йĕрке). Сыпăк калăпăшĕ, тĕпрен илсен, Нарспи монологĕсене пула капашсăр ӳссе кайнă. «Çимĕк каçĕ» сыпăкра та çаплах. Вĕсем автора геройсен ăшри туйăмĕпе шухăшне палăртма кирлĕ пулни иккĕленӳсĕр. Кун пек чухне авторăн позицине, вăл мĕн калас тенине калаçусене тишкерсе пĕлме май пур.

Малтанхи икĕ сыпăкра автор калуçăна ирĕке ярать. Кунта калуçăн мелĕ-мехелĕсене, унăн хавхине (пафосне) асăрхани вырăнлă пулмалла пек. «Силпи ялĕнче» сыпăка хушса автор ĕç-пуç пуçланичченхи идиллиллĕ вăхăта сăнланă. «Сарă хĕр» сыпăкра идилли тĕнчи арканас хăрушлăх пурри палăрать. «Çимĕк каçĕ» сыпăкра хирĕçӳ сăлтавĕсем уçăмланса çитеççĕ:

«...Атте-анне ӳсĕрпе<br>
Хĕрне итлес темерĕ,<br>
Каччи пуян тенипе<br>
Хĕрĕн чунне пĕлмерĕ».

Çак Нарспи сăмахĕсем хыççăн калуçă çапла пĕтĕмлетет:

Ватă чун та хытнă чун,<br>
Хытса кайнă кĕççе çав.<br>
Çамрăк чун та пĕчĕк чун,<br>
Чунĕ ытла çемçе çав.

Хытă чунпа çемçе чун ватăпа çамрăк пулнăран килеççĕ тени «Тимĕр тылăрах» пурччĕ мар-и? Унта та ватти шуйттанпа çыхăннă, çамрăккин «чунне витерет».

Кайранхи хушăмсенче К.В.Иванов ашшĕ-амăшĕ хĕрне мĕншĕн вăйпа качча панине сăлтавласа ăнлантарать тата контрастлă ӳкерчĕксемпе хирĕçлетсе кăтартать. Монологсем те тĕп геройсен шухăш-кăмăлне пĕлме, вĕсен хăтланăвĕсене ăнланма пулăшаççĕ. «Вăрманта» сыпăкра вулавçă çут çанталăк кăмăлне те пĕлет: Нарспипе Сетнер пĕрле пулсан вăл лăпланать, хĕвел пăхма, кайăк юрлама пуçлать. Çав хушăрах: хура кайăк чăйлатать:

Ай, Тăхтаман, Тăхтаман,<br>
Нарспи чунне вăл шырать!

Автор çак вырăна хушса, кайранхи ĕç-пуçа (çĕрле вăрмантан тухса вăрмантах çухалнă вăрăсен ĕçне) сăлтавлать.

Çапла вара К.В.Иванов «Нарспине» çырнă майăн унти идейăсене чылай тарăнлатнă, ĕç-пуçа сăлтавланă. кунта вăл çут çанталăкпа çын кăмăлне ăста çыхма пултарнă.

«Нарспири» калуçăпа геройсем чи малтан ашшĕ-амăшне

айӑпласҫӗ. Автор хӑй мӗн шухӑшланӑ-ши ҫакӑн ҫинчен? Сетнер каланӑ ҫак сӑмахсене аса илер-ха:

Вӑл тӑшмана пӗтерме
Икӗ вӑйлӑ аллӑм пур,
Анчах ӑна пӗтерсен,
Унтан усал тӗнче пур.

Ҫак «ҫемҫе чунлисен» тӑшманӗсем – хытӑ чунлисем, чуна, тӑванлӑха мулпа улӑштарма хатӗррисем. Вӗсем вӑйлӑрахне «Шуйттан чуринче» те, «Тимӗр тылӑра» та, «Нарспире» те куратпӑр эпир. Ҫав усал тӗнчере мул хуҫаланать. Илемпе ҫамрӑклӑх та юрату яланах пӗрле. Тӑлӑх арӑм та, Нарспи те хӑйсен савниӗсенчен уйрӑласшӑн пулманран вилеҫҫӗ.

Михетерсемпе Тӑхтамансем вара каллех ҫав усал тӗнче саккунӗсене пӑхӑнаҫҫӗ. Вӗсен куҫӗсене шуйттан ҫӳп кӗртсе мар, мулпа шартарса сукӑрлатнӑ. Ҫавсен ҫумӗнче суяпа сукӑрланнӑ юмӑҫ та мӗн пуласса витӗр курать, мӗншӗн тесен Сетнер пек ҫемҫе чунсене ҫав пурнӑҫра «кӗске ӗмӗр, йывӑр кун» кӗтнӗ.

Михетер юмӑҫран та сукӑртарах пулнине вӑл хитрене мулпа улӑштарма пултарни те кӑтартать. Ҫапах та тӗп сӑлтавӗ кунта Михетерте мар, ӑна «сукӑрлатнӑ» усалта (усал тӗнчере). Ҫак «усал вӑйлӑрах» шухӑша мала лартса, К.В.Иванов юмахсенчи «ырӑ кӑна ҫӗнтерет» идейӑна хирӗҫлет, диалога кӗрет.

Ҫав шухӑша вӑл халӑх пейӗчӗсенче те асӑрханӑ. Чи малтанах качча кайма килӗшмен хӗр хӑй ҫине алӑ хуни ҫинчен калакан сюжетсене ӑша хывнӑ вӑл, унӑн пуҫӗнче пире паллӑ хайлавӑн коллизийӗ тӗвӗленнӗ. Пейӗтре ырӑ хӑй кӑна вилет пулсассӑн, «Нарспире» вӑл усала та тӗп тӑвать, «усал усала ҫиет».

Кунта эпир художникӑн пурнӑҫ концепцине кӑштах та пулин ӑнланма пултаратпӑр. Ҫут ҫанталӑк ырра (илеме, ҫамрӑклӑха, таса юратӑва) тӗпе хурса пурӑнма хушать. Ҫын тӗнчи ҫакна пӑхӑнасшӑн мар, ӑна усал илӗртсе пӑсать. Мӗнле ҫур куннерен кӗр еннелле туртӑнать ҫут ҫанталӑк, ҫавӑн пекех ҫынсем те ҫамрӑклӑхран ватлӑхалла куҫаҫҫӗ, ҫемҫе чӗресем хытса пыраҫҫӗ, куҫсем сукӑрланаҫҫӗ. Анчах ҫурпа ҫамрӑклӑх вилӗмсӗр: Чӗкеҫ кин выранне кӗҫӗн хӗр, тӑлӑх арӑмпа Нарспи йышшисем килсех тӑрӗҫ. Хӗвел пайӑрки те сукӑр ҫын куҫӗ ҫине ӳкӗ те вӑл та ырӑ енне куҫайӗ (юмӑҫа аса илӗр). Усал вӑйлӑ, ырӑ та парӑнмӗ. Ӗмӗрсерен ҫапла пулӗ.

Хайлавӑн пултарулӑхлӑ историне пӑхса тухни ҫапларах

шухăшсем патне илсе çитерме пултарчĕ. Паллах, çак шухăшсене çапла майпа тĕпченĕ хыççăн кăна калама пулать теесшĕн мар эпĕ. Кунта кашни тĕрлĕ çулпа утса тухма пултарĕ. Çапах та хамăрăн субъектлăха чакарас тесессĕн, ман шутпа, текстпа ĕçлени, унăн варинчĕсене, авторăн шухăш тытăвĕпе ӳтлентерӳ тапхăрĕсене пĕлни кирлех. Ку тĕлĕшрен эпĕ кунта çырни вăл проблемăна лартса малтанласа çырса пăхнă тĕслĕх кăна-ха.

## Литературăпа асăрхаттарусем


1. Кунта Н.К.Пискaнов, П.А.Сакулин, Б.В.Томашевский, Д.С.Лихачев ячĕсене асăнни те çителĕклĕ. 90-мĕш çулсенче литературоведенири çак пая «динамикăлла поэтика» тесе калама пуçларĕç. Пăхăр: Динамическая поэтика. От замысла к воплощению. М., 1990. – 264с.

2. *Лихачев Д.С.* Текстология. На материале русской литературы X-XVII веков / Изд. 2-е, перераб. и доп. Л., 1983.

3. Там же. С. 33.

4. *Родионов В.Г.* Чувашский стих. Проблемы становления и развития. Чебоксары, 1992. С. 134-136, 160-162.

5. Там же. С. 161-162.

6. *Ухсай, Яков.* К.В.Иванов. Шупашкар, 1957. 64 с.

7. Çавăнтах. 65 с.

8. Константин Иванова аса илеççĕ. / Г.Ф.Юмарт пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1990. 15 с.

9. Çавăнтах.

10. Кĕнекере К.В.Иванов çырнисем çапла йĕркепе пичетленнĕ: «Икĕ хĕр» (3 с.), «Тимĕр тылă» (3-8 с.), «Тăлăх арăм» (8-10 с.), «Нарспи» (66-98 с.). Çак йĕркене хайлава маларах е каярах çырса пĕтернине асра тытса автор хăех тунă теме май пур.

11. Я.Ухсай каланă тăрăх, çак таргедин планне тата уйрăм пайне сăвăç «Тимĕр тылăпа» «Тăлăх арăм» тата ытти хайлавсене çырма план туса хуриччен йĕркеленĕ. Ахăртнех, ăна çырма вăл Чĕмпĕре пыриччене пуçăннă.

12. НА ЧГИГН, отд. V, ед. хр. 322, инв. №2417. л. 5.

13. Куçару çак кĕнекере кун çути курнă: Константин Иванова аса илеççĕ. 5-6 с. Çыру копийĕпе танлаштарăр: НА ЧГИГН, отд. II, ед. хр. 655. л. 4.

14. «Кайран, сурхури уйăхĕнче вара пуçламăшне çырчĕ» –

аса илет Н.В.Шупуççынни 1922 çулта. Ун чухне çĕнĕ календарь пулнине асра тытсан, сурхури уйăхĕ январьпе тӳр килни курăнать. И.Т.Трофимов та хайлава 1908 çулти февральте вĕçленĕ тесе çирĕплетет (1948 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче вырăсла çырнă аса илӳ К.В.Ивановăн Слакпуçĕнчи музейĕнче упранать. 1-6 с.)

15. *Шупуççынни Н.* «Нарспи» // Иванов К.В. Нарспи. М., 1930. 13 с.

16. Константин Иванова аса илеççĕ. 57 с.

17. *Сироткин М.Я.* Константин Васильевич Иванов// К.Иванов: Собр. соч. Чебоксары, 1957. С. 12.

18. 1907 çулхи кĕркунне çырма палăртнă ĕçсенчен поэт «Ватă вăрман» тата «Хур кайăксем» ятлă халапĕсене вĕçлейменни паллă. Тен, çавсен вырăнне унăн пуçĕнче «Нарспи» çырас шухăш тĕвĕленнĕ? Поэмăра вăрман сăнарĕ пысăк вырăн йышăннине шута илсен, çапла шухăшлани чăнлăха çывăх пек туйăнать.

19. Ку ыйтупа тĕплĕнрех çак кĕнекере паллашма пулать: *Родионов В.Г.* Чувашский стих. С. 105-117, 149-158.

20. Н.В.Шупуççынни Чĕмпĕре юпа уйăхĕн вĕçнелле çитет, çавăн хыççăн И.Я.Яковлев вĕсене К.В.Ивановпа иккĕшне М.Ю.-Лермонтов сăввисене куçарма хушать: «И.Я. пирĕн сăвăсене курчĕ те мухтанă пекки турĕ. Хăй Лермонтова пит кăмăл тунă пирки вăл пире Лермонтовăн сăввисене куçарма хушрĕ. Çапла вара Кĕçтук «Калашник хуçапа Иван ĕмпӳ çинчен çырнă юрра» куçарчĕ, ун çумне тата пĕчĕкреххисене иксĕмĕр пĕрле куçарса, пĕр пĕчĕк кĕнеке туса, 1908 çулхи çуркунне патне кăларттартăмăр» (*Шупуççынни Н.* Нарспи. 12-13 с.).

21. «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрă» ятлă кĕнеке Чĕмпĕрте 1908 çулхи ака уйăхĕн пуçламăшĕнче çапăнса тухни паллă. Типографире пĕр уйăхран кая мар выртнине шута илсен, ал çыру кăрлач вĕçнелле хатĕр пулни иккĕленӳсĕр.

22. Çак шухăша эпĕ К.В.Ивановăн 100 çулхи юбилейĕнчех апробациленĕччĕ. Тĕплĕнрех паллашăр: *Родионов В.Г.* Чувашский стих. С. 134-136.

23. «Ылтăн касăк» принципĕ пирки С.Ш.Чагдуров çапла çырать: «Принцип золотого сечения был связан прежде всего с конструированием формы. Он «работал» на любое восприятие (будь то восприятие обычное чувственное, будь то восприятие

художественное). Этим принципом руководствовались в музыке, архитектуре, живописи... Суть его заключается в том, что развитие материала, нагнетание динамики протекает от начала общей формы (конструкции) до ее третьей четверти. Именно в третьей четверти преимущественно наступает кульминация (высшая точка развития – «точка золотого сечения»), после которой идет спад и итог в четвертой» (Чагдуров С.Ш. Стихосложение Гесериады. Улан-Удэ, 1984. С.43).

24. Çавăнтах. 46 с.

25. Ку ыйтупа эпĕ 1988 çулта ятарлă статья пичетлесе кăларнăччĕ. Унта çапла калани пур: «П.Хусанкайăн хăш-пĕр сăввисем мехел тĕлĕнче вĕçленеççĕ, урăхла каласан, вĕсенче ĕç-пуç хăй выrăнне ларни, кульминаци хыççăнхи развязка çук. Çакă вара, экспрессие чакарас тесессĕн, вуласа тухнă хыççăн кăштах шухăшласа ларнине ыйтать. Тен, çавна пулах, хăш-пĕр сăвăсене вуланă хыççăн çиййĕнчех теприсене вулама пуçăнма çук. Ку вăл лирикăн уйрăмлăхĕ-тĕр» (Родионов В.Г. Поэзие тĕпчес ыйтусем (П.Хусанкай сăввисенчи тĕслĕхсемпе) // Петĕр Хусанкай. Шупашкар, 1988. 40 с.).

26. «Средняя геометрическая частота для нас составляет 22,13 герца; а две полосы равны 8,13 герца и 12,87 герца. Общий же диапазон, то есть разность крайних частот, составляет 21 герц. И отношения этих величин друг к другу приводят нас к удивительному результату – к золотому сечению» (Соколов А.А. Секреты золотого сечения //Фантастика 79. М., 1979. С.388-392). Ср.: Чагдуров С.Ш. Указ. раб. С. 47.

27. Кунта эпĕ поэтăн «Тимĕр тылă» балладипе «Икĕ хĕр» хайлавне (унăн жанрĕ пирки ятарласа тĕпчев ĕçĕ çырмалла, темшĕн ăна «сăвăлла юмах» тесе калас килмест) кĕçĕн классенче вĕрентни тĕрĕс марне палăртасшăн. Çакă поэтăн пултарулăхне тарăннăн ăнланма чăрмантарать. Аслă ўсĕмри ачасене вĕрентнĕ чухне поэтăн ăсталăхне тата философилле тарăнăшне кăтартса пама çăмăлтарах пулни иккĕленўсĕр.

28. Ю.М.Лотман çапларах каланă: «Идея не содержится в каких-либо, даже удачно подобранных цитатах, а выражается во всей художественной структуре. Исследователь, который не понимает этого и ищет идею в отдельных цитатах, похож на человека, который, узнав, что дом имеет план, начал бы ломать стены в поисках места, где этот план замурован. План не замурован в стенах, а реализован в пропорциях здания.

План – идея архитектора, структура здания – ее реализация» (*Лотман Ю.М.* Анализ поэтического текста. Л., 1972. С.37-38).

29. *Хализов В.Г.* Теория литературы. М., 1999. С. 60.

30. Там же.

31. Революцичченхи чăваш литератури / Текстсем. 1 том (XX ĕмĕрччен). Шупашкар, 1984. 298-299 с.

32. «Тăхăрьялта» çапла юрă йĕркисем пур:

Шăппăн-шăппăн тăмашкăн
Шăпчăк чĕпши мар эпир.
Тăррăн-тăррăн тăмашкăн
Тăри чĕпши мар эпир...

Кĕнекере çак юрра «Туй юррисем» пая кĕртнĕ (Тимофеев Г.Т. Тăхăрьял. Шупашкар, 1972. 377 с.). Автор «Нарспин» юлашки вариантне çак йĕркесене хушса çырать:

Шăпăр сасси чарăнсан
Туй юррийĕ пуçланать:
«Мĕншĕн шăппăн ларатăр,
Мĕншĕн шăппăн ларатăр?
Шăппăн-шăппăн лармашкăн
Шăпчăк чĕпши мар эпир».

К.В.Иванов юрăри мотива малалла аталантарать, Нарспи тарнă хыççăнхи Михетер килне ытарлăн çапла сăнлать:

Мĕн пулнă-ши çав тĕрлех –
Пурте шăппăн лараççĕ?
Шăппăн-шăппăн лармасăр:
Вĕсен хĕрĕ çук паян,
Нарспи усал Сетнерпе
Тарса кайнă вăйăран.

33. *Акар* тени сунарçă йыттине пĕлтерет. Пăхăр: *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964. С. 23.

34. Çавăн йышши тĕпчеве ăслăлăхра *поэзилле ономастика* теççĕ. М.Ф.Федоровăн «Арçурийĕнчи» ятсем пирки эпĕ пĕчĕк ĕç те çырнăччĕ (*Родионов В.Г.* Михаил Федоров: «Арçури» ăнлантарăвĕ. Шупашкар, 1999. 40-47 с.

35. *Тимофеев Г.Т.* Тăхăрьял. 406 с.

36. *Бахтин М.М.* Эстетика словесного творчества. М., 1979. С. 331.

37. Ку ыйтăва эпĕ тĕплĕнрех çак кĕнекере хускатнăччĕ: *Родионов В.Г.* Чувашский стих. С. 21-45.

38. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 3-мĕш том. Юрăсем. Шупаш-

кар, 1978. 34 с.
39. Татар халык иҗаты. Бэетлэр. Казан, 1983. 33-34 б.
40. Çавăнтах. 161 с.
41. Башкирский народный эпос. М., 1977, С. 428-442. Кунта акă мĕн кăсăк: К.В.Иванов 1907 çулта çуллахи уйăхсенче Н.Ф.Беляевпа Самар кĕпĕрнинчи ялсенче çĕр виççе çÿрени паллă (КИванова аса илеççĕ. 44, 68 с.). Шăпах çав вăхăтра тин кăна медресерен вĕренсе тухнă М.Бурангулов хăйĕн тăван ялĕнче (Бузулук уесĕнчи Урга-Ильяс аулĕнче) «Хура Çăрха» хайлава çырса илет. Унăн фабулине К.В.Иванов Самар тăрăхĕнчи чăвашсенчен те илтме пултарнă.
42. Родионов В.Г. Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора // Чувашский фольклор. Специфика жанров. Чебоксары, 1982. С. 72, 103.
43. ГĂЧПИ ĂА, I уйр., 230 упр. ед. 220 л.
44. ИОАИЭ. Том III. Казань, 1880-1882. С. 284. Вариант: ГĂЧПИ ĂА, I уйр., 179 упр. ед.
45. К.Иванова аса илеççĕ. 23, 29 с.
46. Çавăнтах. 58 с.
47. В.Г.Родионов архивĕнчен. М.Д.Ковалева – поэтăн Маня ятлă йăмăкĕпе пĕр класра вĕреннĕ Слакпуç хĕрĕ. Кайран вăл Чĕмпĕрте ăс пухнă, Ивановсен килĕнче тăтăшах пулнă.
48. «Разные смысловые плоскости, в которых лежат речи персонажей и авторская речь. Персонажи говорят как участники изображенной жизни, говорят, так сказать, с частных позиций, их точки зрения так или иначе ограничены (они знают меньше автора). Автор вне изображенного (и в известном смысле созданного им) мира. Он осмысливает весь этот мир с более высоких и качественно иных позиций» (*Бахтин М.М.* Эстетика словесного творчества. С. 295).

Ю.М.Артемьев

## Аслă Силпи ялĕнче

Кама мĕнле-тĕр, мана хама «Нарспи» поэмăра сăнласа кăтартнă Аслă Силпи ялĕ пĕтĕм Чăваш Çĕршывĕ, Чăваш тĕнчи пек туйăнать, ял çыннисен пурнăçĕнче вара пĕтĕм

чăваш халăхĕн аваллăхĕпе пуласлăхĕ тарăн сăнланнăн туйăнса тăрать. Уйрăмах пуласлăхĕ енне шухăш йĕрĕ ӳксен, чун ҫӳҫенсе илет – К.Иванов поэмисенче ырă вăйсен пуласлăхĕ ҫук. Мĕн каласшăн пулнă вун ҫиччĕри гений ҫынсен ҫакăн пек хăрушла трагеди вут-ҫулăмĕнче (аҫа ҫапнă пек) ҫунса кайнă шăписем урлă? Пророкла чăваш тĕнчи пĕтесси ҫывхарса килчĕ тенипе ҫырлахман-ҫке-ха вăл. Ку ытла та пĕчĕк чăнлăх виҫесĕр пысăк чун хаваллă поэтшăн.

Ҫапах те темскер асăрхаттармасть-ши, ҫывхарса килекен хăрушлăха систермест-ши автор? текен шухăш чун ҫумĕнче йăва ҫавăрнине чылайранпа туятăп эпĕ. Чăнах та, пĕчĕк Сенттисĕр пуҫне, ытти геройсем пурте инкеклĕн те сарăмсăррăн ҫĕре кĕреҫҫĕ. «Нарспире» ҫеҫ-и, ытти поэмăсенче ҫавах ку. Выҫлăх вăхăчĕ мар, пĕр-пĕр чир ҫави ҫулнипе те мар... Хрестоматисенче ăнлантарнă пек, чухăнсемпе пуянсен кĕрешĕвĕпе те ҫыхăнман поэмăри трагедилле ĕҫ-пуҫсем. Апла пулсан, мĕнре-ши сăлтавĕ?

Мĕнрен тивсе амаланса каять-ха, сăмахран, Нарспи чунĕнчи хаяр трагеди вут-ҫулăмĕ? Кун пирки малтан К. Иванов, нимех те пулман пек, сăмах майăн ҫеҫ хушса хурать тейĕн: «Ашшĕ ҫирĕ хăй хĕрнех, тăван ҫирĕ тăванах». Кунта Нарспие хăйĕн савниййĕнчен уйăрса, Тăхтамана ирĕксĕр качча пани ҫинчен калать автор. Анчах та пурнăҫ йĕрки мĕн авалтан ҫапла пулман-и вара: пĕве кĕрсе арлă-арăмлă пулакан ашшĕамăшĕн ирĕкне пăхăннă-ҫке, вĕсен сăмахĕнчен иртеймен. «Турă ҫырни, ахăрах, ҫапла-тăр ҫав самани», тет автор хăй те Нарспие Хушăлкана лартса кайсанах. Кунта ҫав «турă ҫырни» тенин пĕлтерĕшне кăшт каярахпа тĕплĕнрех шĕкĕлчесе пăхăпăр. Тĕнчере ҫĕр тĕрлĕ кĕнчеле тенешкел, юратман ҫынпа ĕмĕрне ĕмĕрлекенсем те, кӳршĕ-аршăран намăсланса, чашăк-тирĕк шăкăртатнине ял ҫине кăларманнисем те, яш ӳсĕмрех хĕне кайса вилнисем те пинĕ-пинĕпе пулнă ĕнтĕ. Апла-тăк кунашкал «тĕрĕсмарлăх» ĕнер пĕр ялта, паян тепринче тенĕ пек тăтăшах пулса пынă. Акă мĕншĕн Нарспи, хăрхăм пулма килĕшмесĕр, самана йĕркисене хирĕҫ хăюллăн ҫĕкленинче эпир чăн-чăн хăватлă трагеди коллизийĕ курма тивĕҫ. Чăн та, поэма еккипе мар, трагеди шайĕпе аталанса пыраҫҫĕ «Нарспири» ĕҫ-пуҫсем. Уйрăмах Нарспи сăнарĕ, француҫсен художникĕ Э.Делакруа «Баррикадăсем ҫинчи ирĕклĕх» картинăри паттăр хĕрарăм сăнарĕ пек, кашни чăваш асĕнче вилĕмсĕррĕн пурăнать. Ҫĕр питĕнчен

чăваш çухаличченех çапла пулĕ ку.

1987 çулта пичетленнĕ хамăн пĕр статьяра («Художественный образ в чувашской литературе и искусстве» кĕнеке, Шупашкар, 1987) эпĕ «Нарспи» поэмăра мифологи «сийĕсем» чылай палăртнăччĕ. Унтанпа самаях вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, апла пулин те поэмăна çак таранччен критикăлла реализм «картине» хупакан литературоведсем хирĕçле аргументсем кăларса тăратаймарĕç.

Халь çыракан статьяра унччен хинче тезис халлĕн анчах каланă шухăшсене анлăрах уçса парасшăн. «Нарспи» поэмăра «миф» курма сăлтав çителĕклĕ пулсан, аслă поэтăмăрăн ытти поэмисен пирки калама та кирлĕ мар – вĕсене мифологи йĕрĕ-тĕсĕсем тĕпренех витернĕ. Статья валли хама редакци уйăрса панă лаптăкпа перекетлĕрех усă курам тесе, кĕскен, хальхинче эпĕ темиçе ыйтăва çеç пăхса тухасшăн. Пĕрремĕш – поэмăсенчи конфликтăн шалти-тулашри паллисем; иккĕмĕшĕ – поэтăн илемлĕ шухăшлавĕнчи мифологилле сийсем тата вĕсен çăл куçĕ. Тарăнрах, тĕплĕнрех тишкермелли ыйтусем поэт пултарулăхĕнче татах та нумай. Сăмахран, поэтăн пултарулăх меслечĕ, унăн тĕпри принципĕсенчен пĕри – историзм, поэтикипе стилĕ т.ыт.те.

К.Ивановăн лиро-эпикăлла хайлавĕсене тимлĕ вуласа тухсан, пĕр япала куç тĕлне пулатех: кирек хăш поэмăра та тăван тăванне кăшлать, чунне илет е пуçне çиет. «Иĕк хĕр» ятлă притчăра ашшĕ аслă хĕрне йăпăлтатса калană суя сăмахшăн çур мулне парать, çав вăхăтрах тӳрĕ чунлă кĕçĕн хĕрне чăн сăмахшăн (тăванне юрайман!) килĕнчен хăваласа кăларса ярать. «Тимĕр тылăра» тухатмăш карчăкăн кĕçĕн кинĕн, Чĕкеçĕн, кунçулĕ трагедилле вĕçленет. Хăй тăванĕсем патне хăнана кайма çĕр хута тухнăскере, тухатмăш тылли, хăваласа çитсе, пуçне çиет. Сисĕмлĕ чун, усала хирĕç юсмансем пĕçерсе тухнăччĕ вăл, анчах та пурпĕр хăтăлаймарĕ: темле йăлăнсан та, пиччĕшпе икĕ аппăшĕ алăк уçса кĕртмерĕç мĕскĕне, «çĕрле çӳрен хăнам çук» тесе. Каллех тăван тăвана пĕтерни куç умĕнче. «Шуйттан чури» трагедире те çавах, кунта та пиччĕш шăллĕне ылтăн хутаççишĕн сăнăпа тирсе вĕлерет, хăй ухмаха тухать. Ялан тенĕ пек кĕçĕннин шăпи инкеклĕ, иçмасса.

«Нарспи» поэмăра конфликт укçа-тенкĕпе (ылтăнпа) е класс кĕрешĕвĕпе çыхăнманнине çӳлерех палăртрăмăр ĕнтĕ. Кунта та ашшĕпе хĕрĕн «пĕрлĕхлĕ» чун хавалĕ, пуленкерен хăй чĕлĕннĕ

пек чĕлĕнсе, икĕ хире-хирĕçле, пĕр-пĕрне курайман вăй пулса тăниех терĕмĕр. Кун пирки Гегелĕн шутсăр витĕмлĕ каланă шухăшне илсе пăхма пулать. «Для того, чтобы дух мог достигуть целостности и свободы, он должен отделиться от самого себя и противопоставить себя в форме ограниченного природного и духовного бытия самому же себе как бесконечному в себе. И наоборот, с этим разрывом связана необходимость из той разорванности с самим собой, внутри которой сфера конечного и природного, непосредственность наличного бытия, естественные чувства определены как отрицательное, дурное и злое; лишь путем преодоления этого недействительного бытия можно вступить в царство истины и удовлетворения» (Эстетика. В 4-х тт. 1968. 2 т., 236 стр.). Кунта философ романтизăмла искусствăшăн типлă конфликт хăй евĕрлĕхне тарăн уçса парать. Пĕр пĕтĕмĕшле чун хирĕçÿллĕ икĕ чуна «пайланса» кайрĕ пулсан, кунта усалпа ырă вăйсене курма васкамалла мар-ха. Чунлăхпа пурлăх (духовное и материальное) хушшинчи ĕмĕрхи хирĕçÿ ку. Иккĕмĕш енчен те хăйне майлă чăнлăх пур, иккĕш те вĕсем хăйсенчен çÿлте тăракан вăя пăхăнаççĕ, ун ирĕкĕнчен тухаймаççĕ. Татсах каламалла, сăмах, автор каланă тăрăх, турă çырни е аслă пÿлĕхçĕ ирĕкĕ пирки пырать. Кун çинчен эпир çÿлерех асăннă хамăр статьяра татăклăнах каланăччĕ. Уйрăмах Сетнер вилĕмĕ турă çырнинчен тухнине юмăç систерсе калани трагеди саккунне пăхăннине палăртнăччĕ.

«Çарăк çулçипе» çырлахакан тĕпчевçĕсем К.Иванов поэмисен конфликтне вырăссен пĕрремĕш революцийĕ тапхăрĕнчи конкретлă ĕç-пулăмсене, политикăлла лару-тăрусемпе çыхăнтарма тăрăшса, вăсенче саманан пайăр паллисене шыранă, поэт пултарулăхĕн тĕп пĕлтерĕшне класс кĕрешĕвĕн сывлăшне мĕн тари палăртнипе хакланă. Анчах та çав политикăлла атмосфера поэт çырнисене сăрхăнса кĕреймен. Мĕншĕнни те паллă: К.Иванов паянхи кунпа (çак самантлăхпа) пурăннă е «актуаллă темĕпа» (хальхилле каласан) хавхаланса ĕçленĕ поэт мар. Çавăнпа та «çарăк тымарне» шырама пикенсен, эпир ирĕксĕрех ĕмĕрхи темăсем патне таврăнма, халăх ăс-тăнĕнче упранакан авалхи мифсен тарăнăшне кĕме тивĕçлĕ. Ырăпа усал кĕрешĕвĕ поэтăн трагизмла тĕнче туйăмĕпе тачă çыхăннă. Çук, ун поэмисен никĕсне революци çуратнă, унăн хумĕпе сулăм илнĕ конфликтсем мар, вĕсем ĕмĕрсен тĕпĕнченех тухнă, халăх асĕнче

пин çул упранакан мифсенче вĕсен çăл куçĕ. К.Иванов хăй халăхĕн философилле ăсĕпе историлле чăнлăхне хăй чунĕ витĕр сăрăхтарса çырса çеç пынă теме пулать. Паллах, поэт чăвашăн ĕмĕрсен алипе алланса пухăннă ăсне çеç мар, тĕн-тĕшмĕшне те ăса илнĕ. Çавсене вăл пĕтĕмпех эстетика вучахĕнче шăратнă. Гений пултарулăхĕ – чăннипех халăх сасси, ун иксĕлми хевтин палăрăмĕ.

Ку шухăша аксиома теме пулĕ, анчах та ăна констатацилени çителĕксĕр-çке. Сăмахран, поэт пултарулăхĕ, ун таланчĕ фольклор кăкăрĕнчен тăранса кĕрнекленнĕ тейĕпĕр. Ку пĕрре. Çав вăхăтрах К.Иванов тĕнче литературипе искусстивне те вăйлă тĕпчесе пĕлни витĕр курăнать. Библипе Евангели тексчĕсенчи ĕмĕрхи чăнлăха ăша илнĕ вăл. Çавăнпа та ун поэмисенче çав хăватлă «çăл куçсенчен» сăрхăнса кĕнĕ «сийсене» асăрхама йывăрах та мар, анчах та кашни пайăр пулăм аталанăвĕн çулне йĕрлесе тухма, ун тымарĕсем ăçталла кайнине ăнлантарма шутсăр çăмăл мар.

Акă пĕр тĕслĕх. К.Иванов поэмисенче трагедилле конфликт вут-кăварĕ яланах çывăх тăвансем хушшинчен амаланса тивсе каять терĕмĕр. Кунашкал хирĕçӳсем вĕсем, тĕпчевçĕсем каланă пек, буржуази пуç çĕкленипе те, революципе те çыхăнман. Вĕсем икĕ пин çул ĕлĕкрехех çыруллă литературăра палăрнă иккен. Акă библире Михей пророк каланă пĕр вырăна вуласа пăхар-ха. «Ĕнтĕ ывăлĕ ашшĕне намăслантарать, хĕрĕ амăшне хирĕç тăрать, кинĕ – хунямăшне; этем тăшманĕ – ун килйышĕ» (7 гл., 6 стих.). Кунта тăшманĕ тени хытă шухăшлаттарать, тăшман – хаяр та хĕрхенӳсĕр. К.Иванов лексикинче çак сăмах ырă сăнар антиподне палăртать. «Тăшман пуçне пĕтерме вĕри вут пек çилли пур» (Сетнер пирки) тет автор. Нарспишĕн хăйне çураçса хунă Тăхтаман хаяр тăшман иккен. Романтизмла контраст мелĕ геройсен сăнарне антиподсем пек калăплама май парать.

Эпир вун çичĕ çулхи чăваш поэчĕ кунашкал пин çулхи чăнлăх патне епле майпа пырса тухнине тӳрех татса калаймăпăр. Çапах та пирĕншĕн çак хаклă: К.Иванова ĕмĕрхи ыйтусем, пĕтĕм этемлĕхшĕн пĕлтерĕшлĕ хаклăх-пахалăхсем канăçсăрлантарнă, çавсен тупсăмне ăнкарма тăрăшнă май вăл час-часах трагизмла пĕтĕмлетӳсемпе эсхатологи проблемисем патне пырса тухать. Мĕншĕн-ха Чĕкеç, Нарспи, Сетнер пек «кайăк чунлă» сăнарсен шăпи синкерлĕ? Е ку ырăпа усал хушшинчи кĕрешĕвĕн

ёмӗрхи саккунӗнче тухать-ши? Ҫакна май, хӑй чунне ҫывӑх геройсем пекех, хӑйне те вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗме пӳрнине К.Иванов малтанах туйса тӑнӑ пуль тетӗп эпӗ. Тен, шӑпах ҫакӑнта поэт шухӑшлавӗпе тӗнче туйӑмне тӗпренех витернӗ синкерлӗх ҫӑл куҫӗ, урӑхла каласан, трагизм?

Поэт ҫырнисенче мифологилле сийсем ҫиелтенех курӑнса тӑраҫҫӗ терӗмӗр ҫӳлерех. Чӑн малтан, ҫакна май, илемлӗхпе сӑнарлӑхӑн тӗрлӗ майӗ-мелӗсем системине (поэтика) ятарласа тӗпчени кирлӗ. Паллах, критикӑлла реализм установкине пӑрахӑҫламалла малтан. Тата ҫакна та шута илмелле. Поэтика майӗ-мелӗсем вӗсем пӗр-пӗр художествӑлла идейӑна (концепци) уҫса памалли «хатӗрсем» ҫеҫ-ҫке-ха. Ҫавӑнпа та чӑн малтан поэт сӑнлакан илемлӗх тӗнчин пӗтӗмӗшле атмосферине, вӑхӑтпа тавралӑх-вырӑн паллисене сӑнаса пӑхни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Сӑмахран, хронотопа (Бахтин ӑнлавӗ) илсен мӗнре ун хӑйне евӗрлӗхӗ К.Иванов хайлавӗсенче. Урӑхла каласан, ӑҫта тата хӑш вӑхӑтра пулса иртеҫҫӗ поэмӑсенче кӑтартнӑ ӗҫ-пуҫсем? Автор вӑхӑт шӑвӑмне мӗнлерех палӑртать? Кунта ӗнтӗ историзм принципӗ пирки те пырать сӑмах. Ҫакна май Г.Хлебников пӗр статйинче «Нарспи» автоӗ «историлле реализм принципӗсене алла илеймен» тесе ҫырнӑччӗ. Е.Владимиров ҫав шухӑшах кӑшт урӑхларах ҫавӑрса калать: «поэмӑра чӑваш халӑхӗн авалхи пурнӑҫӗ ӳкерӗннӗ» тет. Чӑнах та, «Нарспире» те, «Тимӗр тылӑра» «Тӑлӑх арӑмра» та, «Шуйттан чуринче» те нимӗнле историлле событисен йӗрӗсем те, конкретлӑ саман паллисем асӑрхамастпӑр эпир. Вӗсенчи лару-тӑрусемпе ӗҫ-пуҫсене нимле «вунӑ ҫуллӑх» ҫумне те ҫыхса хума май килмест, Раҫҫейри революцилле хускалӑвӑн нихӑш тапхӑрӗпе те ҫыхӑнман вӗсенчи конфликт тӗввисем. Апла-тӑк автор мӗнле саманана сӑнлать-ха? Ман шутпа, эпир поэтӑн «Хальхи самана» поэминче конкретлӑ вӑхӑт паллисене (Чӗмпӗр шкулӗн историйӗпе И.Я.Яковлев ӗҫӗ-хӗлӗ) курма пултарӑттӑмӑр. Кунта чӑнах та критикӑлла реалистсем шыракан «историзм» пулмаллах. Ытти поэмӑсенче автор, ҫирӗммӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче, революци тӑвӑлӗ хускалнӑ саманара пурӑннӑ ҫын, ҫав кунсен тискерлӗхне (пӗтӗмӗшле илсен, цивилизаци илсе килнӗ «ҫимӗҫсене» те) йышӑнманран, хӑй идеалне иртсе кайнӑ аваллӑх кунӗсенче (е пуласлӑхра?) шырамасть-ши? Тен, ҫавна пула поэт хайлавӗсенче вӑхӑт шӑвӗмӗ мифологи саккунӗпе йӗркеленет, пурнӑҫ юхӑмӗ вара, ҫӗрле пӗлӗт хушшинче иртнӗ пек, пин

çулхи аваллăх сĕмĕпе витĕнет. Вăхăтăн историлле конкретлăхĕ çухалса, поэт фантазийĕ çуратнă мифологилле чăнлăха куçать. Чăнах та, акă, «Шуйттан чури» трагедире вăрçă хирĕнче икĕ пĕр тăван вилесене ухтарса-çаратса çӳренине куратпăр эпир. Анчах та миçемĕш ĕмĕрте, миçе тинĕс леш енче пулнă кунашкал тискер ĕçсем? Кăна пĕлеймсетпĕр. Сăнни чăвашăн тейĕпĕр, ыттине пĕтĕмпех абстрактлă типизаци мелĕпе сăнланă. Ман шутпа, ку поэта çитнĕ те, мĕншĕн тесен унăн творчество уствновки çапларах. Чи кирли – пурнăçри пулăмсемпе ларутăрусен философилле тĕшшине «шĕкĕлчесе» илесси. Философилле чăнлăх поэтшăн этем чунĕнче, ырăпа усал кĕрешĕвĕнче; социалла-историлле фон çакна çеç пăхăнать, вăл иккĕмĕш планра. Хайхи «Нарспире» «укçапалла эрехех çынна ăсран кăларать» тени тĕрĕсех-мĕн. Çăткăн этем ылтăншăн чунне шуйттана сутать. Романтизмла трагеди формит автора философи ыйтăвĕсем (ырăпа усал, пурнăçпа вилĕм) тавра шухăш çавăрма май парать, индивидуализмла сознанин чикĕсĕр хăватне, ун малĕмĕтлĕ туртăмĕсене шалтан кăтартма пулăшать. Çапла вара, пурнăç чăнлăхне реализм çеç мар, ытти художествăлла формăсемпе усă курса та уçса пама май килнине куратпăр эпир. Чăн та, романтизмла трагедире, ун формине кура, пурнăçăн мифологизациленĕ моделĕ тĕпре те пулма пултарать. Калăпăр, шуйттан, пирĕшти, илемлĕ сăнар пулса, çынсен кулленхи хутшăнĕвне кĕреççĕ, ырăпа усал хушшинчи кĕрешĕве çивĕчлетеççĕ, магилле калорита вăйлатаççĕ. Çавăнпа-тăр тĕп кĕрешӳ çынсем хушшинче мар, çӳлте, турăпа шуйттан хушшинче (этем чунĕшĕн) пынăн туйăнать. Тытăçу час-часах усал (тĕрĕсмарлăх) çĕнтерниле вĕçленет. Анчах та халăхăн мифологилле ăнĕнче те çирĕп тымар янă-çке вăл çав кайран леш тĕнчере тĕрĕслĕх çиеле тухасса шанса тăни, ку тĕнчере тунă усал ĕçсемшĕн, вилсен, явап тытма тивессе ĕненни. Кунта чăвашсен авалхи тĕнĕпе пĕрлех зороастризмпа буддизм витĕмĕ те çук мар-тăр. «Шуйттан чуринче» мул пуçтарма вăрçă хирне тухса кайнă пĕр тăвансен пуçĕ çине амăшĕн хаяр ылханĕ ӳкет. Ас тăватăр-и: Нарспипе Сетнере Михетерпе карчăкĕ мĕнле хаяррăн ылханса тухса каяççĕ пӳртрен.

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!

Кунта ылханакана (айăпсăртан) пуçне пулнă тени те пуртăр-ха. Çапах та Нарспипе Сетнер пуçĕ çине ўксе, çав ылхан вĕсен шăпине витĕм кўмерĕ-ши? Авторăн художествăлла концепцийĕнче çак шухăш пурри иккĕлентермест. Çакăнтан хăрушăрах ылхан çук та пуль. Анчах та çакна каламалла: К.Иванов хăй пурăннă саманара чăваш халăхĕн ăс-кăмăл пурнăçĕнче тĕн-тĕшмĕшпе ĕненў пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине витĕр курнă. Пин çул хушши йĕрке çапла пулнă-çке: ашшĕ-амăшĕн, ваттисен пилне тивĕçлĕ ача-пăча этем ретлĕ, пархатарлă çын шутĕнче тăнă, пил-пехил малĕмĕт, тĕрек-шанчăк панă. Ылханлă этем «çамки» çинче инкек паллисене шыранă. К.Иванов хайлавĕсенче ылхан е пил пĕлтерĕшĕ яланах халăх педагогикинчи пĕлтерĕшпе тўрĕ килет тата геройсен шăпине витĕм кўрет. Паллах, ку çынсем йăлапа çыхăннă маги хăватне ĕненнинчен килет, çавна пула К.Иванов хăй хайлавĕсен психологизмне вăйлатать. Çавăнпах мар-и-ха каçа хирĕç тухатмăш карчăк ылханса çула кăларса янă Чĕкеçе хăрушă инкек кĕтессе пирĕн чун туйсах тăрать. Çакна май акă мĕне палăртса хăварасшăн: «Тимĕр тылă» та, «Тăлăх арăм» та, жанр тĕлĕшĕнчен пăхсан, чăн-чăн поэмăна çывăххи куç кĕретех. Юмах-халап мар вĕсен никĕсĕнче, ку вăл – чăн пурнăç. Мĕншĕн тесен Силпи чăвашĕсем те, ытти поэмăсенчи чăваш çыннисем те çурма мифологилле тĕнчере, тĕн-тĕшмĕш «танатинче» пурăнаççĕ-ха. Чăвашсем обществăлла ăнпа политика, правăпа вырăс тĕнĕ вăйлă витĕм кўме пуçлас умĕнхи тапхăрта пурăнаççĕ-ха. Каларăмăр ĕнтĕ, мифологи те хăйне майлă чăнлăхах, анчах ун тымарĕсем сĕм-авалăх еннелле каяççĕ. Пурнăç çиппи пин çул каяллахипе хальхине çыхăнтарать. Паянхи ĕмĕрлĕх çăл куçĕнчен сĕткен илет.

Тĕн-тĕшмĕшпе, чăвашăн кивĕ ĕненĕвĕсемпе, йăли-йĕркипе çыхăннă япаласем «Нарспире» те сахал. Вĕсене авторăн пĕтĕмĕшле концепцийĕнчен уйăрса илсе хаклама юрамасть. Сăмахран, юмăç пăхни, чўк туни, вĕрў-суру чĕлхин тĕсĕсем, ылхан, пехил, хура кайăк – усал-тĕсел палли т.ыт.те. Поэмăн пĕтĕм ăш-чикĕ мифологилле сывлăшпа сывлать. Турă тĕнчене ултă кун хушшинче пултарнă май мĕнле материалпа усă курнă? Çавăн майлах К.Иванов та хăй поэмин «керменне» мифологи никĕсĕ çине лартнă, мифологи сывлăшĕпе чĕм кўнĕ. Пурнăç материалне вăл пирĕн ĕмĕр пуçламăшĕнчи историлле чăнлăхран илмен, унăн кĕрлевлĕ те пăлхаварлă событийĕсене асăрхаман та тейĕн. Философи критерийĕсемпе виçсен Силпи ялĕн сăнарĕнче (ирхи

сывлăм пĕрчинче çĕр чăмăрĕ тĕкĕрленнĕ пек) пĕтĕм чăваш тĕнчи ӳкерĕннине асăрхатăн. Вăхăт шăвĕмĕ-кусăмĕ кунта миф саккунĕсене пăхăнать. Силпи çыннисен пурнăçĕ, çавра юрă майлă, пĕр тапхăрне сăнлать автор. Силписен кулленхи пурнăçĕ çут çанталăк чĕрĕлĕвĕ-улшăнăвĕпе «юн тымарĕнченех» çыхăннă. Мифологилле вăхăт хăйне майлă циклран тăрать: çуркунне, çулла, кĕркунне, хĕлле. Çак цикл тăсăмĕнче çут çанталăк чĕрĕлет е ешерсе «çимĕç кӳрет», вилет. Çапла вара, пĕр çавра цикл теприпе улшăнса пынă май вăхăт та шăвать. Анчах та ку хронологие пăхăнакан историлле вăхăт е «осевое время» тет ăна К.Ясперс мар. Чăваш ăнĕнче ял-хуçалăх календарĕн принципĕсем хуçаланаççĕ-ха. Çакна Т.С.Пассек та палăртать. Чăваш халăхĕн мифологилле ас тăвĕмĕнче чăваш ăс-тăнĕн таçти шалти, вăрани-вăранми тĕлĕрекен «кĕтесĕнче» (подсознани) çын ватлăхĕпе хĕллехи çут çанталăк вилĕмне çыхăнтарас ăнлав упраннинç асăнать вăл (Пассек Т.С. Круг чувашских праздников. // Академику Н.Я.Марру. М.,–Л., 1935, 465 с.).

Эппин, поэмăри мифологилле вăхăт паллисене пăхар-ха. Реализмла хайлавсенче, сăмахран, эпир пĕрре анчах мар çакăн евĕр пуçламăша курнă: 18...-мĕш çулăн çав-çав уйăхĕпе кунĕнче, çав-çав хулара çакăн пек ĕç пулса иртрĕ. Ку ĕнтĕ историлле конкретлăх. «Нарспи» поэмăра ӳкерсе кăтартнă пурнăçăн «аслă юханшывĕ» пуш уйăхĕн вĕçĕнчен йăл илсе, сарăлса каять. Çуркунне. Хĕвел ăшăтать тĕнчене, çут çанталăк чĕрĕлет, ешерме пикенет. Халăхла каласан, «хĕл ăйхинчен вăраннă» тĕнчере çутă ташлать. Кунта тĕнчене тытса тăракан Хĕвел пĕлтерĕшĕ шутсăр пысăк, унăн мифологилле пĕлтерĕшĕ çухалман-ха. Автор хĕвеле хĕрĕх хутчен асăнать, унра магилле хăват пуррине палăртать. Ку ĕнтĕ халăх ĕненĕвĕпе çыхăннă, чăвашсем, хăйсен йăлипе, çуркуннесерен хĕвеле кучченеçпе кĕтсе илнĕ, «уй-хирсене юр-пăртан хăвăртрах тасатма ыйтнă» (Денисов П.В. Тĕн пуçланса кайни. Шупашкар, 1962, 89 стр.)

Малалла пирĕн куç умне илемлĕн те мăнаçлăн сарăлса ларакан Силпи ялă тухать. Пуян ял ку, «хула тийĕн инçетрен». Сăмах май, тĕпчевçĕсем çак вырăн пирки пур вăхăтра та шутсăр хытă иккĕленнĕ: ай, чăнах та пулма пултарнă-ши вара чăвашсен те пуян ялсем? Çук, капла калани вăл эпитет çеç тесе каланă нумайăшĕ, К.Иванов шурă хут çине хурапа çырса хунине ултав тесе, каллех хăйсемле çаптарма тытăннă. Силпире Михетерсĕр пуçне ыттисем ыйткалакан пек чухăн, пулсан та

аслă урамра çеç пулĕç пуянсем, ытти урамсенче шăкăрин выçă лараççĕ, унта пуянсем чухăнсене ĕçлеттерсе чунĕсене илеççĕ т, ыт. те., т. ыт. те. Хăй кĕтĕвĕ патĕнче шăхлич калакан ача, хырăмĕ выçнипе, Силпи еннелле пăхнине халăх чухăн пурăннипе çыхăнтарнине (литературоведсен хырăмĕ выçмасть тейĕн) тата миçе тĕпчев ĕçĕнче курмарăмăр-ши? Ку ĕнтĕ историксен тимĕр-бетонланă концепцийĕпе тĕревленĕ «чăнлăх»: класлăх принципĕ пур çĕрте те малта пулма тивĕç-çке! Шел, çакăн пек установка çамрăк тĕпчевçĕсене те хăйсем тĕллĕн шухăшлама чăрмантарать-ха. Вĕсем хушшинче те тĕл пулаççĕ-ха Силпи ялĕ пуян пек курăнни вăл – психологилле эффект е иллюзи çеç текенсем. Çапах та эпир вĕсем хыççăн каяр мар-ха, ку вăл шуçлак, суя çул. Силпин ытарйми илемĕпе пуянлăхĕ авторăн художествăлла концепцийĕпе тӳреммĕнех çыхăннă. Çăкăр-тăвар, укçа-тенкĕ, килçурт тĕлĕшĕнчен илсен, кунти чăвашсенчен ытларахăшĕ чăнах та начар пурăнмаççĕ пулас («мулĕ пур-тăр çав вĕсен»). Çапах та ăс-кăмăл, чун пурнăçĕ еплерех-ши вĕсен? Мĕн хаклăрах вĕсемшĕн: мул е чун пуянлăхĕ? Кун пирки Михетер иккĕленмен нихçан та: мул пулсан, чуна сутăн илме те (е сутма та!) пулать. Нарспишĕн вара «пуянлăхра анчах мар, ыр курасси çыннинчен». Акă вăл тĕп конфликт шăнăрĕ. Мулпа чунлăха икĕ тĕрлĕ курса хаклани, кашниех хăйĕн тĕрĕслĕхне вĕçне çитиччен хӳтĕлени. Çапла вара, К.Иванов поэзийĕн вилĕмсĕрлĕхĕ çакăн та лайăх курăнать: чăваш тăванăмсем, çитет пулĕ килтерĕшре, йăла-йĕрке картинче хупăнса, хырăм нушипе çеç сапăрланса пурăнма. Чун, ăс-кăмăл ыйтнине те тивĕçтересчĕ, историн магистраллĕ çулĕ енне туртăнар, гуманизм ялавне çӳлерех çĕклер! Ку ĕнтĕ поэта канăçсăрлантарнă вун-вун ыйтуран пĕри çеç-ха, паллах.

Эпир поэма пуçламăшне таврăнар-ха. Çут çанталăк чĕрĕлсе ешерчĕ, калăм та иртрĕ. Чăваш акана тухма хатĕрленет. Çакăн пек илемлĕ тапхăрта Силпире ытарайми хитре Нарспи ӳссе çитĕннине пĕлтерет пире автор. Ашшĕ ăна çураçса та хунă иккен. Çут çанталăкпа силписен пурнăçĕ пĕр кĕвĕпе «ташлаççĕ» тейĕн, çак параллелĕхе вĕçне çитиччен йĕрлеме пулĕччĕ: «пиçсе çитнĕ» Нарспи мăшăрланать, йĕркипе ача та çуратмаллаччĕ унăн... Çавăн пекех çут çанталăк та, уй-хир те хăйĕн «туйне» тăвать: силписем суха туса, тырă акаççĕ, çĕр пĕтĕленет, çуратма хатĕрленет. Çĕр хĕсĕр мар, анчах Нарспи çут çанталăк панă тивне пурнăçлаймарĕ – ăна ирĕксĕрлерĕç.

Акă мĕнре трагеди.

Поэмăра çут çанталăк хăйĕн ĕмĕрхи саккунĕпе пурăнать. Чăваш тĕнче туйăмĕ этемпе çут çанталăк хушшинчи аслă çыхăнăвăн пин-пин «çиппине» сисĕмлĕн туять. Чăваш – хăй те çут çанталăк ачи, ăна пăхăнтарас, унпа хуçаланса туйăм уншăн ют-ха. çавăнпа хура вăрманран хӳтлĕх кĕтеççĕ час-часах поэма геройĕсем, ун ытамĕнче чунне сиплеççĕ. Кунта мифологилле ăн ĕлĕкхиллех, кирĕк тивниех «тасан» упранать-ха.

«Çăтмах пекех туйăнать Силпи чăваш ялĕнче» тет автор. Эпир ĕненетпĕр. Пин çул упранакан йăласемпе вăйă-уявсенче мĕн чухлĕ поэзи! «Çĕр çĕмĕрсе каччăсем ташлаççĕ», калăм эрнинче ĕçкĕ-çикĕ туса савăнаççĕ чăвашсем, тăван тăвана, ратне-хурăнташа хăналать. Ак çак «кодексра» хресчен чунĕ яриех уçăлмасть-и вара:

Нумай ĕçле, нумай çи,
Хыгă тарла, хыгă ĕç!

Çĕр ĕçченĕн нушине ăнланакан çын кунашкал морале сивлеместех. Акана тухнă хресчен турра кĕл тăвать: «Эй, турăçăм, сывлăх пар, акнă тыррăма ăнтар!» Поэмăра авалхи чăваш йăлисенчен нумайăшĕ йăлтăркка енĕпе тухать вулакан куçĕ умне. Анчах та акă мĕн: автор пĕрре те этнографизм енне сулăнмасть, икĕ-виçĕ сăмахпа, сăрсене перекетлесе ӳкерет вăл йăла-уявпа çыхăннă самантсене. Этнографшăн çителĕксĕр пулĕччĕç çав тулли мар ӳкерчĕксем, вăл пĕтĕм процеса мĕн пуçласа вĕçне çитиччен курас тейĕ. Эстетика виçипе, пĕр-пĕр йăла пулăмĕн эстетикăлла енĕпе философилле пĕлтерĕшĕ тĕпре. К.Иванов поэт та, художник та пулнă май искусствăн чи шалти вăрттăнлăхĕсене уçма вăй çитернĕ: вăл икĕ-виçĕ йĕрпе хальхаль çурăлас пек «папкасем» çеç ӳкерсе хурать. Вĕсем вара пирĕн чуна сĕртĕнсе, çурăлаççĕ пĕтĕм илемĕпе, сарăлаççĕ. Ку ĕнтĕ вулакан чунĕ мĕн тери çунатлă пулнинчен нумай килет.

Çакна май поэтăн типлăх ăсталăхĕ пирки кĕскен каласа хăварасшăн. К.Иванов поэмисенче реализмла типизаци принципĕсем пачах тĕл пулмаççĕ. Уйрăмах индивидуализаци принципĕ поэт палитринче çукки куçа тирĕнет. К.Ивановăн типлăх принципĕсем пачах урăхла. «Нарспире» ӳкернĕ сăнарсем икĕ ушкăна пайланаççĕ: пĕрисем этем ирĕкĕшĕн тăраççĕ, теприсем ĕмĕрхи йăлапа пурăнасшăн. Çак икĕ ушкăн вăл ырăпа усалăн абстрактлă символланă палăрăмĕ те. Варринче тăрас текен тĕрек тупаймĕ кунта. Типсем вырăнне символсем пирĕн умра. Икĕ

ушкӑнне те контраст мелӗпе хире хирӗҫлетнӗ. Семиотика меслечӗпе тишкерме ытла та меллӗ пулмалла «Нарспири» сӑнарсен системине. Семиотиксем хайлавӑн пӗтӗм ӑшчикӗпе формине хӑйне майлӑ «паллӑсен» чӗлхине куҫараҫҫӗ. Ҫавӑн пек паллӑсем поэмӑра ҫиелтенех курӑнаҫҫӗ: сӑмахран, Нарспи – хитре, Сетнер – чухӑн, йӑваш, Михетер – пуян, Тӑхтаман – хаяр та нӗрсӗр. Поэт ҫурма тонсене кӑмӑлламасть. Кунта эпир тӗп «паллӑсене» ҫеҫ кӑтартрӑмӑр. Вӗсем пӗри те улшӑнмаҫҫӗ, сюжет аталаннӑ май эпир вӗсен тӗрлӗ комбинацийӗсене ҫеҫ сӑнама пултаратпӑр. Реализмла искусствӑри пек, характерсен аталанӑвӗ-улшӑнӑвӗ пулма тивӗҫ мар кунта. Пӗр сӑмахпа, К.Иванов романтизм типизацийӗн майӗ-мелӗсемпе усӑ курать. Трагеди жанрӗнче вара ку вырӑнлӑ та (жанр ыйтӑвӗсене эпир кунхинче хускатмӑпӑр).

Ҫапла вара эпир ҫак шухӑш патне пырса тухатпӑр: поэма авторӗ ӗмӗртенех килекен чӑваш пурнӑҫӗн тӗп енӗсене, чӑваш тӗнчине масштаблӑн пӗтӗмлетсе сӑнлать, халӑх чунне (чӑваш чунӗ – кайӑк чунӗ) уҫса пама тӑрӑшать. Акӑ текста тепӗр хут пӑхса илер эппин, «чӑваш» сӑмах «халӑх» синонимӗ иккенни тӳрех курӑнать унта. «Силпи чӑваш ялӗнче», «ахӑр кунти чӑвашсен», «мӗнле чӑваш ӗҫмен-ши?!, «выртать чӑваш улпут пек», «чӑваш часах урӑлмасть», «чӑваш ҫынни ҫывӑрать», «пӗтрӗ чӑваш ӗмӗрӗ», «чӑваш кӗпи улача», «ӗҫчен чӑваш вӑкӑр пек», «чӑваш хире тухмарӗ», «чӑваш ларать мунчинче»...

XVIII-XIX ӗмӗрсен чиккинче нимӗҫ романтикӗсем, поэзипе философие «пӗтӗҫтерсе», ҫӗнӗ мифологи пултарас ыйтӑва лартаҫҫӗ. Вӗсен шухӑшӗпе, часах поэзин «ылтӑн ӗмӗрӗ» килсе ҫитмелле. Вӗсем «мифологилле чӑнлӑхран» культ туса хураҫҫӗ. Эпир халлӗхе конкретлӑ фактсем ҫине таянмастпӑр пулин те, К.Иванов нимӗҫ романтикӗсен программипе паллашма пултарни пирки иккӗленместпӗр. «Нарспи» – чӑннипех те ҫӗнӗ вӑхӑтри «мифологи». Эпир ҫӳлерех асӑннӑччӗ ӗнтӗ: поэт философилле чӑнлӑха ҫӗнӗ самана (революци тапхӑрӗ) ҫыннин класла-политикӑлла тавракурӑмӗнче шырамасть тесе. Автор хамӑрӑн авалхи несӗлӗмӗрсемпе йӑх пуҫӗсем пурнӑҫа мӗнле йӗркелесе пынине, тӑван чӗлхепе чӑваш чунне епле упраса, паянхи куна ҫитернине ӑнкарма тӑрӑшать темелле. Чӑваш вырӑспа е ытти халӑхсемпе хутшӑнма та пикенмен-ха – поэмӑра ют чӗлхерен илсе усӑ курнӑ пӗр сӑмах та ҫук. Тап-таса та шӑнкӑрти чӑваш чӗлхипе

çыракан поэт тăван сăмах хевтине туйтарать. Тĕнĕ те чăвашсен хăйсен-ха, вăл – чи авалхи асаттесем куç пек упраса, тирпейлĕн тытса пынă пуянлăх. Вырăс тĕнĕн шăрши те сисĕнмест Силпире, апла-тăк колонизаци хĕçĕ çитеймен. Çеçпĕл калашле, «авалхи ĕмĕрсен ĕмĕлки хыçĕнче чăваш çĕрĕ» поэта курăнать. Нумай сăн-пулăм кунта каç сĕмĕ-чаршавĕпе витĕннĕ ĕнтĕ, мĕн чухлĕ «шаларах» кĕретĕн, çавăн чухлĕ мифологи тĕнчи уçăмлăрах палăрать-çке-ха, тĕрлĕ маги хăвачĕ чĕрĕлет. Турăпа Хĕвел чăвашăн пурнăçне сăнаса, «витĕм парса» тăни куç умĕнчех. Çавăнпа та «турă çырни», пӳлĕхçĕ ирĕкĕ çынсене пăхăнтаракан хăват тата тĕшмĕше ĕненме хистекен пулăмсем шутланаççĕ. Ваттисене асăнасси – сăваплă йăла; сиплисем чӳк тăваççĕ, ырра-усала çырлахтарма тăрăшаççĕ, унсăрăн инкек пулать.

Акă пĕр эпизода тĕсесерех пăхар-ха. Трагедилле ĕç-пуçсем хускалса кайсан, Сетнер амăшĕ юмăç патне утать. Çак сыпăкра К.Иванов ăсталăхĕ, авалхи грексен трагикĕсенни пек, чăнчăн классикăлла трагеди шайне çĕкленет. Ватă юмăç хăй ĕçĕн ритуалне сумлăн тăвать, хăйĕн вăрттăнлăхĕнче темле асамлăх пуррине туйтарать. Грексен ку ĕçĕ оракулсемпе жрецсем туса пынă. «Шурă старик» хура пӳртре çăпатине сапласа ларать. Шалта тĕттĕм, тĕнĕ пек çеç чӳрече. Пӳртре хăйне евĕр магилле сывлăш хуçаланать. Юмăç – Сетнере усал-тĕсел ернин сăлтавне ăнкарма пултаракан çын. Вăл пӳлĕхçĕ çырнине вулать. Кунта кашни деталь пĕлтерĕшлĕ. Акă тĕнĕрен хĕвел çути кĕрсе юмăçăн кăвак çӳçĕ çине ӳкрĕ, ăна çутатрĕ. Çак асамлă çыхăну Сетнер синкерне тĕшмĕртме пулăшать те – Хĕвел хăй хурать тейĕн ваттин чĕлхи çинчи çак сăмахсене:

> «Çамки шăтăк – хупăнмĕ,
> Чĕри татăк – сыпăнмĕ».

Турри çапла çырнă иккен. Трагедире çакăн евĕр пĕлтерни вăхăт çитсен яланах пурнăçланать, унтан иртме те, пăрăнса юлма та çук. Çак чăнлăха Сетнер вилĕмĕ çирĕплетсе парать вĕçĕнче. Геройăн урхамах учĕпе икĕ вăйлă алли пур, анчах та вĕсем ăна пулăшаймаççĕ – шăпи («усал тĕнче») унран вăйлăрах. Автор сăмахĕнче Сетнер пирки: «мĕскĕн» тени пур, каярахпа: «чирлĕ Сетнер» те тенĕ. Ку – кĕрешӳçĕ мар. Хăй чысĕпе ăраскалне хӳтĕлеме паттăррăн çĕкленнĕ Нарспин хăй çинех шанма тивет, айккинчен пулăшу кĕтме çук. Çапла вара, «Нарспире» юмăç сăнарĕнче чăн-чăн мифологилле магилĕх пур-

рине куратпăр, унăн художествăлла функцийĕ – трагизма тарăнлатассинче.

Е тата Нарспи «вилĕм яшки» пĕçернине илсен, кунта та çынсен ăс-кăмăлĕ мифологи тĕнчин ырă-усал вăйĕсемпе тарăнăшранах çыхăннине, вĕсен мăн хавалне туйса тăнине асăрхама пулать. Наркăмăшăн хаяр хăвачĕ чăннипех хăй ĕçне тутăр тесе, Нарспи яшка вĕретнĕ май вĕрӳ-суру чĕлхипе усă курать. Нарспишĕн ку вăйă мар, вăл çын вĕлерме хатĕрленет. Апла пулсан, магилле вăй-хăватсене çураçтарса, вĕсенче пулăшу шырамалла ун. Кунта каллех трагеди психологизмĕ чи çӳлти шая çĕкленет – Нарспи çур утăм тусанах тĕпсĕр шырлана чăмас пек туять хăйне, пĕтсен пĕтем, урăхла май çук тет. Тăхтамана наркăмăшлă яшка пĕтерчĕ, анчах та Нарспи пурпĕр ун «тыткăнĕнчен» хăтăлаймасть-ха: тухса тарнăскерпе юнашарах «вăрман ăшĕнче хура кайăк чайлатать», Тăхтаман чунĕ арăмне шыранăнах туйăнать. Мифологилле ăншăн вилнĕ çын чунĕ ӳтĕнчен уйрăлса хăй тĕллĕн çӳрени – чăн пурнăçах.

К.Иванов çырнисенче мифологипе тĕпрен çыхăннă магилле пулăмсем татах та нумай тĕл пулаççĕ. Статьяра вĕсем çинче тĕплĕн чарăнса тăраймăпăр. Юлашкинчен чӳк пирки çеç кĕскен каласа хăварасшăн. Поэт «Çырнисен пуххинче» (1957) чӳк йăлипе çыхăннă пуян материал пур. Ăна вăл хăй çуралса ӳснĕ тăрăхри чăвашсем хушшинче çырса илнĕ. Вăл вăхăтра ку йăлана чăваш çирĕп тытса пынă-ха. «Шуйттан чури» трагеди, «Тăлăх арăм» поэма, сăмахран, чӳкпе вĕçленеççĕ. «Нарспире» те, ман шутпа, ĕç-пуçсем чӳкленипе вĕçленеççĕ. Анчах та кунта лаша выльăх мар, çынсем чӳкленеççĕ. Çакăнта ку таранччен асăрхаман вăрттăнлăх пурах пек. Авторăн философилле тарăн шухăш тĕкĕрĕнче чăваш халăхĕн историлле шăпипе кун-çулĕ сăнланман-ши? Епле пулсан та гени калас тени – пĕр кунлăх чăнлăх мар. Геройсен вилĕмĕ (пиллĕк таран) чăваш халăхĕ пĕтессипе çыхăннă тесех çирĕплетмĕпĕр. Çапах та çакăн пек йышпа чӳклени пĕчĕк Сентти (хамăр наци пуласлăхĕ) телейĕшĕн пулмарĕ-ши вăл? Аслă ăру – Михетер, карчăкĕ, Тăхтаман – суя турра (мул-пуянлăха) пуç çапса, пӳлĕхçĕ кăмăлне юраймарĕç, паллах. Нарспипе Сетнер (тепĕр ăру) ваттисенчен килекен чуралăх йĕркине сивленипе çеç ăна улăштарма çуккине ăнланчĕç. Ирĕксĕрленине тӳсейменскерсем, урăхла хĕç-пăшал çукран, хăйсем ирĕкĕпе чӳкленчĕç. Сетнер çамки çине картни те çакăнтах кĕрет вăл. Этем хăйне хăй чӳклени – паттăрлăх-

çке вăл, уйрăмах ун тĕслĕхĕ килес ăрусемшĕн кирлĕ. Камăн та пулсан çĕкленмеллех-çке чуралăх йĕркисене хирĕç. Чӳкленес пулать.

Кам татса калĕ: мĕн чухлĕ чĕрĕ вăй, шанчăк, хавхалану хавалĕ панă Нарспипе Сетнер чăваш тăван пулса çĕр çине килнĕ ăрусене?!

Г.Я.Хлебников

## КАМ-ШИ ВĂЛ НАРСПИ:

### идеал-герой е трагикăлла йăнăшакан çын сăнарĕ?

Юлашки вăхăтра пирĕн дисскусисенче хамăрăн наци мухтавне – Константин Иванов çырнă «Нарспи» поэмăна – хурлас е тиркес туртăм палăра пуçларĕ. Ырă çын сăнарĕ пулма пултарать-ши упăшки çине алă çĕклекен, ăна вĕлерсе пăрахакан хĕрарăм? – теççĕ çав тиркевçĕсем.

Кунта сăмах хăйне хытă хĕнесе асаплантаракан упăшкинчен хĕн куракан Нарспи пирки пырать. Михетерпе арăмĕ хăйсен илемлĕ те ĕçчен хĕрне ирĕксĕрлесех ватă та юратман çынна Тăхтамана, вăл пуян тесе, качча пама калаçса татăлаççĕ. Нарспийĕ вара, унччен ашшĕ-амăшĕ каланине яланах итленĕскер, вĕсен ирĕкĕнчен тухса, хăйĕн чунтан юратакан савнийĕпе Сетнерпе туй умĕн вăрмана тарса пытанать. Анчах Михетер тарçисем вĕсене тул çутăлсан шыраса тупаççĕ, тытса килеççĕ. Ашшĕпе амăшĕ хĕрне хытă хĕнеççĕ, Сетнерне йытă пек туллаççĕ. Нарспие вара вăл юратман ватă пуяна Тăхтамана ирĕксĕр качча парса... селĕм туй тăваççĕ. «Пысăк туй та пăсăк туй...» – тесе тĕксе илет поэт. Нарспи йăваланса макăрать, ашшĕ-амăшне ӳкĕтлет – усăсăр.

Каярахпа Нарспи упăшки хăйĕн пулас арăмĕ туй умĕн савнийĕпе вăрмана тарса кайни çинчен пĕлет те, кĕвĕçнипе, арăмне урса кайса тенĕ пек хĕнеме тытăнать. Çине-çинех малашне те унăн саламачĕ «анать-çке пăтаран». Анчах Нарспи, чăтать-чăтать те юлашкинчен чун хавалне пухса... хаярланса каять, хăйĕн ватă та пӳтсĕр упăшкине... пĕтерме шутласа хурать. Пĕррехинче вара, макăрса та ылханса, вăл наркăмăшлă яшка пĕçерет, акаран килнĕ путсĕр упăшкине çитерет.

Тăхтаман хытă асапланса,,, вилсех каять. Çапла, хăрушă та тискер ĕç тăвать Нарспи!

Анчах кама айăпламалла-ши çак хура ĕçшĕн? Нарспи, чăн та, тӳрремĕнех айăплă. Анчах вăл çеç-ши?.. Чăн пурнăçра та çынна суд тумасăр айăпламаççĕ. Ахальтен мар суд кодексĕнче «презумция невиновности» текен закон пур. Тепĕр чухне пурнăç хăй питех те йывăр, кăткăс лару-тăрăва кĕртсе ӳкерет. Калăпăр, вăрă-хурах тапăнсан, айăпсăр çыннăн темĕнпе те (çав вăхăтра пăшалпа та) хӳтĕленме ирĕк пур.

Тепĕр енчен, илемлĕ хайлава тишкерсе тĕрĕс хаклас тесен, искусствăпа вăл ӳкерсе паракан чĕрĕ пурнăç хушшинче пысăк уйрăмлăх пуррине шута илме тивет. Илемлĕ литература, чăн пурнăçах сăнланă чухне те, ăна чи пысăк илем витĕр – идеал витĕр – сăнласа парать. Çав илемлĕх çутинче пурнăçăн пытарăнчăк та тарăн енĕсем яр уççăн курăнса каяççĕ: эпир унччен асăрхаман ыррипе усалли, начаррипе лайăххи т.ыт.те. куç умне тухаççĕ. Вара эпир, вулакансем, кĕнекере çырса кăтартнă ĕçсене хамăрах хаклама тытăнатпăр. Пурнăçри тĕрĕслĕхпе суялăха çивĕччĕн уйăракансем пулса тăратпăр.

Эппин тимлĕрех пăхса тухар-ха «Нарспи» поэмăна: мĕнле тĕллевпе, мĕнле пурнăç чăнлăхĕпе уçса кăтартасшăн çырнă-ши ăна поэт? Ăçталла кайма, мĕн тума чĕнесшĕн вăл пире?

Константин Иванов тĕлĕнмелле ăста, çав тери пултаруллă, генилле поэт пулнă. Вăл сисĕмлĕ лирик, тарăн психолог-тишкерӳçĕ, ăста художник, сăнарлă чĕлхе ăсти. Вăл хăйĕн ырă геройĕсене чăн-чăн чăваш çыннисен кăмăлне, наци характерĕн пархатарлă енĕсене парса пире питĕ çывăх та хаклă тăвансем пек тăвать.

Мĕнешкел илемлĕн, хĕвел йăлкăшса тухать акă пирĕн ума хĕр чухнехи Нарспи! Вăл ырă кăмăллă, питĕ ĕçченскер, тин çеç çурăлнă чечек пек чĕрĕ куçлă, чĕвĕлти чĕкеç сассиллĕ, чăн-чăн айăпсăр чун темелле. Хавхаланса, юратса çеç ĕçлет вăл ашшĕ-амăшĕн килĕнче: юрла-юрла тĕрĕ тăвать, пир тĕртет, хăна килессе пĕлсенех – чăвашăн ырă йăлипе тутлă апат хатĕрлеме тытăнать. Каçхине вара вăййа тухса хăйĕн хаваслă сассипе, юррипе, куллипе тантăшсен кăмăлне çĕклентерет, хавхалантарать, савăнтарать.

Мĕнрен килет-ши Нарспин хĕр чухнехи илемĕпе телейĕ? – Çут çанталăк панă вăй-халĕпе киленсе, шухăш-туйăмне путармасăр хăйĕн чунне хĕстермесĕр ырă та çепĕç кăмăлне ирĕке

ярса пуріннаран, тусě-юлташěсемпе пархатарлă пулнăран. Кунта, паллах, талантлă поэтăн чун-чĕри пуян, ăсĕ-сисĕмĕ çивĕч пурнăçа тарăн пĕлни сисĕнеççĕ. Çакăнта, поэт хăйĕн аслă учителĕн Иван Яковлевич Яковлевăн çутлăхпа гуманизм идейисене ăша хывни, вĕсене малалла аталантарни те палăраççĕ. Ку вăл, чи малтан, – тăван чăваш халăхне чунтан юратса ăна малалла кайма мĕнпур вăй-халпа, пултарулăхпа тăрăшасси, ăна тĕттĕмлĕхрен çутта тухма пулăшасси. Çав вăхăтрах çамрăк поэт француз гуманисчĕн Руссон вĕрентĕвне те питĕ кăмăллать: этем, çут çанталăк ачи, çут тĕнчепе килĕштерсе, çынна çутта тухма пулăшсан çеç телейлĕ пулма пултарать текен шухăшне уйрăмах чĕре çумне илнĕ. Çавăнпах пулĕ, «Нарспи» авторĕ хăйĕн ырă геройĕсене çут çанталăкпа та, халăх пурнăçĕпе те тачă çыхăнтарса уçса парать.

Кунта тата «Нарспи» поэмăна çырнă тапхăрта пăлхаварлă самана пулнине, Раççейри пĕрремĕш революцин (1905-1907) пысăк витĕмне палăртмалла. Константин Иванов, чăваш ялĕсенче чухăн хресченсем çĕр сахаллипе тарăхса пурăннине, патша самодержавийĕ вырăс мар халăхсене уйрăмах хĕстернине курнăскер, Чĕмпĕрти рабочисемпе студентсен çивĕч ыйтăвĕсене кăмăллать. Кун çинчен Кĕçтентин французсен революцилле шухăшлă «Марсельеза» юррин сăввине вырăсларан чăвашла куçарни те лайăх палăрать. Унта революци шухăшĕ поэтăн уççăнах курăнать: «Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем! Тапран эс вăрçма, выçă халăх!» – тесе, юрра тăван халăхшăн та чĕнӳллĕ тăвать. Анчах çакнашкал пăлхавлă шухăшлă юрă текстне чăвашла куçарнăшăн çамрăк поэта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен кăларса яраççĕ. Ăна нихăш вĕренӳ ĕçне те илмелле мар тăваççĕ. Анчах поэт кăмăллать, çырма та хавхалантарнă учителĕ Иван Яковлев, кăшт тăхтасан, ăна каллех хăйĕн шкулне чĕнсе илет, чăваш чĕлхипе вĕренӳ кĕнекисем тата илемлĕ хайлавсем, вырăс т.ыт. литературăсен паллăрах ачапăча хайлавĕсене чăвашла куçарса кăларас ĕçе хутшăнтарать.

Çав вăхăтра ĕнтĕ Константин Иванов, пурнăçăн сивлек енĕсене лайăх пĕлсе çитнĕскер, «Нарспи» поэма шăрантарса кăларать. Унта вăл чăваш халăхĕн ĕлĕкрех пулса иртнĕ ĕçĕхĕлне, авалхи йăлисене сăнласа кăтартнă май паянхи пурнăçшăн та çивĕч ыйтусем хускатать. Этем вăйлă, анчах хăш-пĕр енĕпе вăл вăйсăр та, тет вăл.

Çакă çутă тĕнчере

Вайли ҫук та тӗнчере:
Шывсем ҫинче, ҫӗр ҫинче
Хуҫа пулса вӑл тӑрать.
Анчах вӑйлӑ этем те
Хӑй тӗнчине пӑхӑнать.
Укҫапала эрехех
Ҫынна ӑсран кӑларать.

Акӑ вӑл, поэт шухӑшӗпе, этеме телейлӗ пулма чӑрмантаракан тӗп сӑлтавсенчен чи пысӑккисем. Ҫынсене эрех ӑсран кӑларнине эпир паянччenех куратпӑр-ха. Аслӑ поэт ҫак усал хӑнӑхӑва хыттӑн сивлет. Поэма пуҫламӑшӗнчех эпир аслӑ уяв вӑхӑтӗнче хӑш-пӗрисем эрех ытларах ӗҫсен, пылчӑк ҫинче йӑваланса выртакан е мухмӑрпа супакан ҫынсене куратпӑр, вӗсем ака-сухана вӑхӑтра тухайманшӑн пӑшӑрханатпӑр.

Анчах ун чухнехи саманара тата хӑрушӑрах йӑла-йӗрке ҫирӗпленнӗ: пуянлӑха, укҫа-тенке ҫынлӑхран та ытларах хакласси, ун умӗнче пуҫа таясси. капитализм аталанса, вӑйланса пынӑ май халӑхӑн пӗтӗм пурнӑҫ йӗрки мул вӑйне пӑхӑнасси ҫинче никӗсленсе тӑма пуҫлать. Ҫавӑ ҫынсене тан мар тӑвать те ӗнтӗ: пуяннипе чухӑнни, хисеплипе шутсӑрри ҫине пайлать. Социаллӑ танмарлӑх аталанса пынипе тӑван енчех курса ӳснӗскер, К.В.Иванов ҫавнашкал киревсӗр йӑласене, трагедилле пулӑмсене ҫивӗччӗн питлесе кӑтартса парать те ӗнтӗ «Нарспи» поэмӑра. Чӑннипе илсен, К.Иванов Михетер пек хӑйӗн пӗртен-пӗр хӗрӗн телейне ӑнланман, мӑк пусса илнӗ чӗреллӗ косерваторпуянсене сивлесе те тӑрӑхласа ҫырать. Апла пулсан, поэт кӑмӑлӗ – таса та хӗрӳллӗ юратупа ирӗклӗх енче!

Анчах... тӗрӗс тӑвать-ши Нарспи хӑйӗн усал упӑшкине вӗлерсе? Ӑслӑ та ырӑ чун-чӗреллӗ ҫынсем, пӗтӗм халӑх ырлатьши кунашкал хаяр ӗҫе? Ҫук пулӗ. Нарспи чӗринче те Тӑхтаман вилсе кайнӑ хыҫҫӑн айӑп туйӑмӗ вӑранать: ҫынна, чӗр чуна хӗрхенни те, турӑпа усал-тӗселрен хӑрани те – пурте пур ҫав туйӑмра...

Пӳртри-сӗтел пукансем
Хӑратаҫҫӗ арӑмне,
Пайтах пӑхрӗҫ шеллесе
Хуҫин сивӗ виллине;
Анчах ҫӗрле пулчӗ те
Сӗм хупларӗ пӳрт ӑшне
Хӑйӗн вӑрӑм аллипе
Хӑратать вӑл Нарспие.

Чĕрĕлĕхпе тĕрĕслĕх сăпки – Çĕр чăмăрĕ çинчи пĕтĕм çут çанталăк – хăйĕн тĕп законне – чи хаклă тĕрĕслĕх йĕркисене– пур чĕр чунпа ешĕл ўсен-тăрана хўтĕлесе малалла аталантаракан йĕркесене пăснăшăн тăвăнса асапланать. Ырă пек туйăнать çак ўкерчĕксенче. Чăннипе ку – Нарспи чунĕнче айăп туйăмĕ вăранни, çылăх туйăмĕ кăшлама тытăнни. Ку турра ĕненекен вăл таса чун-чĕреллĕ çын, хăйĕн пурнăçне те, тĕрĕслĕхе те хўтĕлесе питех те усал, киревсĕр ĕç тунипе – Этеме вĕлернипе – хăйне нихçан каçарми куляннипе, чĕрипе çунни.

Кунта Нарспи асап тамăкĕнче çуннăн туйăнать пире. Поэтăн çак тĕлĕнмелле вăйлă сыпăкне вуласан, эпир те чунпа кисренетпĕр, Нарспие хытă хĕрхенетпĕр...

В.И.Сергеев

## К.В.Иванов хайлавĕсенчи ырă тата усал сывлăш сўреткисем тата вĕсемпе витĕнекенсен ячĕсем сăнарланни

Çĕр çинче икĕ хăватлă вăй пур: ырă тата усал. Ырă тата усал терминсем (вырăсла:добро и зло) этика категорийĕсем, вĕсем çынсен кăмăл-сипет пахалăхĕсене палăртмалли социаллă пулăмăн хаклавĕсем шутланаççĕ. Этика вăл – мораль çинчен вĕрентекен наука. Этика шутне виçеллĕ (нормативлă) этика тата мораль теорийĕ кĕреççĕ. Виçеллĕ этика ырăпа усала пĕрпĕринчен уйăрса тата çав хушăрах пĕр тĕвĕре тытса тĕпчесе пĕлет.

Ырăпа усал текен этика категорийĕ малтанах этем ăславĕнче сынпа çын хутшăнăвĕн никĕсĕ çинче амаланать: хутшăнура çын тепĕр çыншăн ырă е усал пулма пултарать. Кайрантарах çак ăнлав турăсем çине куçать. Çынна ырă тăваканнисем – ырă турăсем е ырăсем, усал е сиен кўреккеннисем – усал е хаяр сывлăшсем. Сывлăш (дух, лат. spiritus) – турă, этемрен çўлерех тăракан ăнлаври палăрăм, ăна чылайăшĕ курмаççĕ, анчах вăл пуррине ĕненеççĕ.

К.В.Иванов хайлавĕсенче ырă тата усал сывлăш ячĕсем курăмлă палăрса тăраççĕ. Ыррисем: турă, ырă, пўлĕхçĕ, пирĕшти;

усаллисем: усал (усал-тĕсел), шуйттан (шурă шуйттан), аçтаха, хăямат, йĕрĕх т. ыт. те.

Çавăнпа пĕрлех аслă поэтăмăрăн сăвви-юррисенче тепĕр пĕр-пĕрне хирĕçлесе тăракан `пулăм палăрать: çăтмах тата тамăк. Çăтмах –рай, савăнăçлă (хуйхăсăр) пурнăç (А XIII, 50). Ĕненекенсем каланă тăрăх, çылăхлисем тамăка (е тамăк хуранне) лекеççĕ, ĕмĕр хурлăх кураççĕ. (А XIII, 174), çылăхсăррисем çăтмахра пурăнаççĕ, çăтмах (тутлăх) – савăнăçлă пурнăç (А XIII, 50). Çăтмаха лекес тесен çылăха кĕмелле мар, çылăх тăвас мар тесен е çылăха кĕрсен турра кĕл тумалла. Туррисем вара чăвашăн тĕрлĕреннисем пулаççĕ.

Акă "Нарспи" поэмăран илнĕ сыпăксем:

1. Çăтмах пекех туйăнать
Силпи чăваш ялĕнче,
Вăхăт иртни сисĕнмест
Савăнăçлă кунсенче.
2. Туйне-пуçне пуçличчен
Авал чăваш йăлипе
Ваттисене асăнса
Тăкар çăкăр-тăварне:
"Ват аттесем, аннесем,
Ырă курăр çăтмахра.

ТУРĂ. Турă вăл – çĕре тата çĕр çинче мĕн пуррине пултарнă этем шухăшлавĕнчи тата ĕненĕвĕнчи хăватлă вăй. Çын ăс-тăнĕнче малтанласа турă пĕрре пулнă, анчах каярахпа чăваш ăнлавĕнче çак хăватлă вăй пайăррăн пулма пăрахнă. Кăна К.В.Иванов "Хальхи самана" хайлавĕнче çапла палăртать:

Турăсем те чӳксене
Илми пулчĕç кучуне.

Н.И.Ашмарин словарĕнче "Турă" словарь статйинче кун пирки çапла çырни пур: "Вĕсем тата çапла шухăшланă: кашни япалана пăхса тăран хăйĕн турăсем пур тенĕ: вут-кăвартан пăхса тăраканни, выльăх-чĕрлĕхе пăхса усраканни тата урăххисем те, çак турăсене пăхса тăраканни атте турă тенĕ (А XIY, 156). Çавăнтах, пĕр страница маларах: çорт çоратакан торă, ывăл-хĕр çоратакан торă, тырă-пол çоратакан торă, выльăх-чĕрлĕх çоратакан торă, мол çоратакан торă, хорт çоратакан торă, хорç антаракан торă, çут кӳлте выртакан торă, торта торри, çут çанталăк çоратакан торă, чун çуратакан торă и мн. др. (А XIY, 155-156)

Анчах ытти текстсенче çак ваклану палăрмасть, атте турă

(пĕртен-пĕр турă) сăнарĕ хуçаланать. Ку чĕнӳллĕ предложенисенче те, калуллă пуплевсенче те палăрать:

1. Эй, турăçăм, пиччем те
Ку асапа курминччĕ (Шуйттан чури)
2. Эй, турăçăм, сывлăх пар,
Акнă тыррăма ăнтар (Нарспи)
3. Турă хушсан, çын пулсан,
Курăн Чĕмпĕр хулине (Хальхи самана)
4. Çук, кин, санăн ывăлна
Турă çырни çаплалла (Нарспи)

ЫРĂ, ЫРĂСЕМ.

Хăвăр пĕлетĕр: юсман,
Ырăсене асăнса
Вĕрсе-сурса пĕçерсен
Пит хăватлă япала (Тимĕр тылă)

Ырăсем сăмах, Н.И.Ашмарин словарьне ĕненес пулсан, тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ: пĕрремĕшĕнчен, Ырă тени киремет тениех иккен: Аслă ырă – Аслă Киремет, Кĕçĕн ырă – Кĕçĕн киремет, Вăталăх ырă – Вăталăх киремет (А III, 64); иккĕмĕшĕнчен, ырă сывлăш турă пекех нумай сăн-питлĕ: çутă кӳлте выртакан ырă, çул çӳрен ырă, аслă ырă, Шупашкарти ырă, Хусанти ырă, тĕнче тытакан ырă, турă умĕнче çӳрекен ырă, Чун çуратакан Турă умĕнче çӳрекен ырă; чĕлпĕр тытан ырă амăшĕ (А IY,65).

Унпа пĕрлех ытти турăсем те ырă эпитетпа çӳреме пултараççĕ: ырă пӳлĕхçĕ; Çырлах, ырă хĕвел; çырлах ырă чӳк-кĕлĕ.

ПӲЛĔХ, ПӲЛĔХÇĔ.

К.В.Иванов ку турă ятне икĕ вариантпа панă: пӳлĕх (турă) тата пӳлĕхçĕ.

Пӳлĕх турă пӳрнинчен
Ниммĕнпе те иртеймĕ.
Панă ăна пӳлĕхçĕ
Вĕри юнпа çемçе чун.
Пӳрнĕ ăна пӳлĕхçĕ
Кĕске ĕмĕр, йывăр кун (Нарспи)

Н.И.Ашмарин словарĕнче ку сăмахăн çак вариантсене панă: пӳлĕх, пӳлĕхçĕ, пӳлĕççĕ, пӳлĕхĕç, пӳлĕхçи. Вырăсла ăнлантарăвĕ çапларах: Пӳлĕх – название божества, раздающего по назначению кепе счастливые или несчастливые жеребья.

Турри парать, пӳлĕхçи пӳрет (А X, 80) Пӳлĕхĕн те сăн-

сăпачĕ тĕрлĕрен: пӳлĕхçи амăшĕ – хĕрпан; хĕрпан амăшĕ – хăт, хăт амăшĕ –юсав, юсав амăшĕ – ырă уйăх-хĕвел, çĕр-шыв,... шыв пӳлĕхçи (А Х, 81)

ПИРĔШТИ. Ку сăмахăн варианчĕсем: пирĕште, пирĕшчи; -сăр аффикс хушăннипе пулнă дериват: пирштесĕр, пириштесĕр "сăнсăр", вырăсла: безобразный.

Пирĕшти – çынна сыхлакан ангел. Пирĕште вăл кашни çуртра пулать теççĕ. Вăл пирĕште кăмака çинче пурăнать теççĕ (А IX, 225). Кунта Н.И.Ашмарин пирĕштие хĕртсуртпа пăтраштарни сисĕнет.

К.В.Ивановăн "Шуйттан чури" трагедийĕнче пирĕшти Çӳлти турă сӳреткиллĕ:

Çӳлтен, çӳлтен çавăнтах
Темле сасă илтĕнет:
Пирĕшти
Мĕскĕн этем, мĕн турăн?
Кусна уçса пăх, мĕскĕн,
Ухмах ĕçӳ çинелле.

Пирĕшти Çӳлти турă сăнарĕллĕ пулни малаллахи текстран курăнать:

Анчах çӳлтен, эй турă!
Эсĕ пире сăнанă.
Эй турă! Айăпăмшăн
Чунтан-вартан ӳкĕнсе...
Санран çăлăнăç ыйтатăп.

КИРЕМЕТ. В.А.Ендеров хайĕн кандидат диссертацийĕнче[1] киремете тата арçурие ырă турăсен ретĕнче пăхать. Н.И.Ашмарин словарĕнчи материала пăхсан, кун пек калани тĕрĕс мар пулнине сисетĕн:

"...анчах вăл киремет пит хаярччĕ, пит усалччĕ тет, çав киремет; çавна çитес хаяр киремет çук (А YI, 233). Киремет темле чирпе те чирлеттерет. Киремет тесе çынна тытса хутлатакан турра каланă. Вăл пит усал пулнă. Питĕ усал киремет тесе çаксене шутлаççĕ: Хăмăл ятлă киремете, Çиçтĕпе тата ял вĕçĕнчи пĕр пысăк хыра (236 с.).

К.В.Иванов хайлавĕсенче киремет ырă е усал енчен сăнарланни палăрмасть:

Кереметре кĕлли пур,
Хăяматра хывни пур,
Кĕл туса та килĕшмест,
Киремет те итлемест.

(Хальхи самана)
Тĕрлĕ усал-тĕсел мар,
Киреметри хывни мар,
Чир-чĕр ертен йĕрĕх мар,
Ҫын тухатса хуни мар,
Ҫук, кин, санăн ывăлна
Турă ҫырни ҫаплалла (Нарспи)
АРҪУРИ.

"Нарспи" поэмăра К.В.Иванов пĕр вырăнта кăна арҫурисем пирки ҫырать:

Ват йывăҫсем хушшинче
Арҫурисем выляҫҫĕ.

В.А.Ендеров тĕпчевҫĕ арҫури вăрман хуҫи сăнарĕллĕ пулнине ҫапла ĕнентерет: "Появление полузооморфного и полуантропоморфного образа духа-хозяина леса арҫури – также относится к эпохе анимизма. Лес представляется как некое безлично-аморфное живое существо. При дальнейшем развитии этих представлений одухотворенный лес стал принимать зооморфный, а потом и антропоморфный облик"[2]

Чăнах та, К.В.Иванов поэминче вăрман тата арҫури сăнарĕсем пĕр тĕвве тĕвĕленеҫҫĕ:

Армак-чармак йывăҫсем
Пуҫĕсемпе сулаҫҫĕ,
Нарспи иртсе пынă чух
Ҫулне пӳлсе тăраҫҫĕ.
Ват йывăҫсем хушшинче
Арҫурисем выляҫҫĕ,
Нарспи иртсе пынă чух
Аллисене тăсаҫҫĕ.

"Нарспи" поэмăра арҫури хăратакан усал вăрман турри евĕрлĕ сӳретленнĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче ку сăнар тĕрлĕ енлĕ:

арҫури – вăрман хуҫи (турри);
арҫури – хĕрарăм сăнарĕллĕ усал сывлăш,
арҫури – хаяр, усал сывлăш;
арҫури – упăте, кулăшла сăнар.

ЙĔРĔХ. "Нарспи" поэмăри "Юмăҫ патĕнче" сыпăкра ҫапла ҫырни пур:

Киреметри хывни мар,
Чир-чĕр ертен йĕрĕх мар...

Чăваш халăх ăсĕнче йĕрĕх – усал сывлăш. К.В.Иванов ăна "чир-чĕр ертен йĕрĕх" тесе сăнарлать.

АҪТАХА. варианчӗсем: аҫтак, аҫтакка, аҫтаккӑ. Аҫтакка, Аҫтаккӑ – усал; вӑл ҫынна ерсен, ҫын усала каять: ҫӳреймест, ӗҫсе-ҫисе тӑнӑ чухнех хӑй типсе каять.

Аҫтак – юмахри вӗҫекен ҫӗлен.

Аҫтака – ҫынна, выльӑха ҫӑтакан пысӑк ҫӗлен (А II, 128).

Аштаха, аштаха ҫӗлен "дракон". Аштаха ҫӗлен ӳссе ҫитсессӗн, турӑ ҫӳле илет ҫӗклесе ... Кунта халӑха сиен тӑвать, сывлӑшӗпе туртса илсе ҫӑтать... Аштахаран пурӑнсан-пурӑнсан юхха пулать. Ҫавӑ ҫын сӳретне кӗрет; камӑн лайӑхрах арӑм пур-и, хӗр пур-и, ӑна илет. Илешет те, чирлетет те; типсе хӑрать те, вилет вӑл (А II, 216)

К.В.Иванов "Тимӗр тычӑ" трагедийӗнче тимӗр тылла аҫтахапа танлаштарнӑ:

Таҫта-таҫта аякра
Аҫтаха пек шӑхӑрать,
Ахӑр тылӑ кӑтӑрнӑ:
Темӗскерпе ҫапӑҫать.

ШУЙТТАН. Ку сӑнар – шуйттан сӑнарӗ – ҫынна усал тӑвакан хаяр сывлӑш К.В.Ивановӑн "Шуйттан чури" трагедийӗнче ҫивӗч сӑнарланнӑ, кунта вӑл хӗтӗртнипе пиччӗшӗ шӑллӗне укҫашӑн вӗлерет.

"Тимӗр тылӑ" трагедире ку усал сывлӑш *шурӑ* эпитет туяннӑ: *шурӑ шуйттан*.

Тимӗр тылӑ ӑшӗнче
Шурӑ шуйттан ларать тет.
Тимӗр тылла тытсанах
Шӑлӗсемпе шаккать тет...

Кантӑр шӑмми ҫӳппине
Куҫа кӳртет шур шуйттан.

*Шурӑ* сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ кунта паллӑ мар; ку эпитета туяннӑ сӑнарсем: шурӑ ҫӗлен: Шурта шурӑ ҫӗлен шӑхӑрать, шур кашкӑр: Кӑнтӑрла халап ярсан шур кашкӑр ҫиет тет.

УСАЛ: усал-тӗсел. Усал-тӗсел тени пӗтӗмлетӳ пӗлтерӗшлӗ, кунта усал та хаяр сывлӑшсем пурте кӗме тивӗҫҫӗ. Усал, усал-тӗсел "чорт, нечистый дух, нечистая сила" пӗлтерӗшӗпе К.В.Иванов хайлавӗсенче час-часах тӗл пулать:

1. Тӗрлӗ усал-тӗселрен,
Тӗрлӗ усал чирсенчен
Чӳк кулленех тумалла (Хальхи самана)
2. Инҫе ҫула кайнӑ чух

Усал-тĕсел тивесрен
Юсман чиксе каяççĕ (Тимĕр тылă)
3. Кĕçĕр усал-тĕселсем
Шыв урапи хуппине
Çакланнă та тытăнчĕç...
4. Арманăма усалсем
Лăштăр-лаштăр ишнĕ те
Тара панă таçталла (Тимĕр тылă)

К.Иванов хайлавĕсенче ахаль çынсемпе турăсем е усал (хаяр) сывлăшсем хушшинчи сӳреткесем те пур: асамçăсем, тухатмăшсем, юмăçсем. Вĕсем çĕр çинче кашни кун нушине тӳссе пурăнакан халăх ыйтнине Турă патне çитерме тăрăшаççĕ е ырă-хаярсене чӳк туса ыр пулас йăлана çирĕп тытса пыма хушаççĕ.

К.В.Иванов хайлавĕсенче турăсемпе тата ыр-хаярсемпе халăх хушшинчи элчĕсем ыррипе те, усаллипе те халăх куçĕ умне тухаççĕ. Акă Сетнер амăшĕ ывăлĕн йывăр тăрăмне сиссе юмăç патне каять:

Ун ывăлне Сетнере
Усал-тĕсел ернĕ-мĕн
Çавăнпала амăшĕ
Юмăç патне уттарчĕ.

Юмăçсем суйнине пурте пĕлеççĕ: Вăл суйине ăçтан тупса çитерет-ши? Нумайăшне киреметсенчен ытларах юмăçи улталать курнать (А IY, 326)

"Нарспи" поэмăри юмăç кун пирки тӳрременĕх калать:

Халичченех çынсене
Юмăç пăхса параттăм
Суя сăмах суяйса
Улталаса яраттăм.

Юмăç, пĕр енчен, çĕр çинчи хăватлă вăй, пĕлӳ пуррипе палăрса тăракан çын, тепĕр енчен, "киреметĕн шăлнĕ" те иккен (А IY, 326). Çакă "Хальхи самана" поэмăра та палăрать:

Тухатмăш та тухатать,
Юмăçĕ те хăратать,
Асамçăсем асаççĕ,
Ача-пăчана пăсаççĕ.

Тухатмăш – усал сывлăшпа пĕрлешнĕ çын (А XIY, 200). Тухатмăшсем ырă та, усал та тухатма пултараççĕ.[3]

Асамçă та, тухатмăш пекех, усал сывлăшпа пĕрлешнĕ çын: Асамçă куç пулса (пуса, пăвса. – В.С.) хăйне кирек мĕнле

япаларан та хăтарма пултарать, çынсене те сăмах каласа хăтарса хăварма пултарать (А II, 96).

К.В.Иванов хайлавĕсене тишкерсе пынă май ырăпа усал тăрăмĕсем пирĕн ума çакăн пек ўкерчĕкленсе тĕрленсе тухаççĕ:

I. çут ку тĕнче:

– ыррисем, ырă сунакансем, ырă тăвакансем

а) çынсем

– усаллисем, хаяр сунаканнисем, çынна усал тăваканнисем

ă) асамçăсем – ырă тăваканнисем: чир-чĕртен тухатмăшсем сыватаканнисем, пăстăш тасатакансем юмăççем... – усал сунаканнисем: пăскăнчăк (пăсташ) тăваканнисем

б) ырă сывлăш – ырăсем: пўлĕхçĕ, пирĕшти, Мăн Турă...

усал сывлăш – усал-тĕселсем: шуйттан, аçтаха, киремет...

II Леш тĕнче, – çăтмах: тутлăхри ырă, савăнăçлă юмахсенчи сар пурнăç, çылăхсăррисен тĕнчи

çанталăк, сарă – тамăк: асап тĕнчи, тамăк хуранĕнче кун çĕршывĕ çылăхлисем асапланакан усал тĕнче

[1] Ендеров В.А. Функциональное своеобразие демонологических персонажей в чувашской словесной культуре конца XIX - начала XX веков. Автореферат дисс. на соиск. уч. ст. кандидата филологических наук. Ч., 2000. С. 11.

[2] Ендеров В.А. Образ лешего (арçури) в чувашском фольклоре. // Исследования по чувашскому фольклору. Чебоксары, 1984. С.51

[3] Ашмарин Н.И. Народная проза и мифология: Общие черты чувашских религиозных верований // Исследования по чувашскому фольклору / ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 36-46.

Кĕскетўсем

А XIV, XIII, VI, III, II – Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. XIV, XII, VI, III, II томсем.

# Тупмалли


Л.П.Кураков. "Ырӑ чӑваш тупӑнчӗ..." ........ 3
Г.И.Федоров. "Хӑй тӗнчине пӑхӑнать"
(К.Ивановӑн философилле ӑнӗ) ........ 5
В.Г.Родионов. К.В.Иванов хайлавӗсен
пултарулӑхлӑ историйӗ ........ 25
Ю.М.Артемьев. Аслӑ Силпи ялӗнче ........ 57
Г.Я.Хлебников. Кам-ши вӑл Нарспи: идеал-герой е
трагикӑлла йӑнӑшакан ҫын сӑнарӗ ...... 71
В.И.Сергеев. К.В.Иванов хайлавӗсенчи ырӑ тата
усал сывлӑш сӳреткисем тата вӗсемпе
витӗнекенсен ячӗсем сӑнарланни ........ 75



**ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ**
**обозначенного здесь срока**

10 -

Учебное издание

**КОНСТАНТИН ИВАНОВ: НОВЫЕ ИССЛЕДОВАНИЯ**

Редактор-составитель В.Г.Родионов

Издание подготовлено при участии Чебоксарского учебно-методического центра.

Подписано в печать 11.05.2000. Формат 60x84 1/16.
Бумага писчая. Гарнитура "Times New Roman Chuv".
Печать офсетная. Усл. печ. л. 5. Заказ №.331.
Тираж 500 экз. 2000 г.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15